1865 51-64

Н. А. РЕЗЮКОВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

ПУÇЛАМĂШ ШКУЛĂН
4-мĕш КЛАСĔ ВАЛЛИ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ — 1951

Н. А. РЕЗЮКОВ

# ЧĂВАШ ЧĔЛХИ

## ГРАММАТИКА
тата
## ТĔРĔС ÇЫРАССИ

ПУÇЛАМĂШ ШКУЛĂН
4-мĕш КЛАСĔ ВАЛЛИ

*Чăваш АССР Çутĕç министерстви çирĕплетнĕ*

ЮСАСА ХУШСА ÇЫРНĂ
ТАВАТТĂМĔШ ИЗДАНИ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧĂВАШ АССР
ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1951

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
Чувашской Книжной Палаты
«23» августа 1951 г.
№ 136

## ТУПМАЛЛИ

Сăмах составĕ . . . . . . . . . 3
Пĕр тĕпрен пулнă сăмахсем . . 4
Ударени . . . . . . . . . . . 5
Ă, ĕ уçă сасăсене тĕрĕс çырасси 6
Хутлă сăмахсемпе мăшăр тата ик хут калакан сăмахсене тĕрĕс çырасси . . . . . . . . . . . 7
Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене тĕрĕс çырасси . . . . . 9
Калуллă, ыйтуллă тата кăшкăруллă предложенисем . . . . . 10
Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем . . . 12
Грамматикăлла разбор тăвасси 19
Пĕр йышши членлă предложенисем . . . . . . . . . . 20
Пĕр йышши членсене пĕтĕмлетекен сăмахсем . . . . . . . 24
Обращени . . . . . . . . . 25
Урăх çын сăмахлă предложенисем . . . . . . . 26
Хутлă предложенисем . . . 29
Пуплев пайĕсем . . . . . . . 32
Япала ячĕсем . . . . . . . —
Пайăр тата пайăр мар япала ячĕсем . . . . . . . . . . . . . 33
Япала ячĕсен предложенири вырăнĕ . . . . . . . . . 35
Падежсем . . . . . . . . 37
Япала ячĕсем вĕçленни . . . 39
Япала ячĕсем камăнлăх аффиксĕсене йышăнни . . . . . . . . 45
Сăмах тăвакан аффикссем хушăнса пулнă иккĕмĕшле япала ячĕсем 50
Паллă ячĕсем . . . . . . . 53
Паллă ячĕсем и аффикса йышăнни 56
Паллă ячĕсен предложенири вырăнĕ . . . . . . . 59
Иккĕмĕшле паллă ячĕсене тăвакан аффикссем . . . . . . 60
Паллă ячĕсене тĕрĕс çырасси . . —
Хисеп ячĕсем . . . . . . . . 62
Хисеп ячĕсем вĕçленни . . . 65
Хисеп ячĕсен предложенири вырăнĕ . . . . . . . . . . . . . 66
Хисеп ячĕсене тĕрĕс çырасси . . 67
Местоимени . . . . . . . . 68
Местоименисем вĕçленни . . . . 69
Местоименисен предложенири вырăнĕ . . . . . . . . . . . . 71
Местоименисене тĕрĕс çырасси . 72
Глагол . . . . . . . . . . . 73
Глаголсен предложенири вырăнĕ 74
Глаголсен сăпачĕсем . . . . . . 75
Глаголсен вăхăчĕсем . . . . . . 76
Глаголсем сăпатланни . . . . . 79
Глаголсен иртнĕ вăхăчĕсем . . 82
Глаголсене тĕрĕс çырасси . 88
Наречи . . . . . . . . . . 90
Наречисен предложенири вырăнĕ 92
Хыçсăмахсем . . . . . . . . 93
Союзсем . . . . . . . . . . . 95
Татăксем . . . . . . . . . . 96
Вĕреннине аса илсе çирĕплетни 97

Редактор *Н. Т. Васянка.* Техредактор *Н. С. Степанов.*

НТ 00420. Подписано к печати 17-I-1951 г. Заказ № 3036.
Объем 6,5 п. л. Тираж 10 000 экз. Цена 1 руб. 20 коп.

Типография № 1 Чувашполиграфиздата при Совете Министров
Чувашской АССР. г. Чебоксары, ул. Володарского, 5.

# 1 §. Сӑмах составӗ.

| Сӑмах тӗпӗ | Сӑмах тӑвакан аффикс | Сӑмаха улӑштаракан аффикс |
|---|---|---|
| куҫ | лӑх | ӑн |
| куҫ | — | а |
| куҫ | лӑ | — |
| куҫ | сӑр | — |
| куҫ | — | па |
| куҫ | — | ра |
| куҫ | — | ран |
| куҫ | — | сен |

*1-мӗш хӑнӑхтару.* Таблицӑна пӑхса тухӑр. Ҫак ыйтусем тӑрӑх ответсем парӑр.

1. Сӑмах тӗпӗ тесе мӗне калаҫҫӗ?
2. Сӑмахӑн пӗлтерӗшӗ сӑмахӑн хӑш пайӗнче пулать?

*Ӗҫ, ӗҫле, ӗҫлӗ, ӗҫчен* сӑмахсенче тӗп пӗлтерӗшне тупӑр, сӑмахӑн тӗпне тата аффиксне кӑтартса парӑр.

3. Сӑмах тӗпӗ ҫумне хушӑнакан пайне мӗн тесе калаҫҫӗ?
4. Сӑмах тӑвакан аффикс тесе мӗне калаҫҫӗ?
5. Сӑмаха улӑштаракан аффикс тесе мӗне калаҫҫӗ?

Пур сӑмахӑн та хӑй пӗлтерӗшлӗ тӗпӗ пулать, ун ҫумне хушӑнакан аффикссем е сӑмахӑн пӗлтерӗшне улӑштараҫҫӗ, е унӑн формине урӑхлатаҫҫӗ; ҫапла вара сӑмах тӑвакан тата сӑмаха улӑштаракан аффикссем пулаҫҫӗ.

*2-мӗш хӑнӑхтару.* Тӗрлӗ сӑмах тӑвакан аффикссем хушса, *пуҫ* сӑмахран иккӗмӗшле сӑмахсем тӑвӑр. Ҫав сӑмахсемпе предложенисем ҫырса парӑр.

*3-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑмахсен тӗпне тата аффиксӗсене тупӑр.

Пӗрле, пӗрлеш, пулӑҫӑ, уралла, алӑллӑ, ҫилсӗр, пӗлтерӳ, вӗренӳ, ҫыру, ҫыруҫӑ, тимӗрҫӗре, ӑстаҫӑсен, илемлӗ, ҫӗрӗк.

*4-мӗш хӑнӑхтару.* Аффикссем хушӑннипе ҫак сӑмахсен пӗлтерӗшӗсем улшӑннине кӑтартса парӑр.

Пулӑш, ларт, килӗш, тӗттӗмлен, ҫӑвӑн, кӗтӳ, кӗтӳҫӗ, вӑрманлӑ, куҫлӑх, ҫӗрле, каҫпа, ҫурхи, хӗлле, пахчаҫӑ, вӑйлӑ, хулари, ялти, ачаллӑ, савӑнӑҫ, пуҫла, пуҫар, юманлӑх, хытӑ, пӗлӗш, вӑрӑмӑш, пысӑкӑш.

*5-мӗш хӑнӑхтару.* *Пӗл* тӗплӗ сӑмахсене илсе, вӗсен аффиксӗсене кӑтартса парӑр.

1. Ачасем уроксене лайӑх пӗлеççӗ. 2. Вӗсем шкулта нумай пӗлӳ илеççӗ. 3. Хӑй Мускава каяссине юлташ мана малтанах пӗлтерчӗ. 4. Пирӗн пата пӗлӗш килчӗ. 5. Эпӗ тутар сӑмахӗсене те пӗлкелетӗп.

*6-мӗш хӑнӑхтару.* Çак сӑмахсем çумне тӗрлӗ аффикссем хушса, çӗнӗ сӑмахсем тӑвӑр.

Туп, лав, шӗшкӗ, çил, тӑвар, çӗмӗр, ӑс, çӗн, кала, тырӑ, кӗр, сывӑ, сып, ут, кул, вут.

*7-мӗш хӑнӑхтару.* Çак сӑмахсенче сӑмах тӗпне, сӑмах тӑвакан аффикса тата сӑмах улӑштаракан аффикса кӑтартса парӑр.

Хӗрӳллӗ, тухӑç, лашасем, ачасемпе, çӗртен, урампа, хуранлӑхра, ӗççӗр, кӑмпана, кӑмӑллӑ, вӗренет, ӗнерхи, ӳсӗм, вӗçтер, куçар, тимӗрçӗ, çумӑрлӑ, алӑсӑр, килте, юлташӑн, аттепе анне, ачаллӑ-пӑчаллӑ, шавлӑ.

*8-мӗш хӑнӑхтару.* Çак сӑмахсене çырса илӗр, аффиксӗсене уйӑрӑр.

Вӑрманта, кӗпепе, çӳрет, ачанӑн, пуçласа, ыйхӑллӑ, шкулта, колхозниксем, колхозра, заводсем, чӳречерен, кӳршӗре, кулкала, ирхи, йӗркесӗр, суратсене, алӑран, урана, пӗлӗтлӗ, каçар, йышлӑ.

## 2 §. Пӗр тӗпрен пулнӑ сӑмахсем.




*9-мӗш хӑнӑхтару.* Çак сӑмахсем çумне аффикссем хушса çӗнӗ сӑмахсем туса çырӑр; вӗсен тӗпне аялтан пӗр йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Çӗр, хуç, ту, пӗр, чул, тӗп, вӑй, уç, хуп, сып, пӑр, çур.

*10-мӗш хӑнӑхтару.* Çак сӑмахсене, вӗсен тӗпӗсене пӑхса, ушкӑнӑн-ушкӑнӑн çырса парӑр.

Вут, кӑвар, шыв, ят, вутлӑ, кӑварлӑн, шывсӑр, ятла, вутлан, кӑварлӑ, шывлан, ятлӑ, вутла, шывлӑ, кӑварсӑр, ятсӑр.

*11-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак текста ҫырса илӗр. Тӗп сӑмахсене пӗр йӗрпе, иккӗмӗшле сӑмахсене икӗ йӗрпе аялтан туртӑр.

Ҫумӑр чӗреслетсе нумайчченех ҫуса тӑмарӗ, часах иртсе кайрӗ. Кай енчен пӗлӗт ҫуталса та килчӗ. Кӑшт тӑрсан, хӗвел те курӑнчӗ. Вӑл, хура пӗлӗт айӗнчен тухса, кулса янӑ пек пӑхать. Хулӑн пӗлӗтсем мал еннелле купаланса шурӗҫ. Кӑвак пӗлӗт, ҫумӑр хыҫҫӑн тасалса ҫӑвӑннӑ пек, тата та кӑвакрах, ҫутӑрах. Улӑх урлӑ асамат кӗперӗ ӳкрӗ. Унта-кунта шыв кӳлленчӗкӗсем пур. Ачасем кӳлленчӗксенче ҫара уран чупса ҫӳреҫҫӗ. Хуллен аслати сасси илтӗнет.

*12-мӗш хӑнӑхтару.* 11-мӗш хӑнӑхтарури пекех тӑвӑр.

Сивӗ уяр каҫ. Эпӗ уйӑх тӗттӗмленнине сӑнама урама тухрӑм. Уйӑх пирӗн пахчари йӑмрасенчен ҫӳлерех ҫеҫ хӑпарнӑ, ҫапах ҫутӑ ҫутатса пӑхать, юра симӗссӗн-кӑваккӑн йӑлтӑртаттарать. Таҫта ял варринче, ҫынсем юрлани, ача-пӑча ҫуйӑхни илтӗнет. Акӑ ҫап-ҫутӑ уйӑхӑн пӗр хӗрри тӗттӗмленме тытӑнчӗ. Такам уйӑха хӗрринчен катса илнӗ пек, вӑл катӑк курӑна пуҫларӗ. Ҫутти илемсӗрленсе, хӗрелсе кайрӗ.

*13-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑмахсен пӗлтерӗшӗсен уйрӑмлӑхне кӑтартса парӑр.

Пахча — пахчаҫӑ, ҫыру — ҫыруҫӑ, кӗтӳ — кӗтӳҫӗ, юман — юманлӑх, шӗшкӗ — шӗшкӗлӗх, ҫуна — ҫунашка, пӳрне — пӳрнеске, пӗл — пӗлӳ, ут — утӑм, юр — юрла, каҫ — каҫхи.

*14-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сӑмахсен тӗпӗсене тупӑр. Тӗп сӑмахпа иккӗмӗшле сӑмахсен пӗлтерӗшӗсене кӑтартса парӑр.

Сӳре — сӳреле, ҫыр — ҫыран, тура — турам, ӳс — ӳсӗм, ҫӗмӗр — ҫӗмӗрен, ҫӗр — ҫӗрӗк, кӑвак — кӑвакар, шурӑ — шурал, ҫутӑ — ҫутӑл, сып — сыпӑк, тат — татӑк, пӗлтер — пӗлтерӳ, ҫӗр — ҫӗрле.

## 3 §. Ударени.

Ударени тесе мӗне калаҫҫӗ?
Ударениллӗ сыпӑк тесе мӗнле сыпӑка калаҫҫӗ?
Мӗнле сыпӑк ҫине ударени ӳкет?

Чӑваш чӗлхинче ударени тӗрлӗ сыпӑкра пулать.

Сӑмахӑн юлашки сыпӑкӗнче ***а, е, у, ӳ, и*** уҫӑ сасӑсем пулсан, ударени ҫав уҫӑ сасӑллӑ сыпӑк ҫине ӳкет.

Сӑмахӑн юлашки сыпӑкӗнче ***ӑ, ӗ*** сасӑсем пулсан, ударени ун умӗнчи уҫӑ сасӑллӑ сыпӑк ҫине ӳкет.

Сӑмахра ***ӑ, ӗ*** уҫӑ сасӑллӑ сыпӑксем анчах пулсан, ударени сӑмах пуҫламӑшӗнчи сыпӑк ҫине ӳкет.

*15-мĕш хăнăхтару.* Çак текста вулăр. Мĕнле сыпăк çине ударени ӳкнине кăтартăр.

Пахчара çырласем пиçсе çитрĕç. Чие, хурлăхан, слива тĕмĕсем нумай çырлалла турачĕсене çĕрелле усса лараççĕ. Хăмла çырли аякранах хĕрлĕн, саррăн курăнать. Колхозниксем пиçсе çитнĕ çырласене пухма килчĕç. Хăш-пĕр çырласене, ăшне хут сарнă ещĕксем çине тултарса, лавсем çине тиесе, станцие турттараççĕ; хăш-пĕр йышшисенчен пахчарах шурă саппунлă хĕрарăмсем варени пĕçереççĕ.

*16-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа парăр. Ударенисене тĕрĕс тăвăр.

## ШУПАШКАР.

Шупашкар!
Ирĕк халăхăн ирĕк хули!
Çурчĕсем епле çӳлĕ,
Патмаррăн çĕкленчĕç.

Хĕвĕшет халăх
аслă урамсем тулли.
Сачĕсем — пирĕн пурнăç пек
чечекленчĕç!

Чечекленчĕ çĕршыв,
чечекленчĕ хула.
Савăтсен трубисем
тĕтĕреççĕ мăнаçлăн.

Саламлать Шупашкар паян
тимĕр çула,
таврана сас парать
хурçă учĕ хаваслăн.

Атăлтан саламлать ăна
шур пăрахут.
Ăçталла каяс тен —
пур çĕре те çул уçă.

(*Уйăп М.*)

## 4 §. *Ă, ĕ* уçă сасăсене тĕрĕс çырасси.

***Ă, ĕ*** уçă сасăсемпе ***а, е, у, ӳ, ы, и*** уçă сасăсем хушшинче мĕнле уйрăмлăхсем пур? Çак сăмахсене танлаштарса пăхăр: *курак — курăк, пĕлет — пĕлĕт, кӳр — кĕр, сăвă — савăн, пура — пăра, тулă — тăлă, сывă — сăвă, пир — пĕр.*

Çак сăмахсен мĕнле уйрăмлăхсем пур?

*17-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. ***Ă, ĕ*** уçă сасăсене кăтартса парăр.

## ТЕЛЕЙЛĔ АЧАСЕМ.

Чухăн та тăлăх
ача-пăчасем
ĕмĕр çын хурри
пулса ӳсетчĕç.
Мĕнпур хĕн-хура,
асапа, хуйха
йĕрсе-макăрса
вĕсем тӳсетчĕç.
Выртса çӳрекен
татăк-кĕсĕкшĕн
килĕрен-киле
çӳретчĕç вĕсем.
Халĕ ĕнтĕ эпир
ирĕк çĕршывра
ирĕк ӳсетпĕр
вăйă-кулăра.
Утать пионер
Ленин çулĕпе;
вут çулăмĕ пек
вĕри чĕрелле.

(*Н. Шелепи*)

Хăш-пĕр чухне сăмах варринчи тата сăмах вĕçĕнчи *ă, ĕ* уçă сасăсем илтĕнмеççĕ, çавăнпа вĕсене çырмаççĕ: *пурăн — пурнăç, вырăн — вырнаç, сывăх — çывхар, шурă — шур, вата — ват, хăçан — нихçан, тахçан; çавăр — çаврăн; сулăн — сулнăк, сулнăклан.*

*18-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. *Ă, ĕ* уçă сасăсем тухса ӳкнине асăрхăр.

1. Хамăрăн пурнăçа пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтартăмăр, йăва çавăртăмăр. 2. Ленин утса çӳренĕ çулсем çине юнлă фашист нихçан та хăйĕн юнлă аттипе пусас çук .3. Хăйсен колхозĕнчен килнĕ вунтăвата çынна вăл пурне те пĕр çĕре вырнаçтарма шутларĕ. 4. Лариван мучи вата юман тавра тата тепĕр хут утса çаврăнчĕ. 5. Вĕсем ку вăрмана тахçанах килсе курнă. 6. Юр тарăн мар пулин те, вутă лавĕсем нумай çӳренĕ пирки кунти çул халех сулнăкланса пĕтнĕ. 7. Унăн малта пыракан лаши сулнăкран чиперех иртсе кайнă. 8. Хрисан мучи, кĕлтесене вырнаçтарса хума чарăнсах, Анюш еннелле çаврăнса пăхать. 9. Çурхи кунсем — ăшă та çутă кунсем майĕпен çывхарчĕç.

## 5 §. Хутлă сăмахсемпе мăшăр тата ик хут калакан сăмахсене тĕрĕс çырасси.

Чĕлхере пĕр тĕплĕ сăмахсемсĕр пуçне икĕ тĕпрен е виçĕ тĕпрен пулнă сăмахсем те пур.

*19-мĕш хăнăхтару.* Çак сăмахсен тĕпĕсене тупăр. Малтан пĕр тĕплĕ сăмахсене, унтан икĕ тĕпрен пулнă сăмахсене çырса илĕр.

а) Хула ячĕсем: Мускав, Хусан, Канаш, Сталинград, Улатăр, Çĕрпӳ, Васильсурск, Шупашкар.

ă) Ял ячĕсем: Елчĕк, Çĕньял, Хыркасси, Вăрăмшур, Вăрманкас, Сăръел, Патăръел.

б) Чĕрчун ячĕсем: Хураçка, Улайкка, Кампур, Эскам, Çилçунат.

в) Апат-çимĕç ячĕсем: кишĕр, сухан, çĕрулми, хĕвелçаврăнăш.

Икĕ е виçĕ тĕпрен пулнă хутлă сăмахсене, вĕсем пĕрлешнипе çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ пĕр сăмах пулнă пулсан, пĕрле çыраççĕ: *çĕрулми* (çĕр + улми), *анкарти* (авăн + карти), *çăлкуçĕ* (çăл + куçĕ), *урай* (ура + айĕ), *алшăлли* (алă + шăлли).

Сăмахсен тĕпĕсен пĕлтерĕшĕсем çаплипех юлнă пулсан, вĕсене уйрăм çыраççĕ: *шыв арманĕ, çил арманĕ, ĕç кунĕ, ĕç укçи, çĕнĕ çул, урам урлă.*

*20-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Хутлӑ сӑмахсене тупӑр, вӗсене мӗнле ҫырнине асӑрхӑр.

1. Ачасем хӗрсе ярӑннӑ вӑхӑтра тӑвайккине Кӗркуҫ, Мишша, Хӗветле, Таруҫ ҫитрӗҫ. 2. Вӗсем хӑйсен ҫунашкисемпе аялах анса ҫитрӗҫ, унтан Ларик анкарти хапхине уҫрӗҫ те ещӗкӗсене кӗлете сӗтӗркелесе, тӗрткелесе илсе кӗртрӗҫ. 3. Пуринчен ытла кӗл ҫӗрулми пуссине нумайтарах лекрӗ. 4. Ҫанталӑк кӑҫал тӗлӗнмелле ырӑ тӑрать. 5. Пӑрлӑ океанри шур упасем пек тачка пӗлӗтсем ун хулпуҫҫийӗсене перӗнкелесе иртсе каяҫҫӗ. 6. Кӗрхи йӑмӑх хӗвел ҫуттинче унӑн шап-шурӑ куҫхаршийӗсем айӗнчен пӑхакан куҫӗсем темӗнле хаяр вутпа ҫунма тытӑнчӗҫ.

*21-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак текста ҫырса илӗр. Скобкӑри сӑмахсенчен хутлӑ сӑмахсем тӑвӑр та вӗсене тӗрӗс ҫырӑр.

Кӗркури аллине ҫурӗ те сӗтел хушшине кӗрсе ларчӗ. (Алӑ, шӑллипе) витсе хунӑ ҫӑкӑра касса илчӗ те сивӗ (ҫӗр, улмине) тӑварпа пуҫса ҫиме тытӑнчӗ. (Уй, улми) пек вӗтӗ (ҫӗр, улми), кӑмакана пӑрахса пӗҫернӗскер, пӗрӗнсе татах вӗтелнӗ. Кӗркури (ял, хуҫалӑх) выставкинче курнӑ (ҫӗр, улмине) аса илчӗ. „Эпир те колхозра (килес, ҫул) (ҫӗр, улмине) те, тырра та кӗл сапса туса пӑхар-ха",—терӗ Кӗркури хӑй ӑшӗнче.

*(М. Труб.)*

*22-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене ҫырса илӗр. Скобкӑри сӑмахсене тӗрӗс ҫырӑр.

1. Вӑрман ӗҫлекенсем кунти (ҫӗр, пӳртсенче) ҫеҫ мар, ҫывӑхри ялсенче те хваттерте тӑраҫҫӗ иккен. 2. Кунти ҫынсем, акӑ, (кӑвак, ҫутӑллах) тухаҫҫӗ те тӳрех пӑчкӑпа пуртӑ тытаҫҫӗ, лашасем кӳлеҫҫӗ. 3. Хӗветӗр аллинчи пӑчкӑ (сӗрме, купӑсӑн) сӗркӗчи пек юрласа тӑрать. 4. (Куҫ, харши) те унӑн пӑрланса ларнӑ.

> Мӑшӑр сӑмахсене тата икӗ хут калакан сӑмахсене кӗске йӗрпе (дефиспа) ҫыхӑнтарса ҫыраҫҫӗ: *ҫӑкӑр-тӑвар, уй-хир, сӗт-ҫу, йӗтӗн-кантӑр, алӑ-ура, пыра-пыра, шӑтӑр-шатӑр, шӑнкӑр-шанкӑр, аран-аран.*

*23-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Мӑшӑр тата икӗ хут каланӑ сӑмахсене тупса, вӗсене мӗнле ҫырнине асӑрхӑр.

1. Ачасем! Пире шкулта тырӑ-пулӑшӑн, ытти ҫимӗҫшӗн кӗл усӑлли ҫинчен сахал каламан. Кӗл усӑлли ҫинчен атте-аннесене калӑр, тенӗччӗ; кӗле пухма тӑрӑшӑр, тенӗччӗ. 2. Кашни колхоз пур майсемпе те наука хушнӑ тӑрӑх тырӑ-пулӑ тухӑҫӗшӗн тӑрӑшни вӑл — социализм ҫулӗпе тунӑ утӑм. 3. Ҫӑра хура-симӗс сӑнлӑ калча пӗр пек тикӗс хӑпарать.

*24-мĕш хăнăхтару.* Çак текста çырса илĕр. Хутлă сăмахсене, мăшăр сăмахсене тата икĕ хут каланă сăмахсене тупса, вĕсене мĕнле çырнине каласа парăр.

I. Ачасем лавсем пек вĕçе-вĕçĕн анса кайрĕç. Ещĕклĕ çунашкасем тăвата çунашка умлăн-хыçлăн анса кайни нумайăшĕн кăмăлне килчĕ. Чăн-чăн лавсем пек пыраççĕ. Çав хушăрах пĕри хыттăн юрласа яни илтĕнчĕ. Иккĕн-виççĕн юрра малалла тăсрĕç. Ик-виçĕ çавра юрланă хыççăн вĕсем кĕл çĕклесе пыракан Хĕветлепе Таруç çине çаврăнса пăхрĕç. Вунă-вуникĕ ача хĕрӳллĕн ĕçе тытăнчĕç. Хăшĕ-пĕри икшер-виçшер хут кĕл турттарма кая-кая килчĕç. Каçхине ача-пăча ту хĕрринче йăсласа ярăнма тытăнчĕ. (*М. Труб.*)

II. Ирхине тĕксĕм сăн-сăпатлă десятник тин çеç килнĕ çынсен мĕн тумаллине кăтартса пачĕ. Вăрманта, çынсемсĕр пуçне, пĕр кайăк-кĕшĕк те, пĕр чĕрĕ чун пурри те туйăнмасть.

## 6 §. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене тĕрĕс çырасси.

Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене çырнă чух вĕсен тĕпĕсене çаплипех хăвараççĕ; анчах сăмах вĕçĕнчи ***а, е*** сасăсем çине ударени ӳкмест пулсан, тĕрлĕ аффикссем хушăннă чухне, ***а-е*** вырăнне ***ă-ĕ*** çыраççĕ: парта — парт***ăн***, парт***ă-на***, парт***ă-ра***, парт***ă-сем***.

*25-мĕш хăнăхтару.* Текста вуласа тухăр. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене мĕнле çырнине асăрхăр.

I. Заводра паянхи ĕç кунĕ пĕтсе пырать. Гудок сасси цехсем тăрăх хумхантаракан, савăнтаракан янăравĕпе сарăлса кайрĕ. Рабочисем, хăйсен ĕç вырăнĕсенчен тухса, паян та яланхи пекех, чаплă ĕçленипе хавхаланса калаçаççĕ, хăйсен тумтир шкапĕсем патнелле утаççĕ. Васкаканнисем те пур. Ара, паян кунĕ аван-çке: ăшă, хĕвеллĕ, киленичченех ращара уçăлса çӳреме пулать, шыва кĕрсе чӳхенме те юрать.

(*И. Мучи*)

II. Культурлăха ӳстерес, тасамарлăхпа йĕркесĕрлĕхе пĕтерес тĕлĕшпе колхоз кăçал паха ĕçсем туса ирттернĕ. Фермăсен стенисене сĕрсе шуратнă, выльăхсене апат хурса памалли валашкасене çуса тасатса юсанă, витесем умĕнчи тислĕкпе çӳп-çапсене, кулленех шăлса пуçтарса, уя кăларса тăкаççĕ. Тасалăха больницăри врачсемпе фельдшерсем тĕрĕслесех тăраççĕ. Ĕне ферминче ĕçлекенсене уйрăм халат çĕлесе панă. Фермăсенчи пӳртсене кашни эрнерех çуса тасатаççĕ, вĕсенче пуринче те хаçат-журналсемпе кĕнекесем тата сехет пур. Пĕр фермине радио кĕртнĕ.

*26-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Скобкăри сăмахсене кирлĕ формăра лартăр.

1. (Митинг) халăх праçникрен саланнă пек саланчĕ, колхозниксем ĕçе тытăнчĕç. 2. (Кĕл), (фосфорит), (тислĕк) ăçта мĕн чухлĕ тăкмаллине (агроном) каласа кăтартрĕ. 3. (Электричество лампи) паçăрах çутăлнă, анчах пӳртре никам та курăнмасть. 4. Сĕтел тĕлĕнчи стена çумĕнче (Ленин, Сталин, Мичурин, Тимирязев) сăнĕсем. 5. (Арифметика) икĕ (задача) панăччĕ, икĕ (задача) пит те аван шутланчĕç. 6. Тухман (задача) шутласа кăларсан, ыррăнах туйăнать. 7. (Географи) панă (задани) эпĕ каçхинех хатĕрленĕччĕ. 8. Вăл каçхине Шупашкара (медсестрасем) курсне кайрĕ.

## 7 §. Калуллă, ыйтуллă тата кăшкăруллă предложенисем.

Вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ.
Эсир миçемĕш класра вĕренетĕр?
Вĕренĕр, ачасем! Тăрăшса вĕренĕр!

Çак предложенисен уйрăмлăхĕсене асăрхăр. Пĕрремĕш предложени мĕнле предложени? Иккĕмĕшĕ? Виççĕмĕшпе тăваттăмĕшĕ?

Мĕнле предложение калуллă предложени теççĕ? Ун хыççăн мĕнле чарăну палли лартаççĕ? 3—4 калуллă предложени тупса парăр.

Мĕнле предложение ыйтуллă предложени теççĕ? Ун хыççăн мĕнле чарăну палли лартаççĕ? Ыйтуллă предложенисем 3—4 предложени тупса парăр.

Мĕнле предложенисене кăшкăруллă предложени теççĕ? Ун хыççăн мĕнле чарăну палли лартаççĕ? Кăшкăруллă предложенисем 3—4 предложени тупăр, вĕсем мĕне пĕлтернине кăтартса парăр.

*27-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Сăвăри калуллă, ыйтуллă тата кăшкăруллă предложенисене тупăр.

### ЛЕНИН.

Вут çулăмĕ пек
чĕлхӳ-сăвару
епле сивĕнсе
чĕнми пулчĕ-ши?

Пурне те курса
тăракан куçу
епле хупăнса
тĕттĕмленчĕ-ши?

Тĕттĕм пуçлăхĕ —
хăрушă вилĕм
епле сан пата
хăйса пычĕ-ши?

Пĕтĕм çĕр çинчи
ĕç халăхĕшĕн
яту чăн-чăнах
чăн та çут çăлтăр!

Тулли уйăх пек
çут сăн-сăпату
мĕншĕн хăвăртах
тĕксĕмленчĕ-ши?

Хĕвел çути пек
çутă ят пултăр,
яланах манми
çутăлса тăтăр.

(*Н. Шелепи*)

*28-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак текстри ыйтуллӑ предложенисене тупса ҫырса илӗр.

Сенька тупӑ сассине илтрӗ те часрах килнелле чупрӗ.

— Илтетӗн-и? Пирӗннисем килеҫҫӗ! — хавасланса пӗлтерчӗ вӑл амӑшне, аллипе хӗвелтухӑҫнелле кӑтартса. — Ав епле кӗмсӗртеттере пуҫларӗҫ! Тен пирӗн пичче те ҫитсе тухӗ? Пулма пултарать-и ҫавӑн пек телей?

Инҫетре снарядсем ӳке-ӳке ҫурӑлаҫҫӗ. Сенькӑпа амӑшӗн чӗрисем савӑнӑҫлӑн тапаҫҫӗ.

— Мӗншӗн ҫывӑрмастӑр? Мӗн тума тухса тӑтӑр? — кӗтмен ҫӗртен кӑшкӑрчӗ такам ҫав вӑхӑтра.

(*Л. Агаков*)

*29-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак калаҫӑва ҫырса илӗр, кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартӑр.

— Эсӗ шофер-и
— Ҫук лӗтчик
— Ӑҫта ӗҫлетӗн
— Мускавра
— Яла мӗнле майпа килтӗн
— Отпуска, канма килтӗм
— Ялта нумай пурӑнтӑн-и
— Пӗр уйӑх

*30-мӗш хӑнӑхтару.* Сӑвва вуласа тухӑр. Предложенисем хыҫҫӑн кӑшкӑру паллисене мӗншӗн лартнине каласа парӑр.

## ВӐЙӐ.

Сарӑлса выртать ҫырма,
ик енче те хурама.
Шыв ҫинче пур пӑр кӗпер.
Хӗвеллӗ кун пит чипер.

Ачасене выляма,
вырӑн ирӗк ярӑнма.
Анчӗҫ, анчӗҫ ачасем...
Эх, вӗсенӗн сассисем!

Пит те уҫӑ, пит хавас
янӑрать ушкӑнлӑ сас.
— Эй, колхозӑн ачисем!
Пурте килӗр, ҫамрӑксем!
Килӗр, килӗр, ярӑнар,
йышлӑн пӗрле савӑнар!

Алла-аллӑн тытӑнса,
малалла утса, чупса,
ушкӑнпа пӗрле выляр!
Ҫирӗп сывлӑхлӑ пулар!

*31-мӗш хӑнӑхтару.* Калава вуласа тухӑр. Ыйтуллӑ предложенисене ҫырса илӗр. Вӗсене вуланӑ чух сасӑ мӗнле улшӑннине асӑрхӑр.

## ХУРӐНПА ҪИЛ.

Хӗвел тусем хыҫне анса пытанчӗ. Пӗлӗт тӗксӗмленчӗ. Пӗрин хыҫҫӑн тепри ҫӑлтӑрсем ҫуталчӗҫ.

Ҫил вӗҫсе килнӗ те тӳрех хурӑн патне пынӑ.

— Эсĕ, ватти, мĕн халиччен çывăрмастăн? — тет çил хурăна.
— Темскер ыйăх килмест-ха! Эсĕ ăçтан килсе тухрăн вара?
— Эпĕ-и?.. Шыв çинчен. Пулăçă килне васкатчĕ; эпĕ ун киммине хăваласа пытăм.
— Тата мĕн ĕçлерĕн?
— Çула майăн çунă кĕпесене типĕтрĕм, унтан çула шăлса тасатрăм.
— Вара кунта вĕçсе килтĕн-и?
— Çук. Паллакан мельнике арман авăртса патăм.
— Юрĕ. Каласа пар-ха, ĕнер мĕн ĕçлерĕн эсĕ?
— Ĕнер? Темĕн аса илейместĕп, ĕнертен вара нумай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ.
— Апла пулсан, эпĕ сана аса илтерĕп. Ĕнер эсĕ, çулçăмсене татса илсе, çĕрелле ывăтрăн, туратăмсене хуçкаласа тăкрăн, çамрăк хурăнсене аптăратса пĕтертĕн. Сан пирки пĕтĕм вăрман, ыйхăран вăранса, чĕтресе, йынăшса тăчĕ, — терĕ юлашкинчен хурăн.

*32-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Кирлĕ çĕре чарăну паллисем (ыйту палли е точка) лартăр.

ИКĔ ПИОНЕР.

Кĕнеке магазинĕ умне икĕ ача пынă. Вĕсем иккĕшĕ те шкул ачисем. Иккĕшĕ те мăйĕсене хĕрлĕ галстук çыхнă.

Тăрсан-тăрсан, пĕри тепринчен ыйтать:
— Эсĕ хăш шкултан
— Упи шкулĕнчен
— Хăш класра вĕренетĕн
— Тăваттăмĕшĕнче
— Хăш отрядра тăратăн
— Иккĕмĕшĕнче
— Сирĕн отрядра миçе пионер
— Вăтăр

## 8 §. Предложенин тĕп членĕсемпе кĕçĕн членĕсем.

Шурăмпуç килчĕ. Пĕлĕт ярăмлана-ярăмлана шăва пуçларĕ. Хаваслă ир çитрĕ. Кайăк-кĕшĕксем вăранчĕç. Вĕсем савăнăçлăн юрлама пуçларĕç. Вĕсем хĕвел çуттипе савăнаççĕ. Ирхи çил йăвашшăн вĕрет.

Кунта миçе предложени?
Ку предложенисенчен хăшĕ анлă, хăшĕ ансăр?
Малтан кашни предложенин тĕп членĕсене кăтартса парăр, унтан кĕçĕн членĕсене кăтартăр.

***33-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр, унтан çырса илĕр. Кирлĕ çĕре точка лартăр. Кашни предложенире кам е мĕн çинчен каланă?

## ИРХИНЕ.

Эпĕ ирех вăрантăм хĕвел халĕ çеç тухнă çанталăк уяр пĕр пĕлĕт татăкĕ те курăнмасть пĕтĕм тавралăх ялтăртатса тăрать эпĕ уя тухрăм унта тăрисем хăйсен юррине шăрантараççĕ савăннипе пĕтĕм кăмăлăм тулса кайрĕ эпĕ те хавассăн юрласа ятăм.

*34-мĕш хăнăхтару.* Çак калавра предложенисен членĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăнине кăтартса парăр.

## ПИРĔН ПУЛĂШУ.

Петĕрĕн ашшĕ Аслă Отечественнăй вăрçăра вилнĕ. Амăшĕ сасартăк чирлесе ӳкнĕ. Петĕр шкула çӳреме пултарайман. Эпир пухура Петĕре пулăшасси çинчен калаçрăмăр. Кам Петĕре вĕренӳре, кам килти ĕçсенче пулăшассине палăртса хутăмăр.

Пионерсем Петĕре кашни кунах пулăшса пычĕç. Ик-виç эрнерен Петĕрĕн амăшĕ сывалчĕ. Петĕр ытти ачасем пекех вĕренме пуçларĕ.

*35-мĕш хăнăхтару.* Çак текстри предложенисене çырса илĕр. Подлежащисене аялтан туртăр, вĕсем мĕнле сăмахпа çыхăнса тăнине кăтартса парăр.

I. Çуллахи каникул пуçланчĕ. Пионерсем лагерьсене каççĕ.

Вĕсем хĕрӳллĕн калаçаççĕ. Юрăсем уççăн шăранаççĕ.

II. Хĕвел анса ларчĕ. Каç пулчĕ. Шăпчăк хăйĕн юррине шăрантарать. Кăнтăр енчен ăшă çил вĕрет. Сад пахчисем ырă шăршă сараççĕ.

*36-мĕш хăнăхтару.* Çак текстри предложенисене çырса илĕр; сказуемăйсене аялтан туртăр.

Каçхине колхоз правленине халăх пуçтарăнчĕ. Унта хĕрлĕ пуставпа витнĕ сĕтел çине репродуктор лартнă. Репродуктор савăнăçлăн юрра янăратать.

Ака радио калама чарăнчĕ. Халăх шăпланчĕ. Пысăк пӳлĕм шăпах пулчĕ. Ватă стариксем хывнă çĕлĕкĕсене хул хушшине хытăрах хĕстерчĕç. Пурте Сталин докладне итлеççĕ.

*37-мĕш хăнăхтару.* Çак ансăр предложенисенчен анлă предложенисем тăвăр.

Кĕр çитет. Чечексем типеççĕ. Курăк сарăхать. Çулçăсем саралаççĕ. Кăмпасем шăтса тухаççĕ. Йывăççем саралаççĕ. Кун кĕскелет. Çумăр çăвать. Çил вĕрет.

*38-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Кӗҫӗн членсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## ҪУРКУННЕ ҪИТРӖ.

Сивӗ те уяр ҫанталӑк тӑратчӗ. Часах ӑшӑ ҫил вӗрме тытӑнчӗ. Пӗтӗм тавралӑх улшӑнчӗ. Ҫырмасем, варсем тӑрӑх шыв юхать. Ҫутӑ хӗвел йӑлтӑртатать. Сӑртсем ҫинче симӗс курӑксем ешерме пуҫларӗҫ. Хаваслӑ ҫуркунне ҫитрӗ.

*39-мӗш хӑнӑхтару.* Калава ҫырса илӗр. Сказуемӑя ӑнлантаракан сӑмахсене аялтан туртӑр.

## ВӐРМАНТА.

Вӑрманта шӑп. Кӗркурипе Павӑл кӑмпа пуҫтараҫҫӗ. Вӗсем пӗр уҫланка тухрӗҫ. Ҫав вӑхӑтра пӗр тӗм хыҫӗнче темӗскер шӑтӑрт! турӗ.

— Ай! — тесе кӑшкӑрса ярать Кӗркури.

Унччен те пулмарӗ, пӗр мулкач сикет тухать. Вӑл, ачасене курсанах, вӑрманалла вӗҫтерет.

— Эй, шеремет мулкачӗ, пит хӑвӑрт тарчӗ. Лайӑххӑн курса та юлаймарӑмӑр! — терӗҫ ачасем.

*40-мӗш хӑнӑхтару.* Текста ҫырса илӗр. Подлежащие ӑнлантаракан сӑмахсене аялтан туртса паллӑ тӑвӑр.

Ҫумӑрлӑ та сивӗ ҫанталӑк вӑраха тӑсӑлнӑ. Вӑрман касакансемшӗн вӑл кӑмӑллах пулман. Анчах пирӗн ҫынсем кирек мӗнле ҫанталӑкра та тӳсме вӗреннӗ. Вӗсем йышӑннӑ срокра пысӑк сулӑсем ҫыхса хатӗрлерӗҫ. Ҫурхи ҫанталӑк хӑйӗн ырлӑхӗсене ерипен уҫса панӑ. Хура вӑрманти йывӑҫсем ешӗл ҫулҫа сарнӑ. Вӑрманта кайӑксем чӗвӗлтетнӗ. Сасартӑк шултӑра ҫумӑр ҫӑва пуҫланӑ.

*41-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак текста вуласа тухӑр. Предложенисенчи кӗҫӗн членсене тупӑр, вӗсенчен хӑшӗ подлежащие, хӑшӗ сказуемӑя ӑнлантарнине каласа парӑр.

Старик ҫӳлелле пӑхать. Самолёт вӗсен ялӗ ҫинеллех кӗрлеттерсе килет. Самолёт вӗсен ялӗ тӗлне ҫитет. Унтан самолёт тӳпере ик-виҫ хутчен чӗкеҫ пек вӗҫсе ҫаврӑнчӗ.

Самолёт ял вӗҫӗнчи ешӗл ҫерем ҫине вӗҫсе анчӗ.

Ҫынсем самолёт курма тухрӗҫ. Самолёт ҫинчен Иван мучин ывӑлӗсем анчӗҫ. Курма пынӑ колхозниксем пурте тӗлӗнчӗҫ.

Иван мучипе карчӑкӗ те самолёт патне ҫитрӗҫ. Виҫӗ паттӑр, виҫӗ тӑван ашшӗпе амӑшне ыталаса чуп тӑваҫҫӗ.

> Кӗҫӗн членсем предложенире тӗп членсем е ытти кӗҫӗн членсене ӑнлантарса параҫҫӗ; вӗсем е подлежащипе, е сказуемӑйпа, е тепӗр кӗҫӗн членпа ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ.

**42-мӗш *хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисенчи кӗҫӗн членсем мӗнле членсене (подлежащие, сказуемӑя е кӗҫӗн членсене) ӑнлантарса панине каласа парӑр.

1. Сӗм вӑрманта тискер кайӑксем пурӑнаҫҫӗ. 2. Ешӗл улӑхра кӗтӳ ҫӳрет. 3. Тарӑн кӳлӗре пулӑсем ишеҫҫӗ. 4. Сарӑ хӗвел вӑрман хыҫне анса ларчӗ. Тӗттӗм ҫӗр тӗнчене хупларӗ. 6. Ӑшӑ ҫӗршывсенче ӳсентӑрансем питӗ йышлӑ ӳсеҫҫӗ.

Япала паллине кӑтартакан кӗҫӗн члена определени теҫҫӗ. Определени ыйтӑвӗсем: *мӗнле? ӑҫти? хӑҫанхи? камӑн? мӗнӗн?*

*Хитре* чечексем пире илӗртеҫҫӗ.

*Библиотекӑри* кӗнекесене пӑхса тухрӑмӑр.

*Кӑҫалхи* тырӑ-пулӑ пурне те савӑнтарать.

*Сӗтелӗн* ури тӗреклӗ.

*Петӗрӗн* ашшӗ хулана кайнӑ.

Определени кирек хӑҫан та япала ячӗпе ҫыхӑнса тӑрать. Мӗнле чечексем? — *Хитре.* Ӑҫти кӗнекесене? — *Библиотекӑри.* Хӑҫанхи тырӑ-пулӑ? — *Кӑҫалхи.* Мӗнӗн? *Сӗтелӗн.* Камӑн ашшӗ? — *Петӗрӗн.*

**43-мӗш *хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене тата текста вуласа тухӑр. Определенисене кӑтартса парӑр.

I. 1. Вӑйлӑ ҫил вӗрет. 2. Хура вӑрман кашлать. 3. Ҫӑра калча ешерет. 4. Таса шыв юхать. 5. Улмуҫҫи ҫинче хӗрлӗ улмасем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. 6. Шурӑ кӑрӑҫсем йӗрки-йӗркипе ларaҫҫӗ. 7. Ҫул урлӑ хӑравҫӑ мулкач чупса каҫрӗ. 8. Эпир каҫхи апата ӗлкӗртӗмӗр. 9. Пӳртри шыв ӑшӑннӑ. 10. Кӗҫӗрхи каҫ савӑнӑҫлӑ иртрӗ.

II. Август уйӑхӗ вӗҫӗнче ҫанталӑк сивӗтме пуҫлать. Ирхине сывлӑш уйрӑмах уҫӑ. Сентябрь уйӑхӗнче татах та сулхӑнланать. Ир ҫинче курӑксем, ҫурт тӑррисем шуралнине те куратӑр эсир. Кӗрхи пылчӑксемпе пӗчӗк лакӑмсенчи шывсем те ирлӗ-каҫлӑ шӑнма пуҫлаҫҫӗ. Кӑнтӑрла татах ирӗлсе каяҫҫӗ. Кӗрхи вӗтӗ ҫумӑр ҫуллахи ӑшӑ ҫумӑр пек мар: вӑл чарӑнмасӑрах ҫӑвать. Ҫӗр ҫуллахи пек час типмест. Ҫулла савӑнса ларакан вӑрман та халӗ салхуллӑн шавлать. Унӑн ҫуллахи хӑнисем, кайӑк-кӗшӗксем, кӑнтӑр еннелле вӗҫсе кайса пӗтнӗ.

**44-мӗш *хӑнӑхтару.*** Ҫак текста ҫырса илӗр. Определенисене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

Эпир таса пӳлӗме пырса кӗтӗмӗр. Унта илемлӗ чечексем ларaҫҫӗ, стена ҫинче пысӑк портретсем ҫакӑнса тӑраҫҫӗ. Кӗтесре пионер отрячӗн ялавӗ тӑрать.

Пионерсем пухӑнчӗҫ. Вӑрӑм сӗтел хушшине вырнаҫрӗҫ. Пурте шӑпланчӗҫ. Сбор пуҫланчӗ. Чи малтанах отряд вожатӑйӗ сӑмах илчӗ. Вӑл Аслӑ Сталин ҫинчен каларӗ. Ачасем ӑна пит тимлӗн итлерӗҫ.

*45-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Определенисене вӗсем ӑнлантарса паракан сӑмахсемпе пӗрле ҫырса илӗр.

Эпир савӑнӑҫлӑ ҫӗршывра пурӑнатпӑр. Пирӗн телейлӗ ҫӗршывра ҫеҫ ӗҫ ҫыннисем ирӗклӗ пурӑнаҫҫӗ. Капитализмлӑ ҫӗршывсенче капиталистсем ӗҫ ҫыннисене ирӗк памаҫҫӗ. Пирӗн социализмлӑ ҫӗршывра пусмӑр ҫук. Ӗҫ ҫыннисем телейлӗ пурнӑҫпа пурӑнаҫҫӗ. Вӗсем хӑйсен телейлӗ пурнӑҫне хӑйсем тӑваҫҫӗ.

*46-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Определенисемпе вӗсем ӑнлантарса паракан сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## КОЛХОЗНИК ПӲРЧӖ.

Эпӗ пусма тӑрӑх ҫенӗхе улӑхрӑм, унтан пӳрте кӗтӗм. Виҫ чӳречеллӗ аслӑ ҫутӑ пӳлӗм. Чӳрече янахӗсене шурӑ сӑрӑпа, урайне сарӑ сӑрӑпа сӑрланӑ. Малти кӗтесре пысӑк сӗтел ларать. Сӗтел ҫине шурӑ сӗтел ҫитти витнӗ. Алӑк патӗнче сарлака кровать пур. Кровать ҫинче таса минтерсем купаланса выртаҫҫӗ. Тепӗр енче шуратнӑ тӑрӑхла кӑмака пур. Стена ҫинче И. В. Сталин портречӗ ҫакӑнса тӑрать. Тӗпелте илемлӗ шкап ларать. Шкапӗнче тӗрлӗ савӑт-сапа нумай. Пӳрте электричество кӗртнӗ, радио репродукторӗ пур. Малти кӗтесре кӗнеке ҫӳлӗкӗ пур.

*47-мӗш хӑнӑхтару.* Вуласа тухӑр, определенисене вӗсем ӑнлантаракан сӑмахсемпе пӗрле ҫырса илӗр.

I. Кӗрлет мухтавлӑ ҫӗршыв. Паян аслӑ уяв. Ку кун—пуриншӗн те савӑнӑҫлӑ кун. Епле пысӑк савӑнӑҫ ирӗклӗ ҫыншӑн ҫак аслӑран та аслӑ, мухтавлӑран та мухтавлӑ кун!

II. Тул ҫутӑлман-ха. Сарлака Амур шывне ҫӑра та йывӑр тӗтре хупласа илнӗ. Нӳрлӗ, сулхӑн сывлӑш шӑмшака ҫӳҫентерет, кӑкӑра хӗстерет. Вӑйлӑ тӑвӑл ҫывхарать. Сӗм вӑрман шавласа хумханать.

*48-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене ҫырса илӗр. Определенисемпе вӗсем ӑнлантарса паракан сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Вырнӑ ырашпа хуратул шӑрши сӑмсана ҫапать. 2. Ирхи шурӑмпуҫ илемлӗ ҫутӑпа хӗвелтухӑҫне сарӑлать. 3. Ҫӳлӗ ҫӑра курӑк шупкан курӑнать. 4. Инҫетри пысӑк япаласем аран-аран палӑраҫҫӗ. 5. Шупкалнӑ пӗлӗт кӑвакарма пуҫлать. 6. Вӑйлӑ тӑвӑл иртрӗ.

Пĕр-пĕр ят мар падежра тăракан кĕçĕн членсене **дополнени** теççĕ.

Дополнени ыйтăвĕсем: *кама? мĕне? мĕн? кампа? мĕнпе? камра? мĕнре? камран? мĕнрен?* тата *камăн? мĕнĕн?*

Эпĕ урамра *юлташа* тĕл пултăм.
Ку *тетраде Ивана* панă.
Эпĕ библиотекăран *кĕнеке* илтĕм.
Манăн атте *машинăпа* ĕçлет.
Кантăка *хăйăртан* тăваççĕ.
*Петĕрĕн* шкула каймалла.

Дополнени пуринчен ытла сказуемăя ăнлантарса парать.

Анне *ĕнене* кĕтĕве *хăваларĕ*.
Комбайнсем хирти *тырăсене пуçтараççĕ*.
Тăшман *гарнизонне* утлă çар *çĕмĕрсе тăкрĕ*.
*Пирĕн* тăрăшса *вĕренмелле*.

***49-мĕш хăнăхтару.*** **Предложенисене вуласа тухăр. Дополнениcене тата вĕсем ăнлантарса паракан сăмахсене кăтартса парăр.**

1. Ачасем вăлтапа пулă тытаççĕ. 2. Сарă хĕвел хăйĕн çутипе тĕнчене савăнтарать. 3. Эпир кăмпа татма кайрăмăр. 4. Ачасем тăмран тĕрлĕ кĕлеткесем тунă. 5. Вĕсем пӳрт умне йывăççем лартнă. 6. Конюхсем лашасене аван пăхаççĕ. 7. Йывăçран тĕрлĕ япаласем тăваççĕ.

***50-мĕш хăнăхтару.*** **10-шар предложени тупăр. Предложенисенче дополненисем пулччăр. Дополненисене тата вĕсем ăнлантарса паракан сăмахсене аялтан туртăр.**

Дополнени хыççăмахлă сăмахсенчен те пулма пултарать.

Эпир вăрмана *юлташпа пĕрле* кайрăмăр.
Атте *мана валли* ручка илчĕ.

***51-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене çырса илĕр. Хыççăмахлă дополненисене аялтан туртăр.**

1. Эпĕ шăллăм валли тетрадь илтĕм 2. Вăл хулана йăмăкĕпе патне кайрĕ. 3. Мана сирĕн çинчен пĕлтернĕччĕ. 4. Ун çинчен эпир паянхи пухура сӳтсе яврăмăр. 5. Иванов манпа пĕрле ларчĕ. 6. Вĕсем кунĕпех ĕнерхи спектакль çинчен калаçрĕç.

***52-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене вуласа тухăр. Дополненисене вĕсем ăнлантарса паракан сăмахсемпе пĕрле çырса илĕр.**

1. Вăйлă çумăр çĕре лайăх йĕпетрĕ. 2. Тырă выракансем каннă вăхăтра хаçатсем вулаççĕ. 8. Колхозниксем пĕтĕм колхозри ĕçсене тирпейлĕ туса пычĕç. 4. Вĕсем стена хаçатне

илемлетсе кӑлараҫҫӗ. 5. Ачасем стенасем ҫине плакатсем ҫакнӑ. 6. Колхоз тракторпа тӗрлӗ ӗҫсем тӑвать. 7. Ҫӑкасем ҫилпе хумханса лараҫҫӗ. 8. Петӗр Ивантан пӗр ҫул аслӑ.

*Ӑҫта? ӑҫталла? ӑҫтан? хӑҫан? мӗнле? мӗн чухлӗ? миҫен? миҫе хут?* ыйтусемпе ыйтӑнакан кӗҫӗн членсене **обстоятельствӑсем** теҫҫӗ.

Обстоятельствӑсем ӗҫ хӑш вӑхӑтра, ӑҫта, мӗнле майпа пулнине кӑтартаҫҫӗ.

*Инҫетре* аслати кӗмсӗртетни илтӗнет.
Кун *кӑнтӑралла* сулӑнать.
*Хӗвеланӑҫӗнчен* ҫил вӗрет.
*Паян* ҫумӑр ҫурӗ.
Вӑл *лайӑх* ҫырать.
Эпир ӑна *пайтах* кӗтрӗмӗр.
Хулана *иккӗн* анчах кайнӑччӗ.
Алюмини тимӗртен *нумай* ҫӑмӑлтарах.

***53-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисене вуласа тухӑр. Обстоятельствӑсене тупӑр, вӗсем мӗне (вӑхӑта, вырӑна е ӗҫ майне) пӗлтернине кӑтартса парӑр.

1. Ҫырма-ҫатрасенче тӗллӗн-тӗллӗн юр выртать. 2. Вӑрманта тискер кайӑксем пурӑнаҫҫӗ. 3. Часах хӗвел шевли йӑлтӑртатрӗ. 4. Ачасем ирех экскурсие тухса кайрӗҫ. 5. Ҫакӑн пек тӗттӗм ҫӗр кӗркунне анчах пулать. 6. Улӑхра илемлӗ чечексем курӑнаҫҫӗ. 7. Самолёт хӑвӑрт вӗҫет. 8. Паян клубра кино пулать.

***54-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Обстоятельствӑсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Матросов хӑйӗн ҫулне лайӑх пӗлет. 2. Эпир вӑрманалла утрӑмӑр. 3. Климка кӑмӑллӑн кулкаласа тӑрать. 4. Пӗр каҫхине Жухрай киле таврӑнмарӗ. 5. Вӑл ялан кӗнеке вулать. 6. Атака ирхине вунӑ сехетре пуҫланчӗ. 7. Ыран шкулта пуху пулать. 8. Хутран-ситрен инҫетре ҫиҫӗм ҫиҫет. Аслати сасси аран-аран илтӗнет. 9. Калчасем сип-симӗс курӑнаҫҫӗ.

***55-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисене ҫырса илӗр. Обстоятельствӑсене тата вӗсем ӑнлантарса паракан сӑмахсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Эпӗ паян ирех тӑтӑм та шыва кӗтӗм. 2. Вӑл сумкинчен ҫӗнӗ кӗнеке кӑларчӗ. 3. Лашана сылтӑмалла тытатӑп. 4. Ман пичче институтра вӗренет. 5. Ачасем харӑссӑн юрласа ячӗҫ. 6. Вӗсем ялан вӑрмана ҫӳреҫҫӗ. 7. Пурте ялалла чупрӗҫ.

***56-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Обстоятельствӑсене аялтан йӗр туртса паллӑ тӑвӑр.

## ВĂРМАНТА.

Вăрман хĕрринче хурăнсем, ăвăссем ӳсеççĕ. Шалалла кĕрсен, вĕсем тĕл пулми пулчĕç. Хырсен çара вуллисем çуталма тытăнчĕç. Аялта шĕшкĕ тĕмĕсем курăнаççĕ. Хĕвел хыр тăррисене илемлĕн çутатать. Вырăнĕ-вырăнĕпе йывăççем сайран курăнаççĕ. Малта çуталма пуçларĕ. Çывăхрах сас-чĕвĕ илтĕнет.

***57-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене вуласа тухăр. Кĕçĕн членсене: определенисене, дополненисене, обстоятельствăсене кăтартса парăр.**

1. Ачасем хыпаланса вăрмантан тухрĕç. 2. Шывра хĕрлĕ çунатлă уланкăсем ишсе çӳреççĕ. 3. Хĕвел ялтăртатса пăхать. 4. Урамра йытăсем вĕреççĕ. 5. Улăхра кăвак, хĕрлĕ чечексем ӳсеççĕ. 6. Самолĕт çӳлелле хăпарчĕ. 5. Сергей библиотекăран кĕнеке илчĕ. 8. Кăнтăр енчен ăшă çил вĕрет.

## 9 §. Грамматикăлла разбор тăвасси.

Старик сĕрекепе пулă тытнă.
Ачасем вăрманта кăмпа пуçтараççĕ.

**Малтанхи предложенири тĕп членсене кăтартса парăр. Подлежащи ыйтăвĕсене тата сказуемăй ыйтăвĕсене калăр.**

Старик (*кам?*) тытнă.
Старик тытнă (*мĕн тунă?*)
Старик пулă (*мĕн?*) тытнă.
Старик сĕрекепе (*мĕнпе?*) тытнă.

**Кĕçĕн членсене тупăр: вĕсем хăш члена йнлантарса параççĕ, вĕсен ыйтăвĕ мĕнле?**

***Ачасем вăрманта кăмпа пуçтараççĕ*** **предложение грамматикăлла разбор тунине (таблицăна) пăхса тухăр.**

| Сăмах | Мĕнле ыйту? | Предложенин мĕнле членĕ | Мĕнле сăмаха йнлантарать |
|---|---|---|---|
| *Ачасем* | камсем? | подлежащи | |
| *вăрманта* | ăçта? | обстоятельство | *пуçтараççĕ* |
| *кăмпа* | мĕн? | дополнени | *пуçтараççĕ* |
| *пуçтараççĕ* | мĕн тăваççĕ? | сказуемăй | |

***58-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене разбор тăвăр. Разбор тунă чухне таблицăпа усă курăр.**

1. Пĕррехинче эпир нумайччен çыру илеймерĕмĕр.
2. Тӳпене тĕксĕм пĕлĕтсем хупларĕç.
3. Кĕркури хăйĕн юлташĕпе пĕрле киле таврăнать.
4. Вăл учитель çине хăюллăн пăхрĕ.
5. Паттăр пограничниксем чикĕсене сыхлаççĕ.

*59-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Предложени членӗсене малтанхи предложенире кӑтартнӑ пек кӑтартса парӑр.

Под. доп. выр. обст. сказ.
1. Пулӑҫӑсем кимме шывран кӑларчӗҫ.
2. Ыран пионерсем лагере каяҫҫӗ.
3. Вайлӑ тӑвӑл юмана тымарӗпе кӑкларӗ.
4. Кӗпер ҫинче пулӑҫӑ вӑлтапа ларать.
5. Колхоз хирӗнче тракторсем ӗҫлеҫҫӗ.

*60-мӗш хӑнӑхтару.* Статьяна вуласа тухӑр. Предложенири сӑмахсем мӗнле член пулнине каласа парӑр.

## ПИОНЕР ЛАГЕРӖНЧЕ.

Йӑлӑмра Шупашкарти шкул ачисен, пионерсен лагерӗ вырнаҫнӑ. Лагерьте—пӗр дружина. Вӑл Максим Горький ячӗпе хисепленсе тӑрать. Дружинӑра тӑватӑ отряд, кашни отрядра ҫирӗмшер пионер.

Ачасен лагерьте пурнӑҫ план тӑрӑх йӗркеллӗн иртсе пырать. Ирхине сакӑр сехетре сигнал сасси таврана янраса саланать. Ҫав самантрах пионерсем площадкаваррине йӗркеленсе тӑраҫҫӗ. Зарядка пуҫланать. Ачасем ирхи таса сывлӑшпа сывлаҫҫӗ.

## 10 §. Пӗр йышши членлӑ предложенисем.

(Аса илни)

*61-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене вуласа тухӑр, ҫырса илӗр. Пӗр йышши подлежащисене аялтан туртса паллӑ тӑвӑр.

1. Хура кураксем, шӑнкӑрчсем, тӑрисем йӑвасем хатӗрлеҫҫӗ. 2. Колхозниксем тата колхозницӑсем пухӑва пуҫтаранчӗҫ. 3. Пирӗн класра арҫын ачасем те, хӗр ачасем те вӗренеҫҫӗ. 4. Павӑл, Петӗр тата Хветӗр хулана кайнӑ.

*62-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене вуласа тухӑр, ҫырса илӗр. Пӗр йышши сказуемӑйсене аялтан туртӑр.

1. Эпир вулатпӑр, ҫыратпӑр тата шутлатпӑр. 2. Кашлать, шавлать сӗм вӑрман. 3. Вӑл пӳрте кӗчӗ те кӗнеке вулама пуҫларӗ. 4. Паян эпир ӗҫлерӗмӗр те, кантӑмӑр та. 5. Чӳрече хуппи ҫилпеле уҫӑлать те хупӑнать.

*63-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисенчи пӗр йышши кӗҫӗн членсене кӑтартса парӑр.

1. Эпир пахчана кишӗр тата ҫарӑк акрӑмӑр. 2. Пирӗн класа ҫӗнӗ сӗтел, пукан тата партӑсем лартнӑ. 3. Асамат кӗперӗ хӗрлӗн, кӑваккӑн, симӗссӗн, саррӑн куранать. 4. Колхозниксем тулӑ, ыраш, сӗлӗ, пӑрҫа, урпа акаҫҫӗ.

Предложенире темиçе подлежащи, темиçе сказуемăй е тата пĕр ыйтурах тăракан темиçе кĕçĕн член пулма пултарать.

Ун пек членсене ***пĕр йышши членсем*** теççĕ.

Çырура пĕр йышши членсене пĕр-пĕринчен запятойпа уйăраççĕ.

Икĕ пĕр йышши член ***та, те, тата, е*** союзсемпе çыхăнса тăрать пулсан, вĕсен хушшине запятой лартмаççĕ.

***64-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Пĕр йышши членсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Пирĕн шкулта комсомолецсем, пионерсем вĕренеççĕ. 2. Эпир класра вулатпăр, çыратпăр тата шутлатпăр. 3. Митинга ваттисем те, çамрăккисем те пухăнчĕç. 4. Хĕвел, шыв, уçă сывлăш пирĕн сывлăха çирĕплетет. 5. Хирти тырă шăтрĕ, ӳсрĕ, пулса çитрĕ. 6. Эпир картинăна хура, кăвак, симĕс, сарă, хĕрлĕ тата кĕрен сăрăсемпе ӳкертĕмĕр. 7. Çĕре тислĕкпе е минерал çăнăхĕпе çемçетеççĕ.

***65-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Мĕншĕн запятой лартнине ăнлантарса парăр.

## ЮМАН.

Пысăк, кĕрнеклĕ юман пĕчĕкçеççĕ йĕкелтен шăтса ӳснĕ. Нумай çул хушши пĕчĕк юман хĕвел патнелле, кăвак пĕлĕтелле туртăннă. Хуллен вăл тĕреклĕ, вăйлă йывăç пулса тăнă. Темиçе хĕл, темиçе çу хăй ĕмĕрĕнче вăл irttерне. Кашни кĕр вăл хăйĕн ешĕл, илемлĕ çулçисене тăкнă.

***66-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр, кирлĕ çĕре запятой лартăр.

1. Перемена вăхăтĕнче ачасем выляççĕ кулаççĕ тата юрă юрлаççĕ. 2. Хула ял валли трактор комбайн автомашинăсем ял хуçалăх хатĕрĕсем тата ытти тĕрлĕ таварсем тăвать. 4. Тырра аларăмăр та армана леçрĕмĕр. 4. Çил тухрĕ вăйланчĕ арман çуначĕсене çаврăнчĕ çăнăх авăртма пулăшрĕ. 5. Юман вĕрене хыр чăрăш вăрманта ӳсеççĕ.

***67-мĕш хăнăхтару.*** „Квартет" басньăна вуласа тухăр, предложенисенчи пĕр йышши членсене тупăр.

## КВАРТЕТ.

Качакапа Ашак, пуçтах Мартышка
тата чапрас уралла Мишка
Квартет шутлана irttерме.
Икĕ скрипка, нот, бассем, альтсем тупаççĕ,
çăка айне çерем çине лараççĕ

хăйсен искусствипе килентерме.
Тытаççĕ сĕркĕçсем, пуçлаççĕ çĕмĕрттерме.
„Лăпланăр, тăвансем!—çухăрать
Мартышка.—Тăхтăр!
Эсир тĕрĕс ларман. Ун пек ăçтан ĕç тухтăр!
Эс баспа, Мишка, альта хирĕç лар.
Эп, прима,—вторăна хирĕç;
шăранĕ музыка та урăхла:
вăрманĕ, сăрчĕ ташлĕç пирĕн!..“

(*И. А. Крылов*)

***68-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăртан пĕр йышши членлă предложенисем 5 предложени тупса çырăр.

***69-мĕш хăнăхтару.*** Çак текста вуласа пăхăр. Пĕр йышши членсем мĕнле çыхăнса тăнине кăтартса парăр.

Пирĕн ялта ĕлĕк ишĕлчĕк çурт-йĕрсемпе хура та лутра пÿртсем çех ларатчĕç. Халĕ ĕнтĕ колхозниксем çутă та таса пÿртсенче пурăнаççĕ. Кашни урамрах çĕнĕ те пысăк пÿртсем, вырăсла хапхасем; вĕсем урамсенчи çÿлĕ йывăççен хушшинче тирпейлĕн капăрланса лараççĕ. Çĕнĕрен пÿрт лартакан колхозниксем урамалла вичшер те пилĕкшер чÿрече кастараççĕ. Чÿречесем çине занавескăсем çакнă. Колхозниксен килĕсенче пысăк тĕкĕрсем, сехетсем, чечексем, çĕлемелли машинăсем, патефонпа радио, велосипедсем тата ыттисем те—колхозлă ялăн пуян та культурăллă пурнăçне кăтартса параççĕ.

***70-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. пĕр йышши членсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Самолёт çинчен ялсем, шывсем, вăрмансем инçетрен курăнаççĕ. 2. Чĕрĕлекен уй-хирсем, çарансем мана курса кулчĕç. 3. Кăтра хурăнсем, çирĕксем, вĕтĕ-вĕтĕ çÿçесем, хырсем, чăрăшсем хăйсен сăнарне палăртма пуçлаççĕ. 4. Снайпер шăнать те, кÿтет те, çапах та вырăнтан тапранмасть. 5. Фашистсем пирĕн халăхсен пурлăхне, тырри-пуллине, выльăх-чĕрлĕхне çаратрĕç. 6. Лăпкă, ăшă каç лётчиксем инçете вĕçсе кайрĕç.

***71-мĕш хăнăхтару.*** Çак пĕр йышши членсене кĕртсе, предложенисем туса парăр (сăмахсен йĕркине улăштарма юрать).

1) Уйсем, хирсем, вăрмансем.
2) Типĕ, ырă шăршăллă, кăвак.
3) Ташă, юрă, кулă.
4) Хĕрлĕ, симĕс, кăвак.
5) Шкулсем, клубсем, библиотекăсем.
6) Кашлать, шавлать, кĕрлет.
7) Чĕвĕлтетеççĕ, шăхăраççĕ, чакăлтатаççĕ.
8) Вăйлăн, паттăррăн, хăюллăн.

Пĕр йышши членсене çыхăнтаракан ***та***, ***те*** союз темиçе хут тĕл пулсан, ун хыççăн пĕр йышши членсем хушшине запятой лартаççĕ.

Хĕвел тĕнчене ăшăтать те, çутатать те.
Вĕренекенсем класра çырчĕç те, вуларĕç те.
Пухăва арçынсем те, хĕрарăмсем те пынă.

***72-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр, кирлĕ çĕре запятой лартăр.

1. Эпĕ ручка та карандаш та перо та илтĕм. 2. Пĕвере карас та уланкă та пур. 3. Тискер кайăксем те вĕçен кайăксем те выльăх-чĕрлĕхсем те çуркуннене кĕтеççĕ. 4. Вутă каснă чухне пуртă та пăчкă та кирлĕ. 5. Вăрманта çырла та кăмпа та татаççĕ. 6. Упа та кашкăр та тилĕ те çынна сиен тăваççĕ.

***73-мĕш хăнăхтару.*** Предложенисене çырса илĕр, кирлĕ çĕре запятой лартăр.

1. Шурă юр сăртсене улăхсене айлăмсене витрĕ. 2. Фашистсем колхоз витинчи выльăхсене хуса тухрĕç те унта машинăсем вырнаçтарчĕç. Вĕсем хăшĕ чăх е автан хур-кăвакал хăшĕ сурăх хăшĕ пиçнĕ çăкăр йăтса иртеççĕ 3. Пирĕн боецсем тăшмана çавăрса илчĕç те наступлени пуçларĕç. 4. Ку вăхăта ваттисем те çамрăккисем те савăнăçлăн кĕтсе илчĕç.

Хăш чухне пĕр йышши членсем хушшинче ***анчах***, ***çапах*** союзсем пулаççĕ. ***Анчах, çапах*** союзсем умне кирек хăçан та запятой лартмалла.

***74-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр, кирлĕ çĕре запятой лартăр.

1. Вăл пурне те лайăх тăвать анчах майĕпен ĕçлет. 2. Хĕлле хĕвел çутатать анчах хĕртмест. 3. Хăй ялан çырать çапах çырса пĕтереймест. 4. Манăн шăллăм урапана пĕтĕм вăйпа туртать çапах та вырăнтан тапратаймасть. 5. Кунсем лайăх анчах шăрăх. 6. Эпир ирех тăтăмăр анчах вăхăтра ĕлкĕреймерĕмĕр.

***75-мĕш хăнăхтару.*** Кунта икшер предложени панă. Çав предложенисенчен пĕр йышши членлă пĕр предложени тăвăр.

1. Лĕпĕшсем чечексем çинче вĕççе çӳреççĕ. Пыл хурчĕсем чечексем çинче вĕççе çӳреççĕ. 2. Ачасем пулă тытаççĕ. Ачасем рак тытаççĕ. 3. Ĕнесем кĕтӳре çӳреççĕ. Сурăхсем кĕтӳре çӳреççĕ. 4. Боецсем вăрçăра награда илнĕ. Офицерсем вăрçăра награда илнĕ. 5. Вăрманта юман ӳсет. Вăрманта хурама ӳсет. 6. Çулпа лавсем пыраççĕ. Çулпа автомашинăсем пыраççĕ.

*76-мĕш хăнăхтару*. Çак предложенисене вуласа тухăр. Анлă, ансăр, пĕр йышши членлă предложенисене кăтартăр.

1. Эрнесем, уйăхсем иртсе каяççĕ. 2. Çуркунне çитрĕ. 3. Кăнтăр енчен ăшă çил вĕрет. 4. Кайăк-кĕшĕксем те вĕçсе килчĕç. 5. Уйсем, вăрмансем симĕсленчĕç. 9. Хĕвел йăлтăртатса пăхать. 7. Улăхра хĕрлĕ, шурă, кăвак чечексем курăнаççĕ. 8. Кайăксем йăва çавăраççĕ, чĕпĕ кăлараççĕ. 9. Вĕренекенсем экскурсие кайрĕç.

## 11 §. Пĕр йышши членсене пĕтĕмлетекен сăмахсем.

Хăш чухне предложенире пĕр йышши членсене пĕтĕмлетекен сăмахсем пулаççĕ.

*Пирĕн вăрманта çак йывăççем ӳсеççĕ: çăка, вĕрене, юман, хурăн, йĕлме.* Кунта ***çак йывăççем***—пĕтĕмлетекен сăмахсем.

*Пур çĕрте те стахановецсен ĕçĕ ӳссе пырать: заводра та, фабрикăра та, колхозра та, шахтăра та.*

Кунта ***пур çĕрте те***—пĕтĕмлетекен сăмахсем.

Пĕтĕмлетекен сăмах йĕркипе каласа тухмаллине кăтартать пулсан тата пĕр йышши членсем умĕнче тăрать пулсан, ун хыççăн двоеточи (:) лартаççĕ; хыçĕнче тăрать пулсан, ун умĕн тире (—) лартаççĕ.

*Пурте митинга пуçтарăнчĕç: ваттисем те, çамрăккисем те, арçынсем те, хĕрарăмсем те.*

*Ваттисем те, çамрăккисем те, арçынсем те, хĕрарăмсем те—пурте митинга пуçтарăнчĕç.*

*77-мĕш хăнăхтару*. Предложенисене çырса илĕр. Пĕтĕмлетекен сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр, мĕнле чарăну паллисем лартнине асăрхăр.

1. Тĕнчере пурте пирĕн: хир те, шыв та, çак тӳпе те, кӳпĕлĕтсем те. 2. Çĕр айĕнче пирĕн темĕнле пурлăх та пур: çĕр кăмрăкĕ те, тимĕр те, пăхăр та, кĕмĕл те. 3. Уй-хирте те, вăрманта та—пур çĕрте те кайăксен юрри илтĕнет. 4. Вĕçен кайăксем те, чечексем те, ешĕл курăк та—пурте хĕвеле кĕтеççĕ. 5. Ялта та, хулара та, колхозсенче те, заводсемпе фабрикăсенче те—пур çĕрте те аслă уява хатĕрленеççĕ.

*78-мĕш хăнăхтару*. Текстри пĕтĕмлетекен сăмахлă предложенисене тупăр, пĕтĕмлетекен сăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

Хĕвел куллен-кун хытăрах та хытăрах хĕртет. Кăнтăр енчен тĕрлĕ кайăксем пирĕн паталла туртăнаççĕ: хура кураксем те, шăнкăрчсем те, тăрисем те. Çуркунне вĕçен кайăксене йывăр килет. Вĕсем пурте йăва çавăраççĕ. Пĕлтĕрхи типнĕ курăк, хĕлĕх, тĕк, туратсем—пурте йăва тумалли япаласем, пурне те кайăксем йăвана тултараççĕ.

## 12 §. Обращени.

Сывă-и, Иван Петрович?
Сывă пулăр, ачасем!
Васса, кил кунта!
Юлташсем, пурте тăрăшса вĕренĕр!

Кама та пулин е мĕне те пулин чĕнсе калакан сăмаха **обращени** тессĕ.

*79-мĕш хăнăхтару.* Вуласа тухăр та кама е мĕне чĕнсе каланине кăтартса парăр. Чĕнсе калакан сăмахсене уйрăм калăр.

1. Тăван çĕршыв, пур чухне те саншăн тăрăшатăп! 2. Юлташăм, мана ан ман, яланах çыру çыр! 3. Ачасем, паян вăрмана кайăпăр. 4. Тĕттĕмĕ тĕп пулчĕ, мăшкăл иртсе кайрĕ, тин ирĕке тухрăн, тĕп чăваш чĕлхи. (*Çеçпĕл М.*) 5. Тав сире, паттăрсем! Пĕтĕм чĕререн тав сире, ăмăрткайăксем! 6. Сана, Тăван çĕршывăм, эпĕ чунтан-вартан юрататăп!

Обращени пĕр сăмахлă та, темиçе сăмахлă та пулать.

*Сывă-и, асатте!*
*Сана саламлатăп, Тăван çĕршыв!*
*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

*80-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр, обращенисене айлтан туртăр.

1. Çаплах вара, Нарспиçĕм, çук-ши манăн ăраскал? 2. Сетнер, таврăн хăвăртрах, шыва анать пĕр арăм. 3. Хура вăрман, сĕм вăрман, мĕншĕн хытă шавлатăн? 4. Макар Ильич, пирĕн пата пыратăр-и? 5. Ну, ачасем, сывă пулăр, телейлĕ пурăнмалла пултăр. 6. Атя, Ванюк, урама. 7. Пăхăр-ха, пăхăр-ха, ачасем! Пăхăр çăлтăрсем çине, вĕсем епле йышлăн курăнассĕ.

Обращени предложени пуçламăшĕнче те, варринче те, вĕçĕнче те пулма пултарать.

Обращени предложени пуçламăшĕнче пулсан, ун хыççăн е запятой, е кăшкăру палли лартассĕ.

*Асатте, юмах ярса пар-ха!*
*Юлташсем! Паян эпир пысăк праçник тăватпăр.*

Обращени предложени варринче пулсан, ăна икĕ енчен те запятойпа уйăрассĕ.

*Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме, юлташсем, яланах хатĕр пулăр! Вĕрен, ачам, тăрăш—пурнăçра кирлĕ пулĕ.*

Обращени предложени вӗҫӗнче пулсан, ун умне запятой лартаҫҫӗ; ун хыҫҫӑн, мӗнле предложени пулнине кура, е точка, е кӑшкӑру палли, е ыйту палли лартаҫҫӗ.

*Вӗренӗр, нумайрах вӗренӗр, ачасем.*
*Салам сире, паттӑр гвардеецсем!*
*Эсӗ ӑҫта кайнӑччӗ, Хӗветӗр?*

***81-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисене вуласа тухӑр, обращенисене тупӑр, вӗсем ӑҫта (предложени пуҫламӑшӗнче, варринче е вӗҫӗнче) пулнине кӑтартса парӑр.

1. Вӑрҫӑ пӗтрӗ, юлташсем! 2. Анне, ӑҫта ман чемодан? 3. Ну, ывӑлӑм, паттӑр пул, шиксӗр пул, ӑмӑрткайӑк пек ҫапӑҫ. 4. Юрӗ, атте, манмӑп санӑн сӑмахусене. 5. Ӗҫлес пулать, ачасем, ҫине тӑрсах ӗҫлес пулать. 6. Мӗн кӑшкӑратӑн, хӗрӗм, мӗн шавлатӑн?

***82-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисене ҫырса илӗр, кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартӑр.

1. Юлташсем ҫирӗп тӑрӑр: пирӗн халӗ юлашки татӑклӑ ҫапӑҫу пырать. 2. Ҫӳлерех ҫӗклен пирӗн хӗрлӗ ялав. 3. Рабочисемпе хресченсем Совет Союзӗн сыхлӑхне татах ҫирӗплетӗпӗр. 4. Комсомолецсем ҫуракине вӑхӑтра ирттерессишӗн кӗрешӗр. 5. Вӗренес пулать ачам. 6. Петӗр эсӗ ӑҫта пулнӑ? 7. Тӑван ҫӗршывӑм сана пӗтӗм чӗререн салам!

***83-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене улӑштарса, обращениллӗ предложенисем тӑвӑр (обращенийӗ подлежащирен пулать), кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартӑр.

Тӗслӗх: *Пионерсем, Ленин хушнине пурнӑҫлӑр.*

1. Пионерсем Ленин хушнине пурнӑҫлаҫҫӗ. 2. Ачасем лайӑх ӗҫлеҫҫӗ. 3. Ешӗл вӑрман шавлать. 4. Юрӑ пурне те савӑнтарать. 5. Ҫил аслатиллӗ ҫумӑра сирсе ярать. 6. Вӗренекенсем лайӑх вӗренеҫҫӗ. 7. Хастарлӑ колхозниксем тырӑ нумай тӑваҫҫӗ.

***84-мӗш хӑнӑхтару.*** Собрани ҫинчен, ӗҫе тухасси ҫинчен, ӑҫта та пулсан каясси ҫинчен обращениллӗ пӗлтерӳ ҫырса парӑр.

***85-мӗш хӑнӑхтару.*** Учительтен е библиотекарьтен хӑвӑра кирлӗ кӗнеке мӗнле ыйтнӑ пулӑттӑр? Ҫавна ҫырса парӑр.

***86-мӗш хӑнӑхтару.*** Хӑвӑртан обращениллӗ пилӗк предложени тупса ҫырӑр. Обращениллӗ предложенисенче чарӑну паллисем лартма ан манӑр.

***87-мӗш хӑнӑхтару.*** Пилӗк предложени шухӑшласа тупӑр та ҫырӑр. Кӳ предложенисенче *вӑрман, хӗвел, ҫуркунне, кайӑксем, Тӑван ҫӗршыв* сӑмахсем обращени пулччӑр.

## 13 §. Урӑх ҫын сӑмахлӑ предложенисем.

1. Ванюк: „Петӗр, кинона пыратӑн-и?“—терӗ.

Петӗр хирӗҫ тавӑрчӗ: „Ҫук, пымастӑп, эпӗ кӗнеке вулатӑп“,—терӗ.

2. — Петӗр, кинона пыратӑн-и?—терӗ Ванюк.
— Ҫук, пымастӑп, эпӗ кӗнеке вулатӑп,—терӗ хирӗҫ Петӗр.

Ку предложенисем мӗнле пайсенчен тӑраҫҫӗ? Чарӑну паллисене кунта мӗнле лартнӑ?

Хӑш-пӗр предложенире урӑх ҫын калана сӑмахсем пулаҫҫӗ. Ун пек сӑмахсене **урӑх ҫын сӑмахӗ** теҫҫӗ, ҫыраканӗн сӑмахӗсене **автор сӑмахӗ** теҫҫӗ.

Урӑх ҫын сӑмахӗсем пуринчен ытла автор сӑмахӗсемпе пӗрле пулаҫҫӗ.

Урӑх ҫын сӑмахӗ автор сӑмахӗсем умӗн пулсан, ун хыҫҫӑн е запятой, е ыйту палли, е кӑшкӑру палли лартаҫҫӗ, унтан тире лартаҫҫӗ.

*„Айтӑр пурте хире каяр“,—терӗ Санюк.*
*„Ӑҫта каятӑн эсӗ, ачам? Таврӑн каялла!“—тесе кӑшкӑрать амӑшӗ.*
*„Кайӑксем пурте юрлаҫҫӗ, вӗсем ҫумӑртан хӑрамаҫҫӗ пулмалла“,—терӗ Хӗветӗр.*

Калана чухне урӑх ҫын сӑмахӗсене сасса улӑштарса уйӑраҫҫӗ, ҫырнӑ чухне кавычкӑсем („“) е тире (—) лартса уйӑраҫҫӗ.

Урӑх ҫын сӑмахне пысӑк саспаллипе пуҫласа ҫыраҫҫӗ.

Урӑх ҫын сӑмахӗсем автор сӑмахӗсем хыҫҫӑн тӑраҫҫӗ пулсан, автор сӑмахӗсем хыҫне двоеточи (:) лартаҫҫӗ.

*Петӗр асламӑшӗнчен ыйтать: „Асанне, эсӗ миҫе ҫула ҫитнӗ ӗнтӗ?“*
*Алӑкран кӗнӗ-кӗменех вӑл ыйтрӗ: „Мӗн туса ларатӑн вара халиччен?“*

***88-мӗш хӑнӑхтару.*** Урӑх ҫын сӑмахӗсене тата автор сӑмахӗсене кӑтартса парӑр.

— Эсӗ пӗчченех-и вара кунта?—тесе ыйтрӑм эпӗ хӗрачаран.
— Пӗчченех,—терӗ вӑл шӑппӑн.
— Эсӗ вӑрман хуралҫин хӗрӗ мар-и?
— Вӑрман хуралҫин,—терӗ вӑл тата шӑппӑнтарах.

Урӑх ҫын сӑмахӗсем автор сӑмахӗсӗрех пулсан, вӗсене кирек хӑҫан та ҫӗнӗ йӗркерен пуҫласа ҫыраҫҫӗ. Ун чухне урӑх ҫын сӑмахӗсене кавычкӑсемпе уйӑрмаҫҫӗ, вӗсем умне тире ҫеҫ лартаҫҫӗ. Ун пек калаҫӑва **диалог** теҫҫӗ.

— Эппин вӑл, пӑши пӑрушӗ, тарчӗ-и?
— Тарчӗ, Гришуха.
— Сарӑччӗ-и?
— Пӗтӗмпех сарӑччӗ, сӑмсипе чӗрнисем анчах хураччӗ.

*89-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисенчи обращенисене тата урӑх сын сӑмахӗсене кӑтартӑр.

1. „Пионер, хатӗр пул!“—„Яланах хатӗр!—терӗ пионер. 2. Колхозниксемпе колхозницӑсем, вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн тӑрӑшӑр! 3. Тӑван ҫӗршыв, сана мухтаса юрлатпӑр эпир. 4. В. И. Ленин: „Вӗренмелле, вӗренмелле тата вӗренмелле!“—тенӗ. 5. „Юлташӑм, эпӗ хам шкулта мӗнле вӗренни ҫинчен пӗлтерем“,—ҫыру ҫырма пуҫларӗ Петӗр. 6. „Машук, каласа пар-ха: эсӗ кӑҫал миҫе кӗнеке вуласа тухрӑн?“—ыйтать юлташӗ.

*90-мӗш хӑнӑхтару.* Статьяна вуласа тухӑр, ҫырса илӗр. Урӑх сын сӑмахӗсене аялтан туртӑр.

## ШӐШИПЕ ЙӖКЕ ХӲРЕ.

Йӗке хӳре патне шӑши васкаса чупса пынӑ та: „Кӳршӗм, эсӗ ырӑ хыпар илтрӗн-и? Кушак арӑслан чӗрнине лекнӗ, теҫҫӗ вӗт. Ӗнтӗ тинех пире канма вӑхӑт ҫитрӗ!“ —тет. Йӗке хӳре ӑна хирӗҫ калать: „Эй, тусӑм, малтанах ан савӑн-ха, кирлӗ мара ан шан! Чӗрне вӗҫне ӗҫ юлсан, арӑслан чӗррӗн юлас ҫук, мӗншӗн тесен кушакран вӑйлӑ тискер кайӑк ҫук!“—тет. Ҫавӑнпа та каланӑ: „Камран кам хӑрать, ҫавӑ уншӑн пуринчен те вӑйлӑ“,—тенӗ.

(*И. А. Крылов*)

*91-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак калаҫӑва вуласа тухӑр.

Пӗррехинче, пӳртри ӗҫсене туса ҫитерсен, Нина мӑнаккӑшӗнчен ыйтрӗ:

— Мӑнакка, халӗ ӗнтӗ пирӗн килте ним ӗҫ те ҫук вӗт?

— Ним ӗҫех те ҫук-ха ӗнтӗ.

— Мӑнакка, эпӗ сана пӗр сӑмах каласшӑн...

— Кала, мӗн?

— Пӑлаки аппа чирлӗ. Ӗнер те вӑл вут хутман. Ачисем сивӗ пӳртре вӗри апатсӑр лараҫҫӗ. Айта иксӗмӗр Пӑлаки аппасем патне кайса пӑхар. Эпӗ пӗрер ҫӗклем шыв кӳрсе парам, эсӗ вут хутса яшка пӗҫер, пирӗн халӗ ӗҫ ҫук вӗт?

— Юрӗ, кайӑпӑр,—терӗ мӑнаккӑшӗ.

Кунта миҫен калаҫаҫҫӗ? Иккӗн вуласа парӑр: пӗри ыйтаканни пултӑр, тепри хирӗҫ калаканни. Унтан пӗри пӗччен вуласа патӑр. Вуланӑ чухне, сасса улӑштарса, ик сын калаҫнӑ пек вулӑр.

*92-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак темӑсемпе калаҫу туса ирттерӗр. Калаҫнӑ чухне пӗри ыйттӑр, тепри хирӗҫ калатӑр.

1) Ҫуркуннехи пахча ӗҫӗсем.
2) Вӗренекенсем ашшӗ-амӑшӗсене пулӑшаҫҫӗ.
3) Эсӗ мӗн-мӗн тума пӗлетӗн?

*93-мӗш хӑнӑхтару.* Статьяна ҫырса илӗр. Кирлӗ ҫӗре чарӑну паллисем лартӑр.

Петӗрпе Сантӑр вӑрмана кайнӑ Ҫулпа утса пынӑ чух Петӗрӗ ыйтать
Сантӑр эсӗ кашкӑртан хӑратӑн-и
Мӗн хӑрамалли пур унтан Пӗрре патакпа ҫапсан, вӗлерсе те пӑрахатӑп ӑна тет лешӗ
Акӑ кусем вӑрман патне ҫитрӗҫ Кӗчӗҫ вӑрмана Кунта хирти пек мар, тӗттӗмрех Петӗр Сантӑртан ыйтать
Хӑрушӑ-и тет
Сантӑр хӑй хӑранине систересшӗн мар
Мӗн хӑрамалли пур, эпӗ пӗчӗк ача мар вӗт тет
Петӗр кӗтмен ҫӗртен хӑрушшӑн Кашкӑр тесе кӑшкӑрса ярать
Сантӑр хӑранипе Анне-е тесе ҫухӑрса ярать
Кайран Петӗр Сантӑртан тӑрӑхласа кулать
Эх, хӑраман Сантӑр паттӑр тет

*94-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак сыпӑкри калаҫура лартнӑ чарӑну паллисем ҫинчен ӑнлантарса парӑр.

Пӗрре ачасем шкула пыраҫҫӗ те унта пӗр ҫӳлӗ старике тӗл пулаҫҫӗ. Вӑл чӳречесем майлаштарса тӑрать. Старикӗ пит хаяр пек курӑнать. Ачасем старик тавра пуҫтарӑнчӗҫ те калаҫма пуҫларӗҫ.

— Асатте, эсӗ пирӗн шкулти ҫӗнӗ сторож мар-и?
— Сторож ҫав.
— Эсӗ мӗн ятлӑ?
— Пётр Иваныч.

Старик чӳрече патӗнче, ачасем ҫине пӑхкаласа, пӗр чӗнмесӗр ӗҫлет. Ачасем те чӗнмеҫҫӗ. Вӗсем малалла мӗн ҫинчен ыйтмаллине пӗлмеҫҫӗ.

— Эсӗ пит хаяр-и?—тет пӗри, хӑюллӑраххи.
— Ак, курӑр-ха,—тет старик.
— Хаяр пулмалла. Пит хаяр пек курӑнатӑн.

Пурте кулса ячӗҫ. Старик те кулса ячӗ. Халӗ ӗнтӗ вӑл пӗртте хаяр пек курӑнмасть. Куҫӗсем унӑн ҫӑра куҫхаршийӗ айӗнчен ачасем ҫине темӗнле ҫемҫен пӑхаҫҫӗ.

## 14 §. Хутлӑ предложенисем.

1. Урок пӗтрӗ, ачасем класран тухрӗҫ.
2. Ҫумӑр ҫума чарӑнчӗ, анчах хӗвел пӑхмасть-ха.
3. Ҫанталӑк ӑшӑ тӑрать, ҫапах та юр кайса пӗтмен-ха.

Ҫак предложенисене пӑхса тухӑр. Пӗрремӗш хутлӑ предложенире миҫе хутсӑр предложени? Пӗрремӗш хутсӑр предложенире хӑш сӑмах сказуемӑй пулать? Иккӗмӗш хутсӑр предложенире хӑш сӑмах сказуемӑй пулать? Ку предложенисенчи подлежащисене е сказуемӑйсене пӗр йышши членсем теме юрать-и? Мӗншӗн юрамасть?

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш предложенисене çавăн пекех пăхса тухăр.

Çак предложенисене уйăрса, уйрăм предложенисем тума май килмест-ши?

Пĕр вĕçленнĕ шухăша пĕлтерекен предложение **хутсăр предложени** теççĕ.

Икĕ е темиçе хутсăр предложенисене пĕрлештерсе, пĕр хутлă предложени тума пулать.

Пĕр предложенире икĕ е темиçе хутсăр предложени пулсан, ун пек предложение **хутлă предложени** теççĕ.

Сулахай енчи предложенисене сылтăм енчи предложенисемпе танлаштарса пăхăр.

| | |
|---|---|
| 1) Эпĕ çыратăп. Эсĕ вулатăн. | Эп çыратăп, эсĕ вулатăн. |
| 2) Юр ирĕлчĕ. Варсем тăрăх шыв юхма пуçларĕ. | Юр ирĕлчĕ те, варсем тăрăх шыв юхма пуçларĕ. |
| 3) Кĕркунне çумăр час-часах çăвать. Курăксем лайăх ÿсмеççĕ. | Кĕркунне çумăр час-часах çăвать, çапах курăксем лайăх ÿсмеççĕ. |

Хутлă предложенири хутсăр предложенисене пĕр-пĕринчен запятойпа уйăраççĕ.

*95-мĕш хăнăхтару.* Çак хутлă предложенисене вуласа парăр. Вĕсем мĕнле хутсăр предложенисенчен пулнă?

1. Шăнкăр-шăнкăр шыв юхать, шăнкăрчă чĕппи шыв ĕçет. 2. Хĕвел анса пырать, Силпи ялĕ лăпланать. 3. Шăвлать, кĕрлет çурхи шыв, хĕпĕртесе вăл юхать. 4. Йывăç-курăк çурăлать, вăрман илемлĕн курăнать. 5. Курăксем ешерчĕç, чечексем усăннă пуçĕсене çĕклерĕç, йывăçсен ешĕл çулçисем ирĕклĕн сарăлчĕç.

Хутлă предложенисенчи хутсăр предложенисем пĕр-пĕринпе ***та, те, тата, анчах, çапах*** союзсемпе сыпăнса тăма пултараççĕ.

Хутсăр предложенисене ***та, те*** союзсемпе сыпăнтарнă пулсан, запятой ***та, те*** союзсем хыççăн лартаççĕ; ***тата, анчах, çапах*** союзсемпе сыпăнтарнă пулсассăн, запятой ***тата, анчах, çапах*** союзсем умĕн лартаççĕ.

*96-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене пĕрлештерсе, хутлă предложенисем тăвăр; вĕсене е союзпа, е союзсăр сыпăнтарăр.

1. Каç пулса килет. Эпĕ килелле хыпаланатăп. 2. Пичче пулă тытать. Эпĕ витре йăтса çÿретĕп. 3. Эпĕ сана кĕнеке парăп. Эсĕ мана вуласа кăтарт. 4. Хĕвел тухрĕ. Тĕтре саланчĕ. 5. Сивĕсем çитрĕç. Хĕл пуçланчĕ. 6. Шăнкăрав шанкăртаттарчĕ. Ачасем класа кĕчĕç. 7. Çил-тăвăл чарăнчĕ. Атăл шывĕ хумханать. 8. Çăка час çурăлать. Ырă шăршă сарăлать.

*97-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене пĕрлештерсе, хутлă предложенисем тăвăр, вĕсене *та, те* союзпа сыпăнтарăр, вара çырса илĕр.

1. Çиçĕм çиçрĕ. Аслати авăтса ячĕ. 2. Вĕсем ĕçрен таврăнчĕç. Эпир апата лартăмăр. 3. Лаша кӳлчĕç. Эпир кайрăмăр. 4. Ăшă кунсем çитрĕç. Ешĕл курăк шăтса тухрĕ. 5. Пурте пуçтарăнчĕç. Митинг пуçланчĕ.

*98-мĕш хăнăхтару.* Çак хутлă предложенисенчен хутсăр предложенисем тăвăр.

1. Çиçĕм ялтăртатса çиçрĕ те, çывăхра аçа çапрĕ. 2. Çулăн сылтăм енче хурăнлăх, сулахай енче ыраш пусси ешерсе ларать. 3. Юр кайса пĕтрĕ те, çырансем çурхи шывпа тулчĕç. 4. Çулпа пĕр лав пырать, малта хура йытă чупать. 5. Эпир каçă патне хыпаланса пыратпăр, анчах каçараканĕ леш айккине каçнă пулнă. 6. Хĕвел анма пуçларĕ, анчах эпир ĕçе пĕтерейменĕмĕр. 7. Час юр ирĕлсе пĕтĕ, пăрсем кайĕç, вара çуркунне айлăмсене чечексемпе илемлетĕ.

*99-мĕш хăнăхтару.* Çак хутлă предложенисене çырса пĕтерĕр.

1. Ĕлĕк акана сухапуçпе тунă, халĕ... 2. Хĕл çитрĕ те... 3. Ванюк хăй юлташне темĕнччен кĕтсе тăчĕ, анчах... 4. Çумăр чарăнчĕ те... 5. Пурте пӳскелле выляççĕ, эпĕ... 6. Кăçал пире каток туса пачĕç те, эпир... 7. Хĕвеланăç енчен çил вĕрме пуçларĕ те... 8. Петĕр вăрмана каясшăнччĕ, анчах...

*100-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Статьяри ансăр, анлă, пĕр йышши членлă тата хутлă предложенисене кăтартса парăр.

## ВĂЙЛĂ ÇУМĂР.

Кăнтăр енчен хура пĕлĕтсем тапранчĕç. Вĕсем пĕтĕм тӳпене хупласа илчĕç. Çиçĕм ялтăртатса çиçет, аслати хытăран хытă авăтать. Çил-тăвăл пуçланчĕ. Вăйлă çумăр çума пуçларĕ. Часах çумăр чарăнчĕ, хĕвел те пăхрĕ. Çĕр савăнать. Çырмасем, варсем тăрăх пăтранчăк шыв юхать. Йывăç-курăксем ешереççĕ. Пыл хурчĕсем пыл пуçтарма вĕçеççĕ, лĕпĕшсем вĕçкелесе çӳреççĕ, ӳпресем те çыртма пуçларĕç. Кайăксем юрлаççĕ. Çынсем пахчасене, уйсене, улăхсене пăхса савăнаççĕ.

*101-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Хутлă предложенисене суйласа çырса илĕр.

1. Ачасем сăвăсем вулама пуçларĕç. 2. Хăшĕ-пĕрисем çуран утаççĕ, теприсем урапа çине ларса пыраççĕ. 3. Лавсем çине тĕрлĕ хатĕрсем, апат-çимĕçсем тиенĕ. 4. Эпир урама тухрăмăр. 5. Юр кайса пĕтнĕ, анчах йывăç-курăксем симĕсленеймен-ха. 6. Йывăçсем çулçă сарнă, кайăксем хăйсен юррине шăрантараççĕ. 7. Куллен хĕрӳллĕ вĕренӳ пырать. 8. Инçетри Хĕвелтухăçĕнче халĕ хĕрсе хĕвел пăхать, кунта тул çутăлса çитмен-ха. 9. Вĕреннĕ çынсем çурçĕр полюсне тĕпченĕ, вĕсем унта çанталăк мĕнлине сăнанă.

## Аса илтермелли ыйтусем.

1. Мĕнле предложенисене ансăр хутсăр предложени тата анлă хутсăр предложени теççĕ?

2. Мĕнле предложенисене пĕр йышши членлă предложенисем теççĕ? Пĕр йышши членлă предложенисем тупса парăр.

3. Мĕнле предложенисене хутлă предложенисем теççĕ?

4. Мĕнле предложенисене калуллă, ыйтуллă, кăшкăруллă предложенисем теççĕ?

5. Мĕнле сăмахсене обращени теççĕ, ăна предложенире мĕнле чарăну паллисемпе уйăраççĕ?

6. Мĕн вăл урăх çын сăмахĕ?

## 15 §. Пуплев пайĕсем.

Ирхине ирех эпĕ вăрантăм,
çăвăнтăм та тумлантăм.
Çĕрĕпех вайлă çумăр çунă,
урамра пысăк кÿлĕ пулнă.

Предложенири сăмахсем хăйсен пĕлтерĕшĕ тăрăх темиçе ушкăна пайланаççĕ.

Пĕрисем япала *ятне* кăтартаççĕ: *çумăр, урам, кÿлĕ.*

Теприсем япала *ĕçне* (мĕн тунине) кăтартаççĕ: *вăрантăм, савăнтăм, тумлантăм, çунă, пулнă.*

Пирĕн калаçура урăх пĕлтерĕшлĕ сăмахсем те пур.

Пĕлтерĕш енчен уйрăм тăракан сăмахсен ушкăнĕсене **пуплев пайĕсем** теççĕ.

Япала ячĕсем, паллă ячĕсем, глаголсем, местоименисем—вĕсем пурте пуплев пайĕсем.

***102-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Япала ячĕсене, япала паллисене, япала ĕçне пĕлтерекен сăмахсене кăтартса парăр.

### КĔРХИ КУНСЕМ.

Шăрăх кунсем иртрĕç. Хĕвел пахча çине пăхмасть, ешĕл тĕмсемпе савăнса калаçмасть. Ырă çанталăк салхуланчĕ. Сивĕ çил те шăхăрать, çурçĕр енчен сивĕ илсе килет. Ешĕл çырла тĕмĕсем сарăхрĕç, хĕрлĕ-сарă çулçисем ÿкме пуçларĕç. Вăрманти йывăççем хăйсен сарă çулçисене тăкаççĕ. Колхозниксем уйри, пахчари ĕçĕсене пĕтерчĕç. Часах шурă юр çурĕ.

## 16 §. Япала ячĕсем.

(Аса илни)

Çумăр пĕлĕчĕсем çанталăка хупласа илчĕç.
Инçетре çиçĕм çиçет.
Çил-тăвăл килсе çитрĕ.
Çумăр çăвать.

Çак предложенисенчи сăмахсем пĕр-пĕринпе пĕлтерĕш енчен мĕнле çыхăнса тăнине калăр.

Çак предложенисенче хăш сăмахсем япаласен ячĕсене пĕлтерекен сăмахсем?

Тĕрлĕ япаласен (çынсен, выльăх-чĕрлĕхсен, чĕрчунсен, çутçанталăкри пулăмсен, явленисен) ячĕсене кăтартакан пуплев пайне мĕнле калаççĕ?

*103-мĕш хăнăхтару*. Çак сăвва вуласа тухăр. Япала ячĕсене тупăр.

## ÇУРКУННЕ.

Килчĕ ырă çуркунне,
килчĕ, ячĕ ăшăтса.
Хĕвел савать тĕнчене,
хĕл ыйхинчен вăратса.

Тĕттĕм вăрман чĕрĕлет,
ешĕл тумтир тăхăнать.
Çеçенхир те ешерет,
илемĕпе мухтанать.

*104-мĕш хăнăхтару*. Çак темăсем тăрăх япала ячĕсене тупăр, вĕсене çырса парăр:

1) Ĕç çыннине пĕлтерекеннисем:
*Тимĕрçĕ, çĕвĕçĕ, агроном* (малалла тупăр)...
2) Çутçанталăкри пулăмсем:
*Çиçĕм, аслати, çил* (малалла тупăр)...
3) Çӳремелли хатĕрсем:
*Урапа, çуна, велосипед* (малалла тупăр)...
4) Географири ятсем:
*Ту, çырма, сăрт* (малалла тупăр)...

*105-мĕш хăнăхтару*. Çак япала ячĕсем çумне хирĕçле пĕлтерĕшлĕ япала ячĕсем тупса çырса парăр.

*Савăнăç—хуйхă*, ир, çамрăклăх, усă, тус, сăрт, кун, çу, çутă, сывлăх, çумăр.

*106-мĕш хăнăхтару*. Çак япала ячĕсене, пĕлтерĕшне кура, çакнашкал ушкăнсене кĕртсе çырса парăр: „Чĕрчунсем", „Вăрманти йывăçсем", „Çутçанталăкри пулăмсем".

Хурама, кашкăр, çумăр, хурăн, упа, мулкач, çил, тăман, çăка, чăрăш, пулă, ĕне, çумăр, ăвăс, чăх, улатакка.

*107-мĕш хăнăхтару*. Пĕчĕк калав çырса парăр. Вăл калаври предложенисенче çак япала ячĕсем пулччăр:

а) çу, ир, хĕвел, шыв, пулăçăсем, кимĕ, сĕреке, пулă, вăлта;
ă) ачасем, вăрман, кăмпа, çырла, уçланкă, чăрăш, пакша, чĕрĕп.

## 17 §. Пайăр тата пайăр мар япала ячĕсем.

*Шупашкар*—Чăваш республикин тĕп хули.

Хаклăран та хаклă аслă **Сталин** ĕç халăхĕн çутă хĕвелĕ.

Пуян *Урал* тăвĕн арки вĕçĕпе тăрна куçĕ пек *Шуçăм* шывĕ юхать.

Паллă тунă сăмахсем кама е мĕне пĕлтернине каласа парăр. Ун пек сăмахсене яланах мĕнле саспаллипе пуçласа çыраççĕ?

Тата мĕнле сăмахсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ?

Япала ячĕсем **пайăр** тата **пайăр мар ятсем** пулаççĕ.

Япалана ытти япаласенчен уйăрса илме пайăр ят параççĕ.

Пайăр ятсем çаксем пулаççĕ.

1. Çын ячĕсем, ашшĕ ячĕсем тата хушаматсем: *Петĕр Иванĕ, Мулкаç Кĕркури, Константин Васильевич Иванов.*

2. Хула, ял ячĕсем: *Мускав, Шупашкар, Çĕрпӳ, Канаш, Етĕрне, Шăхасан.*

3. Тинĕс, юханшыв, кӳлĕ, ту ячĕсем: *Хура тинĕс, Атăл, Сăрă, Çавал, Çуткӳл, Урал.*

4. Тĕнче пайĕсен ячĕсем: *Европа, Ази, Америка, Африка, Австрали;* тĕрлĕ государство ячĕсем: *Совет Союзĕ, Польша, Венгри, Болгари, Чехословаки, Китай, Англи, Франци.*

5. Выльăх-чĕрлĕх ячĕсем: *Хураçка, Мурккă.*

Пайăр япала ячĕсене пысăк саспаллипе пуçласа çыраççĕ.

Пайăр мар ятсем пĕр пек япаласен пулаççĕ. Пайăр мар ятсене пĕчĕк саспаллипе пуçласа çыраççĕ: *ял, хула, çĕршыв, республика, ту, тинĕс, кӳлĕ, арçын, хĕрарăм, пионер, чăваш, тутар, вырăс.*

Пĕчĕк саспаллипе пуçласа çаксене çыраççĕ:

1. Çутçанталăк енĕсене: *çурçĕр, кăнтăр, хĕвелтухăç, хĕвеланăç;*

2. Çулталăк пайĕсене: *çур, кĕр, çу, хĕл;*

3. Кун ячĕсене: *тунтикун, ытларикун;*

4. Уйăх ячĕсене: *январь, февраль, март...*

***108-мĕш хăнăхтару.*** Çак текста вуласа тухăр. Пайăр ятсене каласа парăр.

Микитка Палюкĕпе Хрулкка Энтипĕ иккĕшĕ те Атăл таврашĕнчен килнĕ чăваш салтакĕсем. Вĕсем пĕр ротăрах служить тăваççĕ. Энтип вăрçăччен малтанах икĕ çула яхăн çарта пурăннă. Сталинград патĕнче çапăçас умĕн полк штабĕнче писарьте ĕçленĕ. Палюк малтанхи çулхине, Запорожье таврашĕнче çапăçнă чух, аманнă пулнă. Çурçĕр Донецĕ патĕнче ăна татах амантнă. Кунтах вăл Энтипе тĕл пулнă...

Дергачĕв ротине Палюк килни уйăхран та ытла марччĕ-ха. Ротăра ăна, ырă ятпа сума суса, Павел Никитич тесе чĕнекен пулчĕç.

***109-мĕш хăнăхтару.*** **Текста çырса илĕр, пайăр мар ятсене пĕр йĕрпе, пайăр ятсене икĕ йĕрпе аялтан туртăр.**

## ПИРĔН ÇĔРШЫВ ПУЯНЛĂХĔСЕМ.

Пирĕн çĕршыв питĕ пуян. Совет Союзĕнче — Донбасра, Кузбасра, Карагандăра, Печора шывĕ çинче, Мускавран кăнтăр енче тата ытти çĕрсенче пит нумай çĕр кăмрăкĕ кăлараççĕ. Çĕр кăмрăкĕ енчен эпир тĕнчере иккĕмĕш вырăн йышăнса тăратпăр.

Бакура, Грознăйра, Майкопра, Уралпа Атăл хушшинчи районсенче нефть нумай.

Тимĕр тăпри те пирĕн питĕ нумай. Тимĕр тăприне пирĕн Украинăра (Кривой Рог), Крымра (Керчь), Уралта, Çĕпĕрте, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче кăлараççĕ.

Çурçĕр енче тата Çĕпĕрте вĕçĕ-хĕррисĕр вăрмансем сарăлса выртаççĕ. Вăл вăрмансенче тĕрлĕ тискер кайăксем пурăнаççĕ. Кăнтăр енче Хура тинĕсрен пуçласа Кавказ сăрчĕ патне çитиччен темиçе пин çухрăм вăйлă тырă пулакан çĕрсем сарăлса выртаççĕ. Шурă тинĕсре, Балтика, Азов, Каспий тинĕсĕсенче тата Атăл, Урал, Дон, Днепр, Обь, Енисей, Амур шывĕсенче темĕн чухлĕ пулă тытаççĕ. Крымпа Кавказра чирлĕ çынсене сывалмалли санаторисем, курортсем нумай. Пирĕн çĕршыв пур енчен те пуян.

***110-мĕш хăнăхтару.*** Çак текста çырса илĕр, çĕршыв ячĕсене аялтан пĕр йĕрпе, хула ячĕсене икĕ йĕрпе туртăр.

Аслă Отечественнăй вăрçăра Совет Çарĕ нимĕç фашисчĕсенчен çичĕ столицăна хăтарчĕ: Румынире—Бухареста, Польшăра—Варшавăна, Болгарире—Софийăна, Югославире—Белграда, Венгрире—Будапешта, Австрире—Венăна, Чехословакире—Прагăна.

***111-мĕш хăнăхтару.*** Çак япала ячĕсене нумайлă хисепре лартса çырăр.

Хула, çĕршыв, ту, сăрт, пĕлĕт, халăх, курăк, улма, ял, учитель, трактор, комсомолец, статья, юрă, урапа, çул, тинĕс, утрав, кӳлĕ, çăлтăр, ялав, сăнчăр, шыв, çырма, вар.

***112-мĕш хăнăхтару.*** Çак текста вуласа тухăр. Япала ячĕсем хăш хисеприне каласа парăр.

Кулленхи пекех завод кăшкăртнă хыççăн заводра ĕç пĕтрĕ. Анчах паян рабочисем кулленхи пек килĕсене саланмарĕç. Пурте чи пысăк пӳлĕме пухăнчĕç. Ку пӳлĕм питĕ вăрăм та аслă. Маччисем кантăкран. Çав кантăк витĕр пӳлĕме кун çути ӳкет. Пӳлĕм тулли халăх. Пурте митинг пуçланасса кĕтеççĕ. Вăл митингра çĕнĕ заём çинчен калаçмалла.

Митинг пуçланчĕ. Митинга пухăннисем, çĕнĕ заём кăларнине ырласа, тăвăллăн алă çупаççĕ.

## 18 §. Япала ячĕсен предложенири вырăнĕ.

Предложенири япала ячĕсем:

1. Ят падежĕнче тăрсан, **подлежащи** пулаççĕ.
***Юр** ирĕлет. **Шыв** юхать.*
2. Ят мар падежсенче тăрсан, **дополнени** пулаççĕ.
*Эпĕ **юлташа** тĕл пултăм. Çĕр **юртан** тасалчĕ.*
3. Хăш-пĕр чухне пару, вырăн е туху падежĕнче *ăçта? ăçтан?* ыйтура тăракан япала ячĕсем **обстоятельство** пулаççĕ.

*Ачасем вăрмана кайрĕç.* ***Вăрманта*** *юр кайса пĕтмен-ха.*

4. Камăнлăх падежĕнче тăрса, тепĕр япала ятне ăнлантарса параççĕ пулсан, **определени** пулаççĕ.

***Колхозăн*** *фермисем пысăк.*

***113-мĕш хăнăхтару.*** Кашни предложенири япала ячĕсем мĕнле член пулнине каласа парăр. Япала ячĕсем мĕнле падежра, мĕнле хисепре тăнине, мĕнле сăмахпа çыхăнса тăнине кăтартăр.

1. Кимĕ çырана пырса тăрăнчĕ.
2. Пахчари çĕмĕрт çурăлчĕ.
3. Вăрман хĕрринче шыв юхса выртать.
4. Пĕр çын çулпа пырать.
5. Пӳрт алăкĕ уçă.
6. Çуна турти хуçăлчĕ.

Тĕслĕх: *Вăрманта йывăççен турачĕсем çинче кайăксем юрлаççĕ.*

| Япала ячĕсем | Мĕнле сăмахпа çыхăнса тăраççĕ? | Мĕнле ыйту лартмалла? | Хисеп | Падеж | Предложенин мĕнле членĕ? |
|---|---|---|---|---|---|
| *Вăрманта* | юрлаççĕ | ăçта? | пĕр. | в. | обст. |
| *йывăççен* | турачĕсем | мĕнсен? | нум. | к. | опр. |
| *турачĕсем çинче* | юрлаççĕ | ăçта? | нум. | — | обст. |
| *кайăксем* | юрлаççĕ | мĕнсем | нум. | ят | подл. |

***114-мĕш хăнăхтару.*** Статьяна вуласа тухăр. Предложенисенчи подлежащисене кăтартса парăр.

## ХĔЛЛЕХИ ÇАНТАЛĂК.

Шартлама сивĕ пулнă. Çурçĕр енчен вăйлă çил вĕрнĕ. Çулпа пĕчĕк çуна шуса пынă. Вичкĕн çил куçа каснă. Çул çинче пăрланса ларнă хурăнсем пулнă. Каçалапа тăман тухнă.

***115-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Предложенисенчи япала ячĕсем мĕнле член пулнине кăтартса парăр.

## ÇУРКУННЕ ÇИТЕТ.

Юр ирĕлме пуçларĕ. Хĕвелпе ăшăннă вырăнсенче ешĕл курăк шăтса тухрĕ. Кăнтăр енчен хура кураксем вĕçсе килчĕç. Вĕллери пыл хурчĕсем хĕллехи ыйхăран вăранчĕç. Çырмасенче, варсенче çурхи шыв юхма пуçларĕ. Пĕлтĕрхи йăвасене çĕнĕ хуçасем йышăнчĕç.

***116-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисенчи дополненисенчен подлежащисем тӑвӑр, подлежащисенчен дополненисем тӑвӑр.

Тӗслӗх: *Ашшӗ ывӑлне юратать. Ывӑлӗ ашшӗне юратать.*

1. Павӑл юлташне кӗтет. 2. Тилӗ тӑрнапа туслашнӑ. 3. Упа ҫынна хӑратать. 4. Петӗр Санюкпа тытмалла вылять. 5. Учитель ачасене сӑвӑ вуласа пачӗ. 6. Амӑшӗ ачине кӗнеке вуласа парать.

## 19 §. Падежсем.

Падежсен ячӗсене, вӗсен ыйтӑвӗсене аса илӗр.

Мӗншӗн кашни падежӑн пӗр хисепре икӗ ыйту пулать: *кам?* тата *мӗн? камӑн*? тата *мӗнӗн? кама?* тата *мӗне?* т. ыт. те. Нумайлӑ хисепре те вӑл ҫавах: *камсем? мӗнсем?* т. ыт. те.

Мӗнле япала ҫинчен *кам? камӑн? кама? кампа? камран?* тесе ыйтаҫҫӗ, мӗнле япаласем ҫинчен *мӗн? мӗнӗн? мӗне? мӗнпе?* тесе ыйтаҫҫӗ. Хӑш падежри япала ячӗ подлежащи пулать?

Мӗнле падеж камӑннине пӗлтерет?

Мӗнле падеж кама е мӗне панине, каланине, кӑтартнине, ӑҫта кайнине, килнине пӗлтерет?

Мӗнле падеж кампа калаҫнине, ӗҫленине, кайнине, мӗнпе ӗҫленине пӗлтерет?

Мӗнле падеж япала камра, мӗнре, ӑҫта пулнине пӗлтерет?

Мӗнле падеж япалана камран, мӗнрен илнине, ӑҫтан килнине пӗлтерет?

Пурне те тӗслӗхсемпе кӑтартса парӑр.

> Камӑнлӑх, пару, тӑву, пӗрлелӗх, вырӑн, туху падежӗсене ят мар падежсем теҫҫӗ.

***117-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Ят падежӗнче тӑракан япала ячӗсене аялтан туртӑр.

1. Урамра курӑк ешерет. 2. Вӑрманти йывӑҫсем ҫулҫисене тӑкрӗҫ. 3. Ачасем шкула ҫӳреҫҫӗ. 4. Учитель вӗсене вӗрентет. 5. Кӗркунне ҫитрӗ. 6. Колхозниксем тырӑсене пуҫтарчӗҫ. 7. Ҫӗрулми нумай пулчӗ. 8. Ҫӑка час ҫурӑлмасть. 9. Кунсем кӗскелчӗҫ. 10. Ҫӗр вӑрӑмланчӗ. 11. Хӗвел хӗртсе пӑхмасть.

***118-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Камӑнлӑх падежӗнче тӑракан япала ячӗсене аялтан туртӑр.

1. Пирӗн колхозӑн пысӑк электростанци пур. 2. Ку колхозӑн ӗне кӗтӗвӗ пысӑк. 3. Ачасен сумкинче тӗрлӗ кӗнекесем пур. 4. Колхозниксен ҫурчӗсенче электричество ҫутатать. 5. Юлташӑн ашшӗ хулана кайнӑ. 6. Кӳршӗсен ывӑлӗ ҫартан таврӑнчӗ.

*119-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Пару падежӗнче тӑракан япала ячӗсене пӗр йӗрпе туртӑр, тӑву падежӗнчисене—икӗ йӗрпе туртӑр.

1. Эпӗ хам кӗнекене юлташа патӑм. 2. Ачасем паян ирех вӑрмана кайрӗҫ. 3. Эпир тӑхӑр сехете шкула каятпӑр, апата киле таврӑнатпӑр. 4. Сурӑхсене кӗтӗве хӑваланӑ. 5. Карчӑк урама тухса ларнӑ. 6. Вӗсем пӗр пӗчӗк яла ҫитрӗҫ.

*120-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр, пӗрлелӗх падежӗнче тӑракан япала ячӗсене аялтан туртӑр.

1. Эпир урамра юрпа перкелешрӗмӗр. 2. Пуртӑпа вутӑ ҫураҫҫӗ. 3. Ачасем витрепе шыв кӳреҫҫӗ. 4. Кӗвентепе шыв кӳме ҫӑмӑл. 5. Пурпа ҫыраҫҫӗ, кӑмака шуратаҫҫӗ. 6. Тракторпа суха сухалаҫҫӗ, авӑн ҫапаҫҫӗ. 7. Вӑлтапа пулӑ тытаҫҫӗ. 8. Ҫӑкӑра ҫӗҫӗпе касаҫҫӗ.

*121-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене ҫырса илӗр. Вырӑн падежӗнче тӑракан япала ячӗсене аялтан туртӑр.

1. Вӑрманта тӗрлӗ йывӑҫсем ӳсеҫҫӗ. 2. Уҫланкӑра ачасен сасси илтӗнет. 3. Ҫырмара хурсем ҫӳреҫҫӗ. 4. Пирӗн класс вӗренӳ тӗлӗшпе пӗрремӗш вырӑнта тӑрать. 5. Пирӗн колхозра пурнӑҫ питӗ савӑнӑҫлӑ. 6. Кайӑк-кӗшӗксем йӑвара лараҫҫӗ. 7. Петӗрпе Иван урамра лашалла выляҫҫӗ. 8. Хӗветӗр пӳртре ларать.

*122-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене ҫырса илӗр. Туху падежӗнче тӑракан япала ячӗсене аялтан туртӑр.

1. Ялтан виҫ ҫухрӑмра пысӑк ҫырма пур. 2. Эпӗ шӑллӑмран лайӑхрах ҫыратӑп. 3. Тиртен кӗрӗк ҫӗлетеҫҫӗ. 4. Пуртта хурҫӑран тунӑ. 5. Юман вӗренерен ҫирӗпрех. 6. Иван хуларан таврӑннӑ.

*123-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна вуласа тухӑр. Япала ячӗсем мӗнле падежра, мӗнле хисепре тӑнине кӑтартса парӑр.

## ТАНКИСТ-ГЕРОЙ.

Радио савӑнӑҫлӑ хыпар пӗлтерчӗ. Аллӑ тӑватӑ мухтавлӑ салтака Совет Союзӗн Геройӗ ятне панӑ. Ҫав мухтавлӑ салтаксен ячӗсем хушшинче чӑваш халӑхӗн чаплӑ ывӑлӗн, Коноваловӑн ячӗ тухрӗ.

Нимӗҫсем пӗр вырӑна танксем тата тӗрлӗ вӑрҫӑ хатӗрӗсем пухнӑ. Вӗсем пирӗн чаҫсене хӗснӗ. Совет танкисчӗсемпе нимӗҫсем хушшинче питех те хаяр ҫапӑҫу пуҫланнӑ. Ҫапӑҫу хӗрсе пынӑ вӑхӑтра фашистсем Коновалов юлташӑн танкне вут тивертнӗ. Коновалов лейтенант хӑй экипажне ҫапла хавхалантарнӑ: „Юлашки вӑй пӗтиччен, чӗремӗрсем тапма чарӑниччен ҫапӑҫӑпӑр, тӑвансем!..“

Коновалов тӑшман танкӗсен ҫулне пӳлсе хунӑ. Вӑл тӑшмана пӗр утӑм та малалла яман.

*124-мĕш хăнăхтару*. Çак статьяна вуласа тухăр. Япала ячĕсем мĕнле падежра, мĕнле хисепре тăнине каласа парăр.

Хĕвел хĕртет. Сайра-хутран çумăрсем те пулкалаççĕ. Колхоз хирĕсенче машинăпа акнă тырăсем пит тикĕс шăтрĕç. Çăра, хура-симĕс сăнлă калчасем пĕр пек тикĕс хăпараççĕ. Ниçта та çум курăкĕ çук. Колхоз калчи шыв пек тап-таса, пĕр тикĕс курăнать.

Вăхăт хулленех шăвать. Пусăра тырăсем çитĕнеççĕ. Колхоза тырă выракан машина илсе килсе лартрĕç. Ăна майлаштарчĕç, унтан колхозниксем тырă вырма пуçларĕç.

Хуларан тата авăн çапакан машина илсе килчĕç. Вырса купаланă çĕмелсене, суратсене пĕр çĕре турттарса машинăпа çапсах пыраççĕ. Колхозниксем пĕр виçĕ эрне хушшинче тырра вырса, çапса пуçтарчĕç. Çийĕнчех агрономпа шкул ачисем колхоз правленине тырă тухăçне шута илме пулăшрĕç.

(*М. Трубина*)

*125-мĕш хăнăхтару*. Çак предложенисене çырса илĕр. Кашни япала ятне мĕнле падежра, мĕнле хисепре тăнине саспаллисемпе паллă тăвăр.

Тĕслĕх: *Ачасем* (ят. п. н. х.) *улăхра* (в. п. п. х.) *кĕтӳ* (тв. п. п. х.) *кĕтеççĕ*.

1. Колхозниксем улăхра утă пуçтараççĕ. 2. Эпĕ витрепе шыв ăсса кĕтĕм. 3. Пилĕк сехетре ялтан тухрăм. 4. Вăрманта ачасем тĕрлĕ çырла пуçтараççĕ. 5. Иван хулана ĕçлеме кайрĕ. 6. Колхозниксем çуракине вăхăтра туса пĕтерчĕç.

## 20 §. Япала ячĕсем вĕçленни.

(Асаилни)

Япала ячĕсем падеж тăрăх улшăннине **вĕçленни** теççĕ. Чăваш чĕлхинче пур япала ячĕсем те пĕр пек вĕçленеççĕ. Анчах уйрăмлăхсем те кунта е сăмах тĕпĕнчен, е сăпат аффиксне йышăннинчен пулма пултараççĕ.

Япала ячĕсем, тĕпне кура, пилĕк ушкăна пайланаççĕ.

Пĕрремĕш ушкăна хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем кĕреççĕ: курăк, вăрман, кĕл.

Иккĕмĕш ушкăна *а-е* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем кĕреççĕ: лаша, ĕне, ура.

Виççĕмĕш ушкăна *у-ӳ* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем кĕреççĕ: çыру, кĕтӳ.

Тăваттăмĕш ушкăна *ă-ĕ* уçă сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем кĕреççĕ: тулă, сĕлĕ.

Пиллĕкмĕш ушкăна *и* уçă сасăпа пĕтекен япала ячĕсем кĕреççĕ: шăши, çерçи.

Кунсăр пуçне тата урăх чĕлхерен кĕнĕ сăмахсем мĕнле вĕçленнине асăрхас пулать.

***126-мӗш хӑнӑхтару.*** ***Курӑк, вӑрман, ҫӗлӗк, кӗрӗк, кӗмӗл*** ялала ячӗсене вӗҫлесе парӑр.

***127-мӗш хӑнӑхтару.*** Предложенисене ҫырса илӗр. Скобка умӗнчи сӑмах ҫумне *ра-ре* е *та-те, ран-рен* е *тан-тен* аффикссем хушӑр.

1. Микулай ҫенӗк (рен, тен) куркапа шыв ӑсса кӗчӗ. 2. Ҫӗрлехи тӗттӗмлӗхпе шӑплӑх (ра, та) пӗр чечексен шӑрши ҫеҫ сисӗнет. 3. Халь васкамалли ҫук ӗнтӗ, халь—кил (ре, те).
4. Хӑш-пӗр ҫынсем вӑрман (ран, тан) кӑмпа татса килеҫҫӗ. 5. Вӑл ҫуртӑн аялти хутне кирпӗч (рен, тен) тунӑ. 6. Ял (ран, тан) виҫ километр (ра, та) пысӑк шыв юхса выртать. 7. Вӗсем ку вырӑн (ран, тан) пӗлтӗрех куҫса кайнӑ.

***128-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак япала ячӗсене илсе, вӗсемпе 8 предложени тӑвӑр. Вӑл предложенисенче япала ячӗсем ят мар падежсенче тӑччӑр.

Хурӑн, тумлам, вӑй, пӳлӗм, кашкӑр, вӗрен, курак, йывӑҫ.

***129-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак япала ячӗсене вӗҫлесе парӑр.

Купа, чӗре, кӗпе, ҫуна, сӑпса, йӗлме.

***130-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак япала ячӗсене илсе, вӗсемпе предложенисем тӑвӑр. Вӑл предложенисенче япала ячӗсем тӗрлӗ падежра тӑччӑр.

Лаша, тиха, пахча, ҫӳҫе, кӗнеке, сава, сӳре, кӑмака.

***131-мӗш хӑнӑхтару.*** ***У***-па тата ***ӳ***-пе пӗтекен ***касу, кӗтӳ*** япала ячӗсене вӗҫлесе парӑр.

***132-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак япала ячӗсене илсе, вӗсемпе предложенисем тӑвӑр. Вӑл предложенисенче япала ячӗсем тӗрлӗ падежра тӑччӑр.

Пӑру, кӗтӳ, калаҫу, ҫӗнтерӳ, вӗренӳ, йышӑну, чӗнӳ, пӗлӳ.

***133-мӗш хӑнӑхтару.*** ***Тырӑ, тӗрӗ, кӳлӗ, вутӑ, ҫӗҫӗ*** япала ячӗсене вӗҫлесе парӑр.

***134-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак япала ячӗсене илсе, вӗсемпе предложенисем тӑвӑр. Вӑл предложенисенче япала ячӗсем тӗрлӗ падежра тӑччӑр.

Сулӑ, ҫӗрӗ, тылӑ, тулӑ, чӗлӗ, пӗкӗ, ташӑ.

***135-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак япала ячӗсене вӗҫлесе парӑр.

Пӑри, шӑши, пӑши, ҫерҫи, тӑри.

## Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ япала ячĕсем вĕçленни.

### 1. Хупă сасăпа тата çемçетекен паллăпа *(ь)* пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

(*директор, учитель*)

Пĕрреллĕ хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | директор | учитель |
| К. | директор-ăн | учител-ĕн |
| П. | директор-а | учител-е |
| Тв. | директор-а<br>директор | учител-е<br>учитель |
| Пр. | директор-па | учитель-пе |
| В. | директор-та | учитель-те |
| Тх. | директор-тан | учитель-тен |

Нумайлă хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | директор-сем | учительсем |
| К. | директор-сен-ĕн | учитель-сен-ĕн |
| П. | директор-сен-е | учитель-сен-е |
| Тв. | директор-сен-е<br>директор-сем | учитель-сен-е<br>учитель-сем |
| Пр. | директор-сем-пе | учитель-сем-пе |
| В. | директор-сен-че | учитель-сен-че |
| Тх. | директор-сен-чен | учитель-сен-чен |

### 2. *И (ия), ея*-па пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.

(*парти, аллея*)

Пĕрреллĕ хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | парти | аллея |
| К. | парти-н | аллейă-н |
| П. | парти-е | аллейă-на |
| Тв. | парти-е<br>парти | аллейă-на<br>аллея |
| Пр. | парти-пе | аллейă-па |
| В. | парти-ре | аллейă-ра |
| Тх. | парти-рен | аллейă-ран |

Нумайлă хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | парти-сем | аллейă-сем |
| К. | парти-сен-ĕн | аллейă-сен-ĕн |
| П. | парти-сен-е | аллейă-сен-е |
| Тв. | парти-сен-е<br>парти-сем | аллейă-сен-е<br>аллейă-сем |
| Пр. | парти-сем-пе | аллейă-сем-пе |
| В. | парти-сен-че | аллейă-сен-че |
| Тх. | парти-сен-чен | аллейă-сен-чен |

### 3. *А, о, я*-па пётекен япала ячӗсем вӗҫленни.
(*парта, общество, кухня*)

Пӗрреллӗ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | парта | общество | кухня |
| К. | партă-н | обществă-н | кухньă-н |
| П. | партă-на | обществă-на | кухньă-на |
| Тв. | партă-на<br>парта | обществă-на<br>общество | кухньă-на<br>кухня |
| Пр. | партă-па | обществă-па | кухньă-па |
| В. | партă-ра | обществă-ра | кухньă-ра |
| Тх. | партă-ран | обществă-ран | кухньă-ран |

Нумайлă хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | партă-сем | обществă-сем | кухньă-сем |
| К. | партă-сен-ӗн | обществă-сен-ӗн | кухньă-сен-ӗн |
| П. | партă-сен-е | обществă-сен-е | кухньă-сен-е |
| Тв. | партă-сен-е<br>партă-сем | обществă-сен-е<br>обществă-сем | кухньă-сен-е<br>кухньă-сем |
| Пр. | партă-сем-пе | обществă-сем-пе | кухньă-сем-пе |
| В. | партă-сен-че | обществă-сен-че | кухньă-сен-че |
| Тх. | партă-сен-чен | обществă-сен-чен | кухньă-сен-чен |

**Асăрхаттарни:** *О*-па пӗтекен япала ячӗсен ударенийӗ сăмах вӗҫӗнче, *о* сасă ҫинче пулсан, ҫав *о* пур аффикслă формăсенче ҫаплипех юлать: кино—кинона, кинопа, кинора, киноран, киносем т. ыт. те.

### 4. *Ăй, ой*-па пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни.
(*дежурнăй, запятой*)

Пӗрреллӗ хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | дежурнăй | запятой |
| К. | дежурнăй-ăн | запятой-ăн |
| П. | дежурнă-я | запято-я |
| Тв. | дежурнă-я<br>дежурнăй | запято-я<br>запятой |
| Пр. | дежурнăй-па | запятой-па |
| В. | дежурнăй-ра | запятой-ра |
| Тх. | дежурнăй-ран | запятой-ран |

Нумайлă хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | дежурнăй-сем | запятой-сем |
| К. | дежурнăй-сен-ӗн | запятой-сен-ӗн |
| П. | дежурнăй-сен-е | запятой-сен-е |
| Тв. | дежурнăй-сен-е<br>дежурнăй-сем | запятой-сен-е<br>запятой-сем |
| Пр. | дежурнăй-сем-пе | запятой-сем-пе |
| В. | дежурнăй-сен-че | запятой-сен-че |
| Тх. | дежурнăй-сен-чен | запятой-сен-чен |

### 5. *Сть, сь*-пе пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни.

(*область, перепись*)

Пӗрреллӗ хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | область | перепись |
| К. | облаҫ-ăн | перепиҫ-ӗн |
| П. | облаҫ-а | перепиҫ-е |
| Тв. | облаҫ-а<br>область | перепиҫ-е<br>перепись |
| Пр. | облаҫ-па | перепиҫ-пе |
| В. | облаҫ-ра | перепиҫ-ре |
| Тх. | облаҫ-ран | перепиҫ-рен |

Нумайлă хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | облаҫ-сем | перепиҫ-сем |
| К. | облаҫ-сен-ӗн | перепиҫ-сен-ӗн |
| П. | облаҫ-сен-е | перепиҫ-сен-е |
| Тв. | облаҫ-сен-е<br>облаҫ-сем | перепиҫ-сен-е<br>перепиҫ-сем |
| Пр. | облаҫ-сем-пе | перепиҫ-сем-пе |
| В. | облаҫ-сен-че | перепиҫ-сен-че |
| Тх. | облаҫ-сен-чен | перепиҫ-сен-чен |

### 6. Икӗ пӗр пек хупă сасăпа (саспаллипе) пӗтекен япала ячӗсем вӗҫленни.

(*класс*)

| | Пӗрреллӗ хисеп | Нумайлă хисеп |
|---|---|---|
| Ят | класс | клас-сем |
| К. | клас-ăн | клас-сен-ӗн |
| П. | клас-а | клас-сен-е |
| Тв. | клас-а<br>класс | клас-сен-е<br>клас-сем |
| Пр. | клас-па | клас-сем-пе |
| В. | клас-ра | клас-сен-че |
| Тх. | клас-ран | клас-сен-чен |

Вырăс чӗлхинчен кӗнӗ япала ячӗсем ҫакăн пек вӗҫленеҫҫӗ:

1. Хупă сасăсемпе пӗтекен япала ячӗсем пур падежра та хăйсен тӗпне улăштармаҫҫӗ: *сад, садăн, сада, садпа* т. ыт. те.

2. ***А, о*** уҫă сасăсемпе пӗтекен япала ячӗсем ят паде-

жӗнче çаплипех пулаççӗ, ытти аффикслӑ падеж формисенче, вӑл сасӑсем çине ударени ӳкмест пулсан, вӗсене *ӑ-ӗ* сасӑсемпе улӑштараççӗ: *сценӑна, обществӑна, сценӑран, обществӑран;* анчах—*кино—кинон, кинона* т. ыт. те.

3. ***Ия***-па пӗтекен япала ячӗсем, чӑваш чӗлхине кусçан, пур падежра та ***я*** саспаллине кӑларса пӑрахаççӗ: *Болгария—Болгари, Болгарин; партия—парти, партин, партие* т. ыт. те.

Асӑрхаттарни. **Россия** ят падеж форминче çаплипех пулать, ытти аффикслӑ падеж формисенче çакӑн пек вӗçленет: *Российӑн, Российӑна, Российӑпа, Российӑра, Российӑран.*

4. ***Ея***-па пӗтекен япала ячӗсем ят падежӗ форминче çаплипех пулаççӗ, ытти аффикслӑ падеж формисенче ***я*** вырӑнне ***йӑ*** пулать: *аллея—аллейӑн, аллейӑна* т. ыт. те.

5. ***Я***-па пӗтекен япала ячӗсем ят падежӗ форминче çаплипех пулаççӗ, ытти аффикслӑ падеж формисенче ***я*** вырӑнне ***ьӑ*** пулать: *кухня—кухньӑна* т. ыт. те.

6. ***Ый, ой, оя, ое***-пе пӗтекен япала ячӗсем чӑваш чӗлхине кусçӑ чух пур падежра та ***ӑй*** е ***ой*** йышӑнаççӗ: *вожатый—вожатӑй, запятая—запятой, сказуемое—сказуемӑй.*

7. ***Сть, сь***-пе пӗтекен япала ячӗсем ят падежӗ форминче çаплипех пулаççӗ, ытти аффикслӑ падеж формисенче вӗсен вырӑнне ***ç*** саспалли пулать: *власть—влаçӑн, влаçа* т. ыт. те.

8. Икӗ пӗр пек хупӑ сасӑпа пӗтекен япала ячӗсем ят падежӗ форминче çаплипех пулаççӗ, ытти аффикслӑ падеж формисенче пӗр хупӑ сасӑ анчах пулать: *металл—металӑн, метала* т. ыт. те.

***136-мӗш хӑнӑхтару.*** **Статьяна вуласа тухӑр. Статьяри вырӑс чӗлхинчен кӗнӗ япала ячӗсене тупӑр, вӗсем мӗнле улшӑннине асӑрхӑр.**

## ФИЛИПП АХАЕВ.

Пирӗн земляк комсомолец Филипп Ахаев Днепр леш енче наттӑррӑн çапӑçнӑ.

Унӑн группине çав тери ответлӑ вырӑна засадӑна лартнӑ. Унтан инçех те мар батарейӑри ытти тупӑсем вырнаçнӑ.

Кӗçех нимӗçсен малтанхи вунӑ танкӗ батарея патне хӑрушшӑн кӗрлесе пынӑ.

Батарея командирӗ приказ панӑ:

„Орудисен пурин те пеме чарӑнмалла, хамӑр ӑçта вырнаçнине тата пирӗн миçе оруди иккенне нимӗçсене пӗлтермелле мар. Çапӑçава Ахаев старший сержант пуçлать".

Танксем çывхарсах пынӑ. Ахаев вӗсем çывӑха çитиччен чӑтӑмлӑн кӗтнӗ.

Нимĕç танкĕсем виççĕмĕш хут атакăна кĕнĕ. Виçĕ хутĕнче те пысăк çухату тÿснĕ. Пирĕн боецсем хастаррăн та хĕрÿллĕн çапăçнă.

Вĕсем хăйсем йышăннă вырăнта талăкĕпех тăнă. Ахаев расчĕчĕ нимĕçсен ултă танкне аркатса тăкнă. Вăл çав çапăçура уйрăммăнах çирĕп те чăтăмлă пулнă.

Пирĕн мухтавлă земляка—Ахаев юлташа ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ Совет Союзĕн Геройĕ ятне панă.

*137-мĕш хăнăхтару*. 136-мĕш хăнăхтарури пекех тăвăр.

## ÇУРÇĔР ПОЛЮСĔНЧЕ.

Темиçе çĕр çул хушши çынсем, Çурçĕр полюсне çитсе, унăн пуянлăхне тĕпчесшĕн пулнă. Нумай вĕреннĕ çынсемпе хăюллисем уншăн нумай тăрăшнă, экспедицие те кайса пăхнă. Çуран та, йытăсемпе те, карапсемпе те, дирижабльпе те полюса çитме пăхнă, анчах вĕсем полюса çитеймен, е хăйсем те çул çинчех вилнĕ. Çурçĕр полюсĕнче куçса çÿрекен пăрсем пулнине çеç пĕлме пултарнă вĕсем ун чухне.

Çурçĕр полюсне çитсе, унта нумай вăхăт пурăнса, ăна тĕпчеме Совет правительстви куçса çÿрекен пăр çине „Çурçĕр полюсĕ“ тĕпчев станци тăвас задача лартнă. Çав задачăна пурнăçа кĕртнĕ.

## 21 §. Япала ячĕсем камăнлăх аффиксĕсене йышăнни.

*138-мĕш хăнăхтару*. Çак сăвва вуласа тухăр. Паллă тунă япала ячĕсен пĕлтерĕшĕсене калăр.

Тахçан, ачаран ман **чĕремçĕм** çунатчĕ,
çунатчĕ текех вăл хĕрÿ шухăшпа:
„Тăван халăх ячĕ ÿснине курасчĕ...
Ĕçлесчĕ ман уншăн, пĕр уншăн **вăйăмпа**“...
Чунтан кĕтни çитрĕ, ĕçлетĕп халь уншăн,
ĕçлетĕп **чĕлхем** хăватне курма...
Умри çулăм уçă, хĕвеллĕ çĕн куншăн
ĕçле **чĕлхÿне** малалла яма!
Çапла ĕçлесе эп е мухтав илесшĕн?
Çук! Урă **пуçăм** мухтав йышăнмасть!
Е хам **ятăма** хиселлĕх кÿресшĕн?
Йăваш **кăмăлăм** хисеп те ыйтмасть.
Тăван **чĕлхем** ĕлĕк таптаннăшăнах эп
çĕклесшĕн ăна пăртак та пулин.
„Пĕтет вăл?“—текенсем хурланăшăнах, **тек**
хăват кĕтĕр, тетĕп чăваш **чĕлхине...**

(*С. В. Элкер*)

Чăваш чĕлхинче пĕр сăмахпах япала камăннине пĕлтерме пулать. Япала камăннине пĕлтерме япала ячĕн тĕпĕ çумне камăнлăх аффиксĕсене хушаççĕ.

Камăнлăх аффиксĕсем çаксем: ***ăм-ĕм-м***—1-мĕш сăпат аффиксĕсем, манăннине пĕлтереççĕ; ***у-ӳ***—2-мĕш сăпат аффиксĕсем, санăннине пĕлтереççĕ; ***ĕ, и***—3-мĕш сăпат аффиксĕсем, унăннине пĕлтереççĕ.

3-мĕш сăпат аффиксĕ ***ĕ*** е ***и*** пулать. Япала ячĕ хупă сасăпа е ***у-ӳ*** тата ***и*** уçă сасăсемпе пĕтет пулсан, ***ĕ*** аффикс йышăнать; ***а-е, ă-ĕ*** уçă сасăсемпе пĕтет пулсан, ***и*** аффикс йышăнать.

Тĕслĕх: *Урам—урамĕ, ура—ури, йĕке—йĕки, вутă—вутти, сĕлĕ—сĕлли, çыру—çырăвĕ, кĕтӳ—кĕтĕвĕ, çерçи—çерçийĕ.*

***139-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Сăпат аффиксĕсене йышăннă япала ячĕсене аялтан туртăр. Миçемĕш сăпат аффиксне йышăннине асăрхăр.

1. Нимĕç вăрă-хурахĕсене хаярран таварнă вăл; пирĕн тăван çĕршывăмăра ирсĕррĕн тапăннăшăн, илемлĕ хулисене, улмуççиллĕ ялĕсене çунтарнăшăн, тата асатте-асаннесене, кукаçи-кукамайсене вĕлернĕшĕн, вĕт-шак ачасене вутта тытса пăрахнăшăн таварнă. 2. Декабрь уйăхĕнче радио пирĕн Совет Çарĕн пысăк çĕнтерĕвĕсем çинчен, нимĕççене Мускав патĕнче çапса аркатни çинчен пĕлтерчĕ. 3. Хамăн çывăх юлташăма тахçантанпах кĕтсе тăратăп. 4. Унăн пиччĕшĕ кăçал салтакран таврăнчĕ. 5. Тав сана, Сталин, аслă тусăмăр! Эс çăлтăн пиреасапран. (*Уйăп М.*)

***140-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăртан пилĕк предложени тупса çырăр. Вăл предложенисенче камăнлăх аффиксĕсене йышăннă япала ячĕсем пулччăр.

## Камăнлăх аффиксĕсене йышăннă япала ячĕсем вĕçленни.

### Пĕрремĕш сăпат аффиксне йышăннă япала ячĕсем.

П ĕ р р е л л ĕ х и с е н

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | куç-ăм | ĕç-ĕм | çырла-м |
| К. | куç-ăм-ăн | ĕç-ĕм-ĕн | çырла-м-ăн |
| П. | куç-ăм-а | ĕç-ĕм-е | çырла-м-а |
| Тв. | куç-ăм-а | ĕç-ĕм-е | çырла-м-а |
| Пр. | куç-ăм-па | ĕç-ĕм-пе | çырла-м-па |
| В. | куç-ăм-ра | ĕç-ĕм-ре | çырла-м-ра |
| Тх. | куç-ăм-ран | ĕç-ĕм-рен | çырла-м-ран |

Нумайлă хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | куç-ăм-сем | ĕç-ĕм-сем | çырла-м-сем |
| К. | куç-ăм-сен-ĕн | ĕç-ĕм-сен-ĕн | çырла-м-сен-ĕн |
| П. | куç-ăм-сен-е | ĕç-ĕм-сен-е | çырла-м-сен-е |
| Тв. | куç-ăм-сен-е | ĕç-ĕм-сен-е | çырла-м-сен-е |
| Пр. | куç-ăм-сем-пе | ĕç-ĕм-сем-пе | çырла-м-сем-пе |
| В. | куç-ăм-сен-че | ĕç-ĕм-сен-че | çырла-м-сен-че |
| Тх. | куç-ăм-сен-чен | ĕç-ĕм-сен-чен | çырла-м-сен-чен |

***141-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Пĕрремĕш сăпат аффиксне йышăннă япала ячĕсем мĕнле падежра тăнине кăтартса парăр.

1. Эпĕ хам шăллăмсемпе йăмăкăмсене лайăх пăхатăп. 2. Тăванăмсем, итлĕр чăн сăмахăма: эпĕ сире нимĕç хурахĕсем тунă тискер ĕçсем çинчен каласа кăтартăп. 3. Ну, ывăлăм, паттăр пул, шиксĕр пул, ăмăрткайăк пек çапăç. 4. Эпĕ пĕтĕм чунăмран савăнса юрларăм. 5. „Эй, сарă хĕвелĕм, ăс-тăн пар мана!"— терĕ Липа. 6. Аслă çĕрĕмĕр—аннемĕр—вăл хамăрăн ĕмĕр-ĕмĕр. 7. Çĕршывшăн, тăванăм, пур вăйна эсĕ хыв, вăл пулĕ чи пуян та тулăх çĕршыв.

## Иккĕмĕш сăпат аффиксне йышăннă япала ячĕсем.

Пĕрреллĕ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | куç-у | ĕç-ӳ | çырл-у |
| К. | куç-у-н | ĕç-ӳ-н | çырл-у-н |
| П. | куç-на | ĕç-не | çырл-у-на |
| Тв. | куç-на | ĕç-не | çырл-у-на |
| Пр. | куç-у-па | ĕç-ӳ-пе | çырл-у-па |
| В. | куç-у-н-та | ĕç-ӳ-н-те | çырл-у-н-та |
| Тх. | куç-у-н-тан | ĕç-ӳ-н-тен | çырл-у-н-тан |

Нумайлă хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | куç-у-сем | ĕç-ӳ-сем | çырл-у-сем |
| К. | куç-у-сен-ĕн | ĕç-ӳ-сен-ĕн | çырл-у-сен-ĕн |
| П. | куç-у-сен-е | ĕç-ӳ-сен-е | çырл-у-сен-е |
| Тв. | куç-у-сен-е | ĕç-ӳ-сен-е | çырл-у-сен-е |
| Пр. | куç-у-сем-пе | ĕç-ӳ-сем-пе | çырл-у-сем-пе |
| В. | куç-у-сен-че | ĕç-ӳ-сен-че | çырл-у-сен-че |
| Тх. | куç-у-сен-чен | ĕç-ӳ-сен-чен | çырл-у-сен-чен |

***142-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Иккĕмĕш сăпат аффиксне йышăннă япала ячĕсем мĕнле падежра тăнине кăтартса парăр.

1. Аллуна кирек хăçан та таса тыт. 2. Юлташупа килĕштерсе пурăн. 3. Эсĕ паян йăмăкупа ăçта кайрăн? 4. Аçупа

аннӳне хисепле, вĕсем каланине итле. 5. Пӳрте кĕрсен, уруна салт, пылчăкла урупа урайне варалама пултаратăн. 6. Кĕнекӳн хуплашкине таса тыт, таса мар алăпа вĕренме ан лар. 7. „Юрĕ, атте, сан сăмахусене манмăп эпĕ“,—терĕ ывăлĕ.

### Виççĕмĕш сăпат аффиксне йышăннă япала ячĕсем.

Пĕрреллĕ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | куç-ĕ | ĕç-ĕ | çырл-и |
| К. | куç-ĕн | ĕç-ĕ-н | çырл-и-н |
| П. | куç-не | ĕç-не | çырл-и-не |
| Тв. | куç-не | ĕç-не | çырл-и-не |
| Пр. | куç-ĕ-пе | ĕç-ĕ-пе | çырл-и-пе |
| В. | куç-ĕ-н-че | ĕç-ĕ-н-че | çырл-и-н-че |
| Тх. | куç-ĕ-н-чен | ĕç-ĕ-н-чен | çырл-и-н-чен |

Нумайлă хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | куç-ĕ-сем | ĕç-ĕ-сем | çырл-и-сем |
| К. | куç-ĕ-сен-ĕн | ĕç-ĕ-сен-ĕн | çырл-и-сен-ĕн |
| П. | куç-ĕ-сен-е | ĕç-ĕ-сен-е | çырл-и-сен-е |
| Тв. | куç-ĕ-сен-е | ĕç-ĕ-сен-е | çырл-и-сен-е |
| Пр. | куç-ĕ-сем-пе | ĕç-ĕ-сем-пе | çырл-и-сем-пе |
| В. | куç-ĕ-сен-че | ĕç-ĕ-сен-че | çырл-и-сен-че |
| Тх. | куç-ĕ-сен-чен | ĕç-ĕ-сен-чен | çырл-и-сен-чен |

***143-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Виççĕмĕш сăпат аффиксне йышăннă япала ячĕсем мĕнле падежра тăнине кăтартса парăр.

1. Никита Степанов хăй ирĕкĕпе çара кайнă. 2. Унăн кăкăрне халĕ Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ илемлетсе тăрать. 3. Чăваш халăхĕн мухтавлă хĕрне, парти членне Гайкина юлташа Совет правительстви пысăк хисеп турĕ. Ăна Ленин орденĕпе Хĕрлĕ Çăлтăр орденне панă. 4. Унăн йăлтăркка куçĕсем стена çумĕнчи фотоӳкерчĕк çине юратса, хисеплесе пăхрĕç. 5. Колхозниксем тырра хăйсен пĕр амбарне, çĕрулмине тепĕр амбарне пушатрĕç. 6. Мичурин пахчинче персик, лимон, абрикос ӳсетчĕ. 7. Калаçса пынă вăхăтра вĕсем хыр вăрманне пырса кĕчĕç.

***Ă-ĕ*** сасăпа пĕтекен япала ячĕсем, камăнлăх аффиксĕсене йышăнсан, ***ă-ĕ*** сасăсем умĕнчи хупă сасса вăрăмлатаççĕ; çырнă чухне икĕ пĕр пек саспалли çырмалла.

Тĕслĕх: *вутă—вуттăм, вутту, вутти; алă—аллăм, аллу, алли; çĕрĕ—çĕррĕн, çĕррӳ, çĕрри.*

Асăрхаттарни: ***Ă-ĕ*** сасăпа пĕтекен япала ячĕн ***ă-ĕ*** умĕнче икĕ хупă сасă пулсан, камăнлăх аффиксне йышăнсан та, çав хупă сасă вăрăмланмасть.

Тĕслĕх: *аркă—аркăм, арку, арки; вăлчă—вăлчăм, вăлчу, вăлчи; хурçă—хурçăм, хурçу, хурçи.*

***144-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене çырса илĕр. Пуçламăш формăра кăтартнă япала ячĕсене, кирлĕ сăпат аффиксĕ хушса, кирлĕ падежра лартăр.**

1. Эпĕ хам (алă) ыраттартăм. 2. Эсĕ ху (пӳлĕм) таса тыт. 3. Петĕр (йытă) сунара çӳрет. 4. Колхоз (тырă-пулă) вăхăтра пуçтарчĕ. 5. Çу шăратнă евĕрлĕ шăрантаратăп (сăвă), савăнтаратăп (сасă). 6. Эсĕ хăвăн (кĕнеке) ан варала. 7. Антунпа Микула (лашасем, çаран) ярса (кил, апат) килчĕç.

Япала ячĕсем *т, ть, д, дь* сасăсемпе пĕтеççĕ пулсан, виççĕмĕш сăпат аффиксне йышăнсан, вĕсен вĕçĕнчи *т, ть, д, дь* сасăсем ят, камăнлăх, пĕрлелĕх падежĕсенче тата нумайлă хисепре *ч* сасăпа ылмашаççĕ.

Тĕслĕх: *апат—апачĕ, тетрадь—тетрачĕ, кровать—кровачĕ, съезд—съезчĕ.*

Пĕрреллĕ хисепре пару, тăву, вырăн тата туху падежĕсенче *т, ть, д, дь* сасăсем *ч* сасăпа ылмашмаççĕ.

Тĕслĕх: *Апат—апатне, апатĕнче, апатĕнчен; тетрадь—тетрадьне, тетрадĕнче, тетрадĕнчен; кровать—кроватьне, кроватĕнче, кроватĕнчен; съезд—съездне, съездĕнче, съездĕнчен.*

**Виççĕмĕш сăпат аффиксĕсене йышăннă *т, ть, д, дь* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем вĕçленни.**

(*ят, кровать, сад, площадь*)

Пĕрреллĕ хисеп

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ят | яч-ĕ | кровач-ĕ | сач-ĕ | площач-ĕ |
| К. | яч-ĕн | кровач-ĕн | сач-ĕн | площач-ĕн |
| П. | ят-не | кровать-не | сад-не | площадь-не |
| Тв. | ят-не | кровать-не | сад-не | площадь-не |
| Пр. | яч-ĕ-пе | кровач-ĕ-пе | сач-ĕ-пе | площач-ĕ-пе |
| В. | ят-ĕн-че | кроват-ĕн-че | сад-ĕн-че | площад-ĕн-че |
| Тх. | ят-ĕн-чен | кроват-ĕн-чен | сад-ĕн-чен | площад-ĕн-чен |

Нумайлă хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | яч-ĕ-сем | кровач-ĕ-сем |
| К. | яч-ĕ-сен-ĕн | кровач-ĕ-сен-ĕн |
| П. | яч-ĕ-сен-е | кровач-ĕ-сен-е |
| Тв. | яч-ĕ-сен-е | кровач-ĕ-сен-е |
| Пр. | яч-ĕ-сем-пе | кровач-ĕ-сем-пе |
| В. | яч-ĕ-сен-че | кровач-ĕ-сен-че |
| Тх. | яч-ĕ-сен-чен | кровач-ĕ-сен-чен |

| | | |
|---|---|---|
| Ят | сач-ĕ-сем | площач-ĕ-сем |
| К. | сач-ĕ-сен-ĕн | площач-ĕ-сен-ĕн |
| П. | сач-ĕ-сен-е | площач-ĕ-сен-е |
| Тв. | сач-ĕ-сен-е | площач-ĕ-сен-е |
| Пр. | сач-ĕ-сем-пе | площач-ĕ-сем-пе |
| В. | сач-ĕ-сен-че | площач-ĕ-сен-че |
| Тх. | сач-ĕ-сен-чен | площач-ĕ-сен-чен |

***Ть, дь*** çемçе хупă сасăпа пĕтекен япала ячĕсене, вис çĕмĕш сăпат аффиксне йышăнсан, пĕрреллĕ хисепри пару, тăву падежĕсенче çемçетекен паллăпа ***(ь)*** çыраççĕ.

***145-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. ***Т, ть, д, дь*** вырăнне ***ч*** кĕрсе ларнă сăмахсене аялтан туртăр.

1. Амăшĕ аслă хĕрĕ патне кайнă, унăн упăшки сахăр заводĕнче ĕçлет. 2. Çурхи ĕçсен вăхăчĕ çывхарса пырать. 3. Вăл Павăл кровачĕ патне пырса ларчĕ те каласма пуçларĕ. 4. Нихăш енчен те хура çумăр пĕлĕчĕсем пуçтарăнни курăнмасть. 5. Ку йывăçăн турачĕсем пысăк. 6. Лайăх çыракан ачан тетрачĕсем те таса пулаççĕ. 7. Пирĕн çĕршывăн самолĕчĕсем—чи çӳлĕ, чи аякка, чи хăвăрт вĕçекен самолётсем.

***146-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Пуçламăш формăри *т, ть, д, дь* сасăпа пĕтекен япала ячĕсене кирлĕ падежра, кирлĕ хисепре лартăр.

Тĕслĕх: *Пирĕн çĕр айĕнчи пурлăхăн шучĕ те çук.*

1. Пирĕн çĕр айĕнчи пурлăхăн шут... те çук. Çĕмĕрлĕ комбинат... кăçал хăйĕн планне irttерсе тултарчĕ. 3. Вăрçă умĕн Игнатьев Хĕрлĕ ялавлă Балтика флот... пулнă. 4. Эпĕ выртакан окоп умĕнчех тăшман снаряд... çурăлчĕ. 5. Пĕр пулемĕт расчĕт... вăрман патне вырнаçнă. 6. Тăшман самолĕт... çине совет лĕтчикĕ тĕллесе пенĕ. 7. Пĕр турат... пăхать—хуçăк, тепĕр турат... пăхать—туратăн майăр пулмалли кăчкисене хуçнă.

***147-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăртан шухăшласа предложенисем çырăр. Вăл предложенисенче *т, ть, д, дь* сасăсемпе пĕтекен япала ячĕсем пулччăр.

## 22 §. Сăмах тăвакан аффикссем хушăнса пулнă иккĕмĕшле япала ячĕсем.

***148-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă тунă сăмахсен пулăвне сăнаса пăхăр.

Пирĕн ял çумĕнче **хурăнлăх** ӳсет.
**Пулăçăсем** тинĕсре пулă тытаççĕ.
**Çĕвĕçĕ** пӳрнеске тăхăннă.
**Çыруçă** сĕтел хушшинче ларать.
Вĕсен пӳртĕнче **пӳлĕм** пур.
Колхоз **хуçалăхĕ** ăнăçлă пырать.

Тĕп сăмахсем çумне аффикссем хушса, çĕнĕ (иккĕмĕшле) япала ячĕсем тума пулать. Тĕслĕхрен: *пулă—пулăçă, çĕвĕ—çĕвĕçĕ, хурăн—хурăнлăх*. Иккĕмĕшле япала ячĕсем тăвакан аффикссем çаксем:

*-çă,-çĕ (сыруçă, кĕтӳçĕ),*
*-лăх,-лĕх (юманлăх, шĕшкĕлĕх, ĕмĕрлĕх),*
*-у,-ӳ (çыру, пĕлӳ, кĕрешӳ),*
*-в (мухтав, суйлав, хунав),*
*-ăм,-ĕм,-м (утăм, пӳлĕм, турам).*

***149-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене çырса илĕр. Иккĕмĕшле сăмахсене тупăр, вĕсем мĕнле сăмахран, мĕнле аффикс хушăннипе пулнине каласа парăр.**

1. Юманлăхра çынсем йĕкел пуçтараççĕ. 2. Шкулсенче вĕренӳ çулĕ пуçланчĕ. 3. Артĕм кӳршĕ ялта тимĕрçĕре пурănать. 4. Тăмраçă, юрăçă пуласси мана илĕртетчĕ. 5. Манăн мучи паллă купăсçăччĕ. 6. Вĕсен ĕçченлĕхĕ çынсене тĕлĕнтерет. 7. Ĕлĕкхи ачасемпе хальхи ачасен пурнăçне ниепле те танлаштарма май çук, вĕсен хушшинче ытла та пысăк уйрăмлăхсем пур.

***150-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене çырса илĕр. Иккĕмĕшле сăмахсене аялтан туртăр.**

1. Пĕтĕм тавралăха сивĕ тĕтре пӳсса илчĕ. 2. Тумламсем сивĕпе шăнса çавăнтах пăр пулаççĕ. 3. Кĕтӳçĕ ĕлĕкхи самана çинчен каласа пачĕ. 4. Унăн калавне пурте пысăк тимлĕхпе итлерĕç. 5. Пирĕн çул çинче хăвалăх тĕл пулчĕ. 6. Хăйĕн хастарлăхĕпе Иванов колхозра чапа тухрĕ. 7. Çĕвĕçĕсем хыпаланса ĕçлеççĕ, вĕсем çĕлеме панă тумтире хăвăртрах çĕлесе пĕтересшĕн. 8. Тинех пĕтрĕ мăшкăллăх, пусмăр, çĕкленчĕ хĕвелтухăçран. (*Уйăп М.*)

***151-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ аффикссем лартăр.**

1. Ир çинче хурăн...ра кайăк юррисем илтĕнеççĕ. 2. Ку ыйт...а ответлесен, тата сире эпĕ пĕр ыйт... парам. 3. Йĕпесапа йывăрлăхне чăтса ирттертĕмĕр ĕнтĕ. 4. Çурхи çутçанталăк хăйĕн ырă...ĕсене ерипен те пулин уçса парать. 5. Лагере тулли хавас... килсе кĕчĕ. 6. Вĕсем икшер çĕкле... вутă йăтса кĕчĕç. 7. Куллен хĕрӳллĕ вĕрен... пырать. 8. Мĕнле кăна юрă юрламан-ши çав ывăнма пĕлмен юрă...

***152-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене çырса илĕр. Скобкăри сăмахсем çумне точкăсем вырăнне кирлĕ аффикссем хушăр.**

1. (Пулă...) хăйĕн вăлтисене килтенех илсе килчĕ. 2. (Хурăн...ра) кайăксем юрлаççĕ. 3. Çĕр айĕнчи тĕлĕнмелле (пуян...а)

кӑлараççĕ. 4. Вӑл пĕтĕм (лар...-тӑр...) çинчен тĕплĕн каласа парать. 5. Пирĕн халӑх, (чура...ран) хӑтӑлас тесе, нумай ĕмĕрсем хушши юн тӑкса кĕрешнĕ. 6. Çак хаяр (çапӑç...ра) пирĕн хӑюллӑ та паттӑр танкистсем çĕнтерчĕç.

*153-мĕш хӑнӑхтару.* Çак статьяна вуласа тухӑр. Иккĕмĕшле сӑмахсене тупса, вĕсене тетрадьсем çине çырса илĕр. Вĕсем мĕнле тĕпрен, мĕнле аффикс хушӑннипе пулнине кӑтартӑр.

## ПАРТИЗАНСЕМ.

Мускавран вĕççе килнĕ чух эпĕ çакна питĕ лайӑх туйса илтĕм: пирĕн пĕтĕм иртнĕ кĕрешӳ, çав кĕрешĕвĕн опычĕ халĕ хамӑр асӑрхаса илеймен хаклӑ япала пулса тӑчĕ...

Пирĕн кĕрешӳ — пĕтĕм халӑх кĕрешĕвĕн пĕр пайĕ. Çакӑнта ĕнтĕ пирĕн вӑй, çапӑçу тактикине те çаках татса панӑ. Тӑшман тылĕнчи ялсенче пире совет çыннисем хӑйсен тӑванĕсене йышӑннӑ пек йышӑнман пулсан, кашни колхозрах пире пулӑшакансем темĕн чухлĕ пулман пулсан, эпир Спадщан вӑрманĕнчен ӑнаçлӑн тухса, пĕтĕм çурçĕр енчи Сулицина тӑрӑх хальхи пек ирĕккĕн куççа çӳреме пултарнӑ пулӑттӑмӑр-ши вара? Халӑхшӑн эпир — совет влаçĕпе Совет Çарĕн представителĕсем. Халĕ акӑ пирĕн тӑван Украинӑн темиçе облаçĕ урлӑ каçмалла, çĕршер ялсем витĕр тухмалла, тӑшман тылне питĕ шалах кĕрсе кайса, унта икĕ çул хушши нимĕç захватчикĕсем хуçа пулса пурӑнакан районсенче пĕтĕм халӑха пĕрлештерсе, партизанла кĕрешӳ вутне аталантарса ямалла.

*154-мĕш хӑнӑхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Иккĕмĕшле сӑмахсене аялтан туртӑр.

1. Кунта акӑ çамрӑк юманлӑх, сылтӑм енче Атӑлӑн çӳлĕ çыранĕсем. 2. Пирĕн колхозӑн çулленех утӑ çулакан вырӑнĕ Атӑлӑн пĕр сӑмсахĕнче, аслӑ Атӑлтан икĕ километрта. 3. Пӑхать çамрӑк пахчаçӑ: вӑрӑм мӑйракаллӑ качака шӑтӑрнак витĕр йывӑç патне туртӑнать. 4. Паян Атӑл хĕрринчи улӑха каю çулма каятпӑр. 5. Вӑл пӳлĕмĕн уçӑ алăкĕ патнелле пычĕ те, кивĕрех картузне хывса, хулайне хĕстерчĕ. 6. Кĕçĕр хуралçӑ çĕрĕпе шаккарĕ.

### Аса илтермелли ыйтусем.

1. Мĕнле пуплев пайне, сӑмахсене япала ячĕсем теççĕ?
2. Мĕнле япала ячĕсене пысӑк саспаллипе пуçласа çыраççĕ?
3. Япала ячĕсем мĕнле улшӑнаççĕ?
4. Япала ячĕсем предложенире мĕнле членсем пулаççĕ?
5. Вырӑс чĕлхинчен кĕнĕ сӑмахсем мĕнле вĕçленеççĕ? Вĕçленӳри уйрӑмлӑхсем çинчен каласа парӑр.
6. Мĕнле аффикссене камӑнлӑх аффиксĕсем теççĕ?
7. Камӑнлӑх аффиксне йышӑннӑ япала ячĕсен вĕçленӳре мĕнле уйрӑмлӑхсем пур?

## 23 §. Паллă ячĕсем.

(Аса илни)

***155-мĕш хăнăхтару.*** Çак сăвва вуласа тухăр, япала паллисене кăтартакан сăмахсене япала ячĕсемпе пĕрле çырса илĕр.

Хĕвел тухать, улăхать
çӳлĕ тусем тăррине,
хăй çуттипе ăшăтать
таçти-таçти çĕрсене.
Çак çуллахи ырă кун
Хушăлкана та сават.
Пур тĕнчери чĕрĕ чун
ташлать, сикет, савăнать.
Ячĕç юрă юрласа
сĕм вăрманти кайăксем.
Акăшсем пек ярăнса,
анчĕç шыва сар хĕрсем.

(*К. В. Иванов*)

Япала паллине пĕлтерекен пуплев пайне **паллă ячĕ** теççĕ. Паллă ячĕсем предложенире япала ячĕсене ăнлантарса параççĕ, япала мĕнлине, ăçтине, хăçанхине кăтартаççĕ. Паллă ячĕсем падеж тăрăх улшăнмаççĕ, вĕсем япала ячĕ умĕнче пĕр улшăнмасăр тăраççĕ.

Паллă ячĕсене ***мĕнле? ăçти? хăçанхи?*** ыйтусем лартса пĕлеççĕ.

Т ĕ с л ĕ х: Пӳрт çине хĕрлĕ (*мĕнле?*) сăрпа сăрланă. Çулла вăрманти (*ăçти?*) кайăксем юрра шăрантараççĕ. Пирĕн пĕлтĕрхи (*хăçанхи?*) тырă та пĕтмен-ха.

***156-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Паллă ячĕсене аялтан туртса паллă тăвăр, мĕнле ыйтура тăнине калăр.

1. Кăтра (*мĕнле*) хурăнсем, çирĕксем, вĕтĕ çӳçесем, юрпа витĕнсе ларнă хырсемпе чăрăшсем, лутра уртăшсем, вĕçкĕн ăвăссем хăйсен сăнарне палăртма пуçлаççĕ. 2. Пирĕн умра ĕмĕрхи Атăл мухтавлăн хумханса выртать. 3. Кайăк-кĕшĕксемпе тĕрлĕ чĕрчунсем кĕшĕлтетеççĕ, пурте ирĕклĕ пурнăçшăн савăнса хавасланаççĕ. 4. Хăйне кирлĕ çемме тупсан, вăл çав тери уçă, çӳлĕ те янăравлă сасăпа юрлама тытăнчĕ. 5. Кĕрхи йĕпе-сапа пуçланчĕ, ун хыççăн сивĕ хĕл те персе çитрĕ.

***157-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Паллă ячĕсемпе япала ячĕсене аялтан туртăр.

КĔРКУННЕ.

Кĕрхи кунсем çитрĕç. Сивĕ çил вĕрет. Тӳпене хура пĕлĕтсем хупласа илчĕç. Вĕтĕ çумăр пĕрĕхет. Урам хушшисем пылчăкланнă. Тулли уй-хирсем пушанчĕç. Вăрманти йывăççен

ешӗл ҫулҫисем сарӑхса тӑкӑнса пӗтрӗҫ. Пахчари улмуҫҫисен те юлашки ҫулҫисем тӑкӑнчӗҫ. Тӗксӗм вӑрман сивӗ хӗле кӗтсе тӑрать. Йӗпе ҫанталӑк хыҫҫӑн шӑнтма пуҫларӗ. Шыв кӳлленчӗкӗсем шӑнса ларчӗҫ. Ҫутӑ хӗвел хӗртми пулчӗ. Вӑрӑм кунсем кӗскелчӗҫ. Вӑхӑчӗ-вӑхӑчӗпе шурӑ юр та ӳккелеме пуҫларӗ. Ыран-паян сивӗ хӗл пуҫланать.

***158-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак япала ячӗсем ҫумне кирлӗ паллӑ ячӗсем хушса ҫырса парӑр.

Шыв, ҫул, хӗвел, ҫил, хула, колхоз, урам, улма, ӗҫ, пӗлӗт, йывӑҫ, курӑк, пӳрт, хут, апат.

Кашни япалан темиҫе паллӑ та пулма пултарать. Ҫавӑнпа пӗр япала ячӗпе темиҫе паллӑ ячӗ пулма пултарать.

Ял варринче **илемлӗ пысӑк** ҫурт ларать. **Хӗллехи ӑшӑ** кунсенче тӑвайккинче ача-пӑча кӗшӗлтетет. **Ҫӑра ешӗл** калчасем пӗр пек тикӗс хӑпараҫҫӗ.

***159-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Кашни япала ячӗ ҫумне икшер паллӑ ячӗ лартӑр.

1. Халӗ ӗнтӗ... хӗл ҫитрӗ. Ҫӗре... юр витрӗ. Эпир... кунсене асӑнатпӑр.

2. Вӑрман хӗррипе... шыв юхса выртать. Шывра... пулӑсем ишсе ҫӳреҫҫӗ. Шӑрӑх кунсенче... ачасем шыва кӗме ҫӳреҫҫӗ.

***160-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне кирлӗ паллӑ ячӗсем лартӑр.

1. Малтан, хуларан килсенех... ачасем ютшӑннӑ, халӗ пӗтӗм... ача-пӑча Ванюк патне выляма ҫӳреҫҫӗ. 2. Урам тӑрӑх... ялавпа... ачасем салтаксем пек утса пыраҫҫӗ. 3. Хулленех... хӗл иртсе кайрӗ,... кунсем майӗпен ҫывхарчӗҫ. 4. Ачасем... тислӗке хырса, шӑлса пухаҫҫӗ, ещӗксем ҫине тиесе, колхоз килкартине кайса йӑвантараҫҫӗ.

***161-мӗш хӑнӑхтару.*** Хирӗҫле пӗлтерӗшлӗ паллӑ ячӗсене тупса ҫырса парӑр.

Вӑйлӑ — *вӑйсӑр,* шурӑ, шултӑра, ҫӳлӗ, йывӑр, тарӑн, ҫутӑ, ҫывӑхри, тутлӑ, ӑшӑ, каҫхи, тӳрӗ, мӑнтӑр, аван, шалпар, ҫӑра.

*162-мӗш хӑнӑхтару.* Статьяна вуласа тухӑр. Статьяри паллӑ тунӑ паллӑ ячӗсене сӑнаса пырӑр. Япала ячӗ улшӑннӑ май паллӑ ячӗ улшӑннипе улшӑнманнине асӑрхӑр.

## ЧАПЛӐ ПУХУ.

Паян Совет Ҫарӗнчен демобилизаци йӗркипе таврӑнакансене кӗтсе илчӗҫ. Ҫавӑнпа **пысӑк** пуху пуҫтарӑнчӗ. Пит те **чаплӑ** тата **савӑнӑҫлӑ** пуху пулчӗ. Чи малтан колхоз председателӗ **кӗске** сӑмах каларӗ. Унтан **паттӑр** та **хастар** боецсем хӑйсен **мухтавлӑ** ӗҫӗсем ҫинчен каласа пачӗҫ. Вӗсен **хӗрӳллӗ** сӑмахӗсене **пухури** ҫынсем **ӑшӑ** кӑмӑлпа итлерӗҫ. **Чаплӑ** пуху пӗтсен, **шкулти** ачасемпе **ялти** ҫамрӑксем спектакль лартса кӑтартрӗҫ.

*163-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак тӗслӗхсене пӑхса тухӑр. Паллӑ ячӗсем улшӑннипе улшӑнманнине асӑрхӑр.

| | |
|---|---|
| Хирти курӑк | хирти курӑксем |
| Тимӗр кӗреҫе | тимӗр кӗреҫесем |
| Пысӑк ҫурт | пысӑк ҫуртсем |
| Хӗрлӗ ялав | хӗрлӗ ялавсем |
| Шурӑ кӗпе | шурӑ кӗпесем |
| Ҫӳрен лаша | ҫӳрен лашасем |
| Чаплӑ ҫын | чаплӑ ҫынсем |
| Пӗчӗк ача | пӗчӗк ачасем |
| Хура пӗлӗт | хура пӗлӗтсем |

*164-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисенчи пӗрреллӗ хисепре тӑракан япала ячӗсене нумайлӑ хисепе куҫарӑр. Паллӑ ячӗсем улшӑннипе улшӑнманнине асӑрхӑр.

Тӗслӗх: *Аслӑ ҫул тӑрӑх лавсем пыраҫҫӗ. Аслӑ ҫулсем тӑрӑх лавсем пыраҫҫӗ.*

1. Инҫетре пысӑк вӑрман курӑнать. 2. Пӗлтӗрхи курӑк юр айӗнчен тухрӗ. 3. Ачасем вӑрманта тутлӑ ҫырла пуҫтараҫҫӗ. 4. Уйри ҫум ӳсме пуҫланӑ, ыран-паян ҫумламалла. 5. Савӑнӑҫлӑ кун ҫывхарса килет. 6. Пахчари шурӑ ҫеҫке ҫурнӑ ҫӗмӗрт шап-шуррӑн курӑнать.

*165-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫакӑнти япала ячӗсемпе паллӑ ячӗсене пӗрле илсе вӗҫлесе парӑр.

| Ят вӑйлӑ ҫил | каҫхи сулхӑн |
|---|---|
| К. . . . . . | . . . . . . |
| П. . . . . . | . . . . . . |
| Тв. . . . . | . . . . . . |
| Пр. . . . . | . . . . . . |
| В. . . . . | . . . . . . |
| Тх. . . . . | . . . . . . |

Япала ячĕпе çыхăнса тăракан паллă ячĕсем вĕçленмеççĕ. Паллă ячĕсем япала ятĕнчен уйрăм тăнă чухне, япала ятне тухса, япала ячĕсем пекех вĕçленеççĕ.

**Уйрăм тăракан паллă ячĕсем вĕçленни.**

Пĕррелле хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ят | симĕс | кăвак | шурă | хура |
| К. | симĕс-ĕн | кăвак-ăн | шурр-ăн | хура-н-ăн |
| П. | симĕс-е | кăвак-а | шурр-а | хура-на |
| Тв. | симĕс-е<br>симĕс | кăвак-а<br>кăвак | шурр-а<br>шурă | хура-на<br>хура |
| Пр. | симĕс-пе | кăвак-па | шурă-па | хура-па |
| В. | симĕс-ре | кăвак-ра | шурă-ра | хура-ра |
| Тх. | симĕс-рен | кăвак-ран | шурă-ран | хура-ран |

*166-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Паллă ячĕсене мĕнле падежра, мĕнле хисепре тăнине кăтартăр.

1. Пирĕн пӳрте шурăпа сăрланă. 2. Алшăллине кăвакпа тĕрленĕ. 3. Урине вăл хĕрлĕпе хура çипрен çыхнă чăлха тăхăннă. 4. Лайăха пурте юратаççĕ. 5. Пĕчĕкрен пысăк пулать. 6. Шурра хуратма çăмăл. 7. Сарăпа кăвака хутăштарсан, симĕс пулать. 8. Пӳртсен çийĕсене симĕспе сăрланă.

*167-мĕш хăнăхтару.* Хăвăртан пилĕк предложени тупса çырăр. Вăл предложенисенче вĕçленекен паллă ячĕсем пулччăр.

## 24 §. Паллă ячĕсем *и* аффикса йышăнни.

*168-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр, паллă ячĕсем мĕнле улшăннине асăрхăр.

1. Пысăкки, пĕчĕкки — пурте урамра. 2. Карташĕнче тĕрлĕ чăхсем çӳреççĕ: шурри те, хури те, чăпарри те пур. 3. Унăн ывăлĕсенчен асли вăтам шкултан вĕренсе тухнă, кĕçĕнни пуçламăш шкулта вĕренет. 4. Пирĕн юлташсенчен чи лайăххи Петров юлташчĕ. 5. Пирĕн çемьере чи асли — аттен пиччĕшĕ. 6. Эпĕ йыт çурисенчен улине, чи хаяррине суйласа илтĕм. 7. „Камсем ку пысăккисем?“ — тесе ыйтрĕ Валя шурă кĕпеллĕ ачаран.

Паллă ячĕсем, хăйсем тĕллĕн тăрса, *и* аффикса йышăнма пултараççĕ. *И* аффикс уйăрса кăтартса каланине пĕлтерет.

Тĕслĕх: *вăйли* — хăшĕ вăйлă, çав; *асли* — хăшĕ аслă, çав.

***169-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисенче и аффикслă паллă ячĕсене тупăр. Паллă ячĕсем мĕнле улшăннине кăтартса парăр.

1. Михалан çемйи пысăк, ачи-пăчисем пурте вĕтĕ, чи асли вуниккĕре анчах. 2. Шурă чечексемсĕр пуçне хĕрлисем те пур. 3. Иван ачасем хушшинче чи пысăкки пулнă. 4. Хура тутăрсем хушшинче кăвакки çуттăн курăнса тăнă. 5. Кушлавăш хушши çаплах-ха янăрать: ватти-вĕтти каялла та малалла чупать урамра. 6. Пирĕн ачасем кунта ĕççĕр мар: вĕсем пысăккисене тырă, çĕрулми пуçтатма пулăшрĕç.

***170-мĕш хăнăхтару.*** Хупă сасăпа тата *ă, ĕ* сасăсемпе пĕтекен паллă ячĕсем тупăр. Хупă сасăпа пĕтекенни 5 паллă ячĕ, *ă, ĕ* сасăсемпе пĕтекеннисем—пиллĕкшер паллă ячĕ пултăр. Паллă ячĕсене и аффикс йышăнтарса предложенисем тăвăр.

***171-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Скобкăра тăракан паллă ячĕсем çумне и аффикс хушăр.

1. Эпир виççĕн пĕр тăван: (аслă) колхоз бригадирĕ, (вăталăх) инженер, эпĕ (кĕçĕн) вĕренетĕп. 2. Чечексем: (кăвак) те, (хĕрлĕ) те, (сарă) те пур. 3. Утă (вĕтĕ) лайăх, вутă (типĕ) лайăх. 4. Ачасенчен пуринчен (кĕçĕн) ывăна пуçларĕ. 5. Тутăрсенчен (кăвак) хитререх курăнать. 6. Пӳлĕм (çутă) авантарах.

## *И* аффикс йышăннă паллă ячĕсем вĕçленни.

Пĕрреллĕ хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | çамрăкки | сарри |
| К. | çамрăкки-н | сарри-н |
| П. | çамрăкки-не | сарри-не |
| Тв. | çамрăкки-не | сарри-не |
| Пр. | çамрăкки-пе | сарри-пе |
| В. | çамрăкки-н-че | сарри-н-че |
| Тх. | çамрăкки-н-чен | сарри-н-чен |

| | | |
|---|---|---|
| Ят | хури | вăйли |
| К. | хури-н | вăйли-н |
| П. | хури-не | вăйли-не |
| Тв. | хури-не | вăйли-не |
| Пр. | хури-пе | вăйли-пе |
| В. | хури-н-че | вăйли-н-че |
| Тх. | хури-н-чен | вăйли-н-чен |

Нумайлă хисеп

| | | |
|---|---|---|
| Ят | çамрăкки-сем | сарри-сем |
| К. | çамрăкки-сен-ĕн | сарри-сен-ĕн |
| П. | çамрăкки-сен-е | сарри-сен-е |
| Тв. | çамрăкки-сен-е | сарри-сен-е |
| Пр. | çамрăкки-сем-пе | сарри-сем-пе |
| В. | çамрăкки-сен-че | сарри-сен-че |
| Тх. | çамрăкки-сен-чен | сарри-сен-чен |

| | | |
|---|---|---|
| Ят | хури-сем | вăйли-сем |
| К. | хури-сен-ĕн | вăйли-сен-ĕн |
| П. | хури-сен-е | вăйли-сен-е |
| Тв. | хури-сен-е | вăйли-сен-е |
| Пр. | хури-сем-пе | вăйли-сем-пе |
| В. | хури-сен-че | вăйли-сен-че |
| Тх. | хури-сен-чен | вăйли-сен-чен |

*172-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. *И* аффикс йышăннă паллă ячĕсем мĕнле падежра, мĕнле хисепре тăнине кăтартса парăр.

1. Аслипе кĕçĕнни вăрмана вутă касма кайнă, вăталăххи килте ĕçлет. 2. Ĕçре куранман вĕсенчен чиперри, пулман хастарри вăйăра. *(Уйăп М.).* 3. Лагерьти пурнăç аваннине пурте пĕлеççĕ. 4. Япалана пурте лайăххине юратаççĕ. 5. Симĕссипе кăваккинчен кĕпе çĕлетрĕм. 6. Ку питĕ лайăх ĕç, унтан лайăххине урăх шыраса та тупайрас çук. 7. Çĕнни çĕнтерсе пырать, киввине хыçа хăварать. 8. Кăçалтан вăл пысăккисемпе пĕрле ĕçлеме пуçланă.

*173-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяри паллă ячĕсене япала ячĕсемпе пĕрле çырса илĕр.

## ВЫÇĂ КАШКĂР.

Хĕллехи вăрăм çĕрсем çитрĕç. Çурçĕр енчен вĕрекен сивĕ çил лăпланчĕ. Çут çăлтăрлă пĕлĕт тасалчĕ. Çăлтăрсенчен чи çутти уйрăм палăрса тăрать. Шăп.

Инçетри вăрманта выçă кашкăрсем улани илтĕнчĕ. Шурă мулкачăн чĕри хытăрах тапа пуçларĕ. Вăл хăранипе çемçе юр ăшне кĕрсе выртрĕ. Ялти йытăсем вĕрме пуçларĕç. Выçă кашкăрсем уланине вĕсем сисеççĕ. Акă пысăк уçланка пĕр кашкăр тухрĕ. Унăн выçă куçĕсем вут пек çунаççĕ.

*174-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Паллă ячĕсем çумне *и* аффикса хушса уйăрăр.

1. Урамра ачасем вăйă выляççĕ: унта пĕчĕк ачасем те, пысăк ачасем те пур. 2. Пурте савăнаççĕ, кулаççĕ: пĕчĕк ачасем те, çамрăк ачасем те, пысăк çынсем те. 3. Хĕрачасем сарă тутăра шурă тутăртан ытларах юратаççĕ. 4. Çамрăк çынсен ватă çынсене хисеплемелле. 5. Пурте хитре япалана юратаççĕ. 6. Пирĕн сурăх икĕ путек тунă: пĕри шурă, тепри хура; шурă путекĕ хура путекĕнчен хитререх.

*175-мĕш хăнăхтару.* Хăвăртан шухăшласаултă предложени çырăр. Вăл предложенисенче *и* аффикса йышăннă паллă ячĕсем пулччăр.

## 25 §. Паллă ячĕсен предложенири вырăнĕ.

1. *Хĕллехи сивĕ* кунсем çитрĕç.
2. *Паянхи* куна савăнăçлă кĕтсе илĕпĕр.
3. Эпир *çывăхри* вăрмана экскурсие кайрăмăр.

Паллă ячĕсем предложенире пуринчен ытла определени пулаççĕ.

Вĕсем е подлежащие, е тепĕр кĕçĕн члена ăнлантараççĕ.

Пĕрремĕш тĕслĕхре *хĕллехи, сивĕ* паллă ячĕсем подлежащие (кунсем) ăнлантараççĕ. (Хăçанхи? Мĕнле?) кунсем çитрĕç.

Иккĕмĕшпе виççĕмĕш тĕслĕхре паллă ячĕсем кĕçĕн членсене ăнлантараççĕ:

*(Хăçанхи?)* куна,
*(Ăçти?)* вăрмана.

***176-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене разбор тăвăр. Паллă ячĕсем предложенин мĕнле членĕ пулнине каласа парăр.**

1. Эпĕ хам акă вăйлă тырпул тăвассишĕн кĕрешетĕп, пĕтĕм вăйăма шеллемесĕр Тăван çĕршывшăн, халăхшăн, телейлĕ тулăх пурнăçшăн хуратăп. 2. Аслă çĕрĕмĕр-аннемĕр, çав аслă çĕре Октябрь панă пире. 3. Нихçан та усал ĕç туман, хама пысăка хуман. 4. Çуллахи вĕри тар хĕлле ăшăтать. 5. Этем тӳрĕ ăсĕпе те ырă ĕçĕпе илемлĕ. 6. Çамрăксем утакан сывлăмлă çул уйăх çутинче йăлтăртатса выртать. 7. Çивчĕ çавасем çӳлĕ курăк ăшĕнче йăлт та ялт çутăла-çутăла илеççĕ.

***177-мĕш хăнăхтару.*** **Çавнах тăвăр.**

### АРБУЗ.

Çуркунне, çĕр типсен, эпĕ пахчана тухрăм. Ешĕл курăк хушшинче пĕр çамрăк хунава асăрхарăм. Ку лайăх йышши чечек пулĕ-ха тесе, эпĕ ăна чавса кăлартăм та пĕр хӳтĕ вырăна куçарса лартрăм. Унта ăна ир пуçласа каçченех ăшă хĕвел ăшăтать, усал çил те тивеймест.

Тырă вырма тухнă тĕле хайхи пĕчĕк хунав парка ӳсме ĕлкĕрнĕ, çăмламас çулçи айĕнче кавăн пек чăмăртаннă çимĕçĕсем те пур.

Атте ăна курсан тĕлĕнсех кайрĕ:

— Пирĕн пахчара та тутлă арбуз ӳсет иккен. Мĕнле майпа кунта шăтса ӳснĕ вăл?

Вăл мĕнле шăтса ӳсни çинчен эпĕ аттене каласа патăм.

## 26 §. Иккĕмĕшле паллă ячĕсене тăвакан аффикссем

*178-мĕш хăнăхтару.* Паллă ячĕсене тупăр. Вĕсем мĕнле пулнине асăрхăр.

1. Савăнăçлă кунсем çывхарса çитрĕç. 2. Хĕвеллĕ Октябрь ирĕклĕ пурнăç илсе килчĕ. 3. Илемлĕ вăрман çулла тата илемлĕрех курăнать. 4. Пирĕн рабочи класăн революцийĕ вăл пĕтĕм тĕнчери революцин пĕр пусăмĕ. 5. Паттăр, хăватлă ледоколсем пăрлă тинĕссем тăрăх урлă-пирлĕ çул тăваççĕ.

Иккĕмĕшле паллă ячĕсем япала ячĕсем е ытти пуплев пайĕсем çумне тĕрлĕ аффикссем хушнипе пулаççĕ.

Ун пек аффикссем çаксем:

***лă-лĕ, ллă-ллĕ***, (ан—анлă, вĕç—вĕçлĕ, ура—уралла),
***сăр-сĕр*** (вăй—вăйсăр, çил—çилсĕр),
***ла-ле, лла-лле*** (вырăс—вырăсла, мăкшă—мăкшăлла),
***хи*** (кăçал—кăçалхи, ĕнер—ĕнерхи),
***и*** (урамра—урамри, ялта—ялти, хуласенче—хуласенчи, килĕнче—килĕнчи).

*179-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр, тĕрлĕ аффикс хушăнса пулнă иккĕмĕшле паллă ячĕсене аялтан туртса паллă тăвăр.

1. Кĕркуннехи çумăр йăлăхтарчĕ. 2. Уçланкăри курăксем типсе кайнă. 3. Йĕри-тавра йĕплĕ пралукпа тытса çаврăннă тимĕр карта пулнă. 4. Çўллĕ тусем, тарăн варсем, тăрă шывлă çырансем хыçалалла тăрса юлаççĕ. 5. Тăшман пуçне пĕтерме икĕ вăйлă алли пур.

*180-мĕш хăнăхтару.* Хăвăртан 10 япала ячĕ шухăшласа тупăр, вĕсем çумне кирлĕ аффикссем хушса, паллă ячĕсем тăвăр.

Тĕслĕх: *вăй—вăйлă, вăйсăр; вăрман—вăрманлă, вăрмансăр; килте—килти.*

*181-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ аффикссем хушăр.

1. Пире çулла... каникула ячĕç. Колхоз пуçланнăранпа пур колхозниксем те ĕне... пулса тăчĕç. 3. Вĕсем тăвăл... çилпе çĕре çитиех çапăна-çапăна хумханаççĕ. 4. Чечек... çаран илемлĕн курăнса ларать. 5. Роман, районтан таврăнсан, конференцире пулса иртнĕ ĕçсем çинчен ялта... çынсене каласа пачĕ.

## 27 §. Паллă ячĕсене тĕрĕс çырасси.

Хупă сасăпа пĕтекен паллă ячĕсен, ***и*** аффикса йышăнсан, çав хупă сасă вăрăмланать; çавăнпа çырнă чухне икĕ хупă саспалли çыраççĕ: *кăвак—кăвакки, симĕс—симĕсси.*

***Ă-ĕ*** уçă сасăсемпе пĕтекен паллă ячĕсен те, ***ă-ĕ*** умĕнче çавăн пекех пĕр хупă сасă тăрать пулсан, çав хупă сасă вăрăмланать; кунта та çырнă чухне икĕ хупă саспалли çыраççĕ: *шурă—шурри, сарă—сарри.*

***182-мӗш хӑнӑхтару. И*** аффикса йышӑннӑ хупӑ сасӑпа е ***ӑ-ӗ*** сасӑпа пӗтекен паллӑ ячӗсем тупса, пилӗк предложени тӑвӑр.

***183-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне кирлӗ аффикссем хушӑр.

1. Чечексем темӗн тӗрли те пур: кӑвак..., симӗс..., хӗрлӗ..., шурӑ..., сарӑ... . 2. Уксах... ывӑнса юлташӗнчен кая юлнӑ. 3. Хура тутӑр пит лайӑх, шурӑ... тата лайӑхрах. 5. Ку кайӑк чи илемлӗ... тата чи усӑллӑ... 5. Ывӑлӗсенчен вӑталӑх... вӗренме кайнӑ.

***Лӑ-лӗ*** аффикссем йышӑнса пулнӑ иккӗмӗшле паллӑ ячӗсенче, вӗсем уҫӑ сасӑпа пӗтекен япала ятӗнчен пулнӑ пулсан, ***ллӑ-ллӗ*** ҫыраҫҫӗ: *алӑллӑ* (тӗпӗ—*алӑ*), *ураллӑ* (тӗпӗ—*ура*.)

*Пысӑк* ***пахчаллӑ*** *колхозсем.*
*Вӑрӑм* ***ҫилхеллӗ*** *лаша.*
***Майракаллӑ*** *шултра выльӑх.*

***184-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак япала ячӗсенчен, ***лӑ-лӗ, ллӑ-ллӗ*** аффикссем хушса, паллӑ ячӗсем тӑвӑр.

Хӳре, лаша, ӗне, кӳршӗ, сӗлӗ, урпа, кӗлетке, пуҫ, ӑс, пӳрт, кӗл, тӑван, кӑвар, тӑха, ҫӑмха, пылчӑк.

***185-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне кирлӗ аффикссем лартӑр.

1. Ҫулла пӑр... ҫумӑрсем пулаҫҫӗ. 2. Пирӗн районта масса... ҫураки пуҫланнӑ. 3. Унӑн йывӑр кӗле... сулмак... атти лекет вирлӗнех Чакка ҫамкине. (*Элкер.*) 4. Ак ҫак хушӑрах тиев... лавсем пыраҫҫӗ шуса хурал пӳрт умне. 5. Пахчара сӗтек... ҫимӗҫсем ҫитӗнеҫҫӗ. 6. Патша саманинче ялсенче ӗне... хуҫалӑхсем питӗ сахал пулнӑ. 7. Мишшана кӑҫал пӗрмек... хура кӗрӗк ҫӗлетсе панӑ.

***186-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне аффикссем хушӑр.

1. Ивана пурте юратнӑ, мӗншӗн тесен вӑл ытла хӑю... ача пулнӑ. 2. Чупаҫҫӗ вӗсем тӳрем ҫеремпе ҫӳҫе... ҫырма-ҫатра хӗрринелле. 3. Кӑшт ҫутӑлсассӑн, каллех хӗрӳ... те хаяр ҫапӑҫусем пуҫланчӗҫ. 4. Пирӗн мухтав... ҫар Сталинграда нимӗҫ захватчикӗсенчен тӗпӗ-йӗрӗпех тасатрӗ. 5. Савӑнӑҫ... юрӑсем илтӗнеҫҫӗ.

***187-мӗш хӑнӑхтару.*** Текста вуласа тухӑр. Тӗл пулакан паллӑ ячӗсене япала ячӗсемпе пӗрле тетрадь ҫине ҫырса илӗр.

1942-мӗш ҫулхи ҫу кунӗсем тата кӗрхи кунсем пирӗншӗн ҫав тери йывӑр кунсем, хаяр кунсем пулчӗҫ. Ун чухне нимӗҫ, вутпа вилӗм сарса, пирӗн чаплӑ тӗп хулана—Мускава ярса илесшӗн пулнӑ. Унтан вӑл пирӗн Атӑл ҫинчи гранит пек ҫирӗп тӗреклӗх патне—Сталинград патне ҫитнӗ. Сталинграда илсен, нимӗҫ Атӑл ҫыранӗпе хӑпарса, Мускава ытти хӗвелтухӑҫӗнчи ҫӗрсенчен татса илесшӗн пулнӑ. Анчах нимӗҫ пирӗн ҫирӗплӗхе ҫӗмӗреймерӗ.

Инҫетри ҫурҫӗртен пуҫласа кӑнтӑра ҫитиччен тӑсӑлса выртакан фронтра—пур ҫӗрте те, ытти халӑхсен ывӑлӗсемпе пӗрле, чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗсем те Тӑван ҫӗршывшӑн, унӑн ирӗклӗхӗпе чысӗшӗн паттӑррӑн ҫапӑҫрӗҫ.

### Аса илтермелли ыйтусем.

1. Мӗнле пуплев пайне паллӑ ячӗсем теҫҫӗ?
2. Паллӑ ячӗсем предложенире мӗнле членсем пулаҫҫӗ?
3. Паллӑ ячӗсем мӗнле аффикс йышӑнаҫҫӗ?
4. Паллӑ ячӗсем хӑҫан вӗҫленеҫҫӗ?
5. Мӗнле аффикссемпе иккӗмӗшле паллӑ ячӗсем пулаҫҫӗ?
6. Хӑҫан паллӑ ячӗсен вӗҫӗнчи хупӑ сасӑ вӑрӑмланать?

## 28 §. Хисеп ячӗсем.

***188-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Предложенисенчи хисеп ячӗсене кӑтартса парӑр.

**Иккӗ** ҫумне **виҫҫӗ** хушсан, **пиллӗк** пулать.
Эрнере **ҫичӗ** кун.
Кашнине **виҫшер** тетрадь валеҫрӗҫ.
Анюк **пиллӗкмӗш** класра вӗренет.

Япаласен шутне, йӗркине пӗлтерекен пуплев пайне **хисеп ячӗ** теҫҫӗ.

Тӗслӗх: Пирӗн класра (*миҫе?*) вӑтӑр ача. Эпӗ (*миҫемӗш?*) тӑваттӑмӗш класра вӗренетӗп.

Япаласен шутне пӗлтерекен хисепсене **шут хисепӗсем** теҫҫӗ. Вӗсен ыйтӑвӗ *миҫе? Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ, тӑваттӑ, вунпиллӗк, ҫирӗм виҫҫӗ, ҫӗр, пин.*

Япаласене шутланӑ чухне вӗсен йӗркине пӗлтерекен хисепсене **йӗрке хисепӗсем** теҫҫӗ. Вӗсен ыйтӑвӗ *миҫемӗш? Пӗрремӗш, иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш, аллӑмӗш.*

## Шут хисепĕсем.

Шут хисепĕсем *пĕрререн вунтăххăра* çитиччен тата *сакăрвуннăпа тăхăрвунна* хисепсем икĕ формăра пулаççĕ: тулли формăра (пĕрре, виççĕ, пиллĕк), кĕске формăра (пĕр, икĕ—ик, виçĕ—виç, пилĕк). *Вунпĕр* хисеп пĕр формăра çеç пулать.

1—пĕрре, пĕр
2—иккĕ, икĕ, ик
3—виççĕ, виçĕ, виç
4—тăваттă, тăвата, тăват
5—пиллĕк, пилĕк
6—улттă, ултă, улт
7—çиччĕ, çичĕ, çич
8—саккăр, сакăр
9—тăххăр, тăхăр
10—вуннă, вунă, вун
11—вунпĕр
12—вуниккĕ, вуникĕ, вуник
13—вунвиççĕ, вунвиçĕ, вунвиç
14—вунтăваттă, вунтăвата, вунтăват
15—вунпиллĕк,вунпилĕк
16—вунулттă, вунултă, вунулт
17—вунçиччĕ, вунçичĕ, вунçич
18—вунсаккăр, вунсакăр
19—вунтăххăр, вунтăхăр
20—çирĕм
30—вăтăр
40—хĕрĕх
50—аллă
60—утмăл
70—çитмĕл
80—сакăрвуннă, сакăрвунă, сакăрвун
90—тăхăрвуннă, тăхăрвунă, тăхăрвун
100—çĕр
101—çĕр те пĕрре, пĕр
102—çĕр те иккĕ, икĕ, ик
119—çĕр те вунтăххăр, вунтăхăр
120—çĕр çирĕм
200—икçĕр
300—виççĕр
400 - тăватçĕр
500—пилĕкçĕр
600—ултçĕр
700—çичçĕр
800—сакăрçĕр
900—тăхăрçĕр
1 000—пин
2 000—икĕ пин
1 000 000—миллион
1 000 000 000—миллиард

## Йĕрке хисепĕсем.

Йĕрке хисепĕсем шут хисепĕсен тулли формиçумне *мĕш* аффикс хушăннипе пулаççĕ: *пĕрремĕш, иккĕмĕш, пиллĕкмĕш.*

| | | |
|---|---|---|
| пĕрремĕш | вунпĕрмĕш | çирĕм пиллĕкмĕш |
| иккĕмĕш | вуниккĕмĕш | вăтăрмĕш |
| виççĕмĕш | вунвиççĕмĕш | хĕрĕхмĕш |
| тăваттăмĕш | вунтăваттăмĕш | аллăмĕш |
| пиллĕкмĕш | вунпиллĕкмĕш | утмăлмĕш |
| улттăмĕш | вунулттăмĕш | çитмĕлмĕш |
| çиччĕмĕш | вунçиччĕмĕш | сакăрвуннăмĕш |
| саккăрмĕш | вунсаккăрмĕш | тăхăрвуннăмĕш |
| тăххăрмĕш | вунтăххăрмĕш | çĕрмĕш |
| вуннăмĕш | çирĕммĕш | пинмĕш |

*189-мӗш хӑнӑхтару*. Çак шут хисепӗсенчен йӗрке хисепӗсем тӑвӑр.

1) Вунпӗр, вуниккӗ, вунвиççӗ, вунтӑваттӑ, вунпиллӗк, вунултттӑ, вунçиччӗ, вунсаккӑр, вунтӑххӑр, çирӗм;

2) вӑтӑр, хӗрӗх, аллӑ, утмӑл, çитмӗл, сакӑрвуннӑ, тӑхӑрвуннӑ, çӗр.

*190-мӗш хӑнӑхтару*. Çакӑнти ыйтусем тӑрӑх тулли ответсем парӑр. Хисепсене сӑмахпа çырӑр.

Çулталӑкра миçе уйӑх? Уйӑхра миçе кун? Талӑкра миçе сехет? Сехетре миçе минут? Минутра миçе секунд?

Сирӗн ялта миçе кил? Колхозра миçе бригада? Бригадӑра миçе звено? Сирӗн класра миçе ача вӗренет? Кашни парта çинче миçешер ача ларать? Халӗ сирӗн миçемӗш урок пырать? Сирӗн класра миçе ача отлично вӗренет?

*191-мӗш хӑнӑхтару*. Çак статьяна çырса илӗр. Çырса илнӗ чух кашни хисеп ячӗ умне кирлӗ ыйтусем лартӑр.

## ПИРӖН ÇЕМЬЕ.

Пирӗн çемье пысӑк мар, мӗн пурӗ пилӗк çын: атте, анне, эпӗ тата йӑмӑкпа шӑллӑм. Эпӗ асли, манран кӗçӗннисем—йӑмӑк, унтан шӑллӑм. Эпӗ тӑваттӑмӗш класра вӗренетӗп, йӑмӑк иккӗмӗш класра вӗренет, шӑллӑм тӑватӑ çулта çеç-ха. Вӑл тата виçӗ çултан тин вӗренме каять. Эпир кунне тӑватшар-пилӗкшер сехет вӗренетпӗр. Унтан вара икшер-виçшер сехет килте уроксем хатӗрлетпӗр. Пушӑ вӑхӑтра эпӗ атте-аннесене пулӑшатӑп. Вӗсем кӑçал колхозра тӑватшар çӗр ӗçкунӗ тунӑ.

*192-мӗш хӑнӑхтару*. Çырса илӗр. Хисеп ячӗсене сӑмахпа çырӑр.

Пирӗн шкулта 4 класс. Пӗрремӗш класра 42 ача, иккӗмӗшӗнче—38, виççӗмӗшӗнче—36, тӑваттӑмӗшӗнче—29, пӗтӗм шкулӗпе 145 ача. Пирӗн класра арçын ачасем 15, хӗр ачасем 14, 29 ачаран 10 ача отличниксем, 19 ача лайӑх тата вӑтам вӗренеççӗ. Кунне пирӗн 4 е 5 урок пулать. Кашни урок 45 минут пулать, унтан переменӑсем пулаççӗ: пӗчӗк перемена—10 минут, пысӑк перемена—20 минут пулать.

Эпир пурте пионер. Пирӗн отрядра 3 звено. 1-мӗшпе 2-мӗш звенора 10-шар ача, 3-мӗшӗнче 9.

*193-мӗш хӑнӑхтару*. Çак предложенисене çырса илӗр. Хисеп ячӗсене сӑмахпа çырӑр.

Константин Васильевич Иванов 1890 çулта, майӑн 28-мӗшӗнче, Пушкӑрт республикин Пишпӳлек районӗнче (ӗлӗкхи Ӗпхӳ кӗпӗрнин Белебей уездӗнче) Слакпуç ялӗнче çуралнӑ.

8 çула çитсен, вăл ялти шкула вĕренме кĕнĕ. 1902 çулта пуçламăш шкултан вĕренсе тухнă. 1903 çулта, кĕркунне, вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне кĕнĕ. Анчах вăл унтан вĕренсе тухайман. 1907 çулхи мартăн 7-мĕшĕнче пăлханакан 1-мĕш класа салатса янипе К. В. Иванова шкултан кăларса янă.

## 29 §. Хисеп ячĕсем вĕçленни.

Хисеп ячĕсем, предложенире определени пулса, япала ятне ăнлантарса параççĕ пулсан, вĕçленмеççĕ. Ун чухне вĕсем кĕске формăллă пулаççĕ. Тулли формăллă шут хисепĕсем вĕçленеççĕ. Предложенире подлежащи, сказуемăй е дополнени пулаççĕ.

Хисеп ячĕсем нумайлă хисепре сайра пулаççĕ.

### Шут хисепĕсем вĕçленни.

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | *пĕрре* | *иккĕ* | *виççĕ* |
| К. | *пĕрре-н-ĕн* | *иккĕ-н* | *пиллĕк-ĕн* |
| П. | *пĕрре-н-е* | *икк-е* | *пиллĕк-е* |
| Тв. | *{пĕрре-н-е* <br> *{пĕрре* | *{икк-е* <br> *{иккĕ* | *{пиллĕк-е* <br> *{пиллĕк* |
| Пр. | *пĕрре-пе* | *иккĕ-пе* | *пиллĕк-пе* |
| В. | *пĕрре-ре* | *иккĕ-ре* | *пиллĕк-ре* |
| Тх. | *пĕрре-рен* | *иккĕ-рен* | *пиллĕк-рен* |

Хăш-пĕр шут хисепĕсемпе йĕрке хисепĕсем сăпат аффиксĕсене те йышăнма пултараççĕ (*иксĕмĕр, иксĕр, иккĕшĕ, иккĕмĕшĕ*). Йĕрке хисепĕсем виççĕмĕш сăпат аффиксне çеç йышăнаççĕ. Вара вĕсем вĕçленеççĕ. Вĕçленессе япала ячĕсем пекех вĕçленеççĕ.

### Сăпат аффиксĕсене йышăннă хисеп ячĕсем вĕçленни.

| | | |
|---|---|---|
| Ят | иксĕмĕр | иксĕр |
| К. | иксĕмĕр-ĕн | иксĕр-ĕн |
| П. | иксĕмĕр-е | иксĕр-е |
| Тв. | иксĕмĕр-е | иксĕр-е |
| Пр. | иксĕмĕр-пе | иксĕр-пе |
| В. | иксĕмĕр-те | иксĕр-те |
| Тх. | иксĕмĕр-тен | иксĕр-тен |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | пĕри | иккĕшĕ | тăваттăмĕшĕ |
| К. | пĕри-н | иккĕш-ĕн | тăваттăмĕш-ĕн |
| П. | пĕр-не | иккĕш-не | тăваттăмĕш-не |
| Тв. | пĕр-не | иккĕш-не | тăваттăмĕш-не |
| Пр. | пĕри-н-пе | иккĕш-ĕн-пе | тăваттăмĕш-пе |
| В. | пĕри-н-че | иккĕш-ĕн-че | тăваттăмĕш-ĕн-че |
| Тх. | пĕри-н-чен | иккĕш-ĕн-чен | тăваттăмĕш-ĕн-чен |

*194-мěш хăнăхтару.* Çак предложенисенчи хисеп ячěсем мěнле падежра тăнине кăтартса парăр.

1. Вунă çынтан пиллěкěшě ěçрен таврăнайман-ха. 2. Эпě икě тетрадь илтěм, пěрне хам валли хăвартăм, теприне юлташа патăм. 3. Вăл кăçал вуниккě тултарса вунвиççе кайрě. 4. Ултă çынтан виççěшě хулана кайрěç. 5. Тăххăртан тăваттă кăларсан, пиллěк юлать. 6. Эпě паян тăватă карандаш илтěм: виççěшне пенала хутăм, пěринпе çыратăп. 7. Виççěшě пӳрте кěчěç, тăваттăмěшě кěмерě.

*195-мěш хăнăхтару.* Хисеп ячěсене сăмахпа çырса илěр.

### ТĚЛĚНМЕЛЛЕ ХИСЕП.

37—тěлěнмелле хисеп: ăна 3, 6, 9, 12, 15, 18, 21 хут илсен, çакăн пек хисепсем пулаççě: 111, 222, 333, 444, 555, 666, 777.

*196-мěш хăнăхтару.* Хисеп ячěсене сăмахпа çырса илěр.

1. Пирěн колхозра 2 трактор, 7 косилка, 5 жнейка, 2 молотилка. 2. Январь уйăхěнче 31 кун. 3. 50 çул—çур ěмěр. 4. Эпě 12 çулта, Наçтук аппа 21 çулта. 5. Колхозра 700 гектар çěр пур, вěсенчен 550 гектарě акакан çěр. 6. Ку кěнекере 90 страница. 7. Пирěн асатте 13 çулта чухнех заводра ěçлеме пуçланă.

## 30 §. Хисеп ячěсен предложенири вырăнě.

*197-мěш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илěр. Хисеп ячěсене аялтан туртăр. Мěнле член пулнине кěскен кăтартса парăр.

опр.
Тěслěх: Вěсем ялта пилěк талăк пурăнчěç.

1. Вěсем ялта пилěк талăк пурăнчěç. 2. Эпě вунултă çула çитсен, хулана ěçлеме кайрăм. 3. Пин те тăхăрçěр çирěм пěрремěш çулта çанталăк çăвěпех уяр тăчě. 5. „Октябрь" колхозра утмăл гектар пăрçа акнă. Çитес çул сакăрвунă гектар акмалла. 6. Асатте çитмěле кайнă. 7. Кăнтăрла иртсе виççě çитрě.

Хисеп ячěсем предложенире аслă член та, кěçěн член та пулма пултараççě. Вěсем подлежащи, сказуемăй, дополнени пулаççě, пуринчен ытла определени пулаççě.

*Иккěшě хулара пурăнаççě.*
*Пирěн класра* ***вăтăр*** *ача вěренет.*
*Эпě* ***тăваттăмěш*** *класра вěренетěп.*
*Вăл* ***вуннă*** *тултарнă.*

*198-мĕш хăнăхтару.* Предложенисенче тĕл пулакан хисеп ячĕсем мĕнле член пулнине каласа парăр. Хисеп ячĕсен ыйтăвĕсене калăр.

Июнĕн вунçиччĕмĕшĕнче Япони салтакĕсен подразделенийĕ Манчжури партизанĕсене Амур хĕррине хĕссе хупăрласа илнĕ те, партизансем шăп заставăна хирĕç пирĕн пата ишсе каçма тытăннă. Ишекен партизансене японецсем пулемĕтсемпе пеме тапратнă. Çĕр çирĕм çынтан хĕрĕхĕшĕ пирĕн çырана каçса ӳкме ĕлкĕрнĕ, сакăрвуннăшĕ шыва путнă. Çав Амур урлă каçса, пирĕн пата çитнĕ партизансене перетпĕр тесе, японецсем пирĕн заставăна пеме пуçланă. Кайран шутласа пăхрăмăр та—стенара утмăл виçĕ шăтăк.

## 31 §. Хисеп ячĕсене тĕрĕс çырасси.

*199-мĕш хăнăхтару.* Статьяна вуласа тухăр. Хисеп ячĕсене мĕнле çырнине асăрхăр.

### ГВАРДЕЕЦ-ПАНФИЛОВЕЦСЕМ.

Пин те тăхăрçĕр хĕрĕх пĕрремĕш çулхи декабрь уйăхĕнче Панфилов отрядĕнчи çирĕм сакăр гвардеец пĕр чикке сыхланă.

Çапăççан-çапăççан, нимĕçсем кусем çине хĕрĕх танк яраççĕ. Çирĕм сакăр гвардеец хăраса ӳкмерĕç, вĕсем танксемпе çапăçма тытăнаççĕ. Пĕр сехет ытлашшипех вăйлă çапăçу пырать. Унтан тăшманăн çирĕм икĕ танкĕ каялла чакать. Вунсаккăрăшĕ вырăнтах юлаççĕ. Вĕсене гвардеецсем çĕмĕрсе тăкнă. Çак çапăçура гвардеец-панфиловецсем çирĕм саккăрăшĕ те пĕтеççĕ. Вĕсенчен пĕри те каялла чакман. Каялла нимĕç танкĕсем чакнă.

Тулли формăллă шут хисепĕсен сăмах варринчи хупă сасă вăраммăн илтĕнет, çавăнпа çырнă чухне икĕ хупă саспалли çыраççĕ: *пĕрре, иккĕ, виççĕ, тăваттă, пиллĕк, улттă, çиччĕ, саккăр, тăххăр, вуннă.*

Кĕске формăллă шут хисепĕсенче пĕр хупă сасă çеç пулать: *пĕр çын, икĕ пӳрт, виçĕ ручка, тăватă урапа, пилĕк пӳрне, ултă кун, çичĕ тенкĕ.*

*200-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Скобкăри сăмахсенчен кирлĕ формăри сăмаха суйласа илĕр.

1. Ку утрав çывăхне урăх (пĕрре, пĕр) çын та пыман. 2. Çак (иккĕ, икĕ) çул хушшинче эпĕ кӳршĕ яла (пĕрре, пĕр) те кайса курман. 3. (Пĕрре, пĕр) ирхине Иван сунара кайма пуçтарăннă. 4. (Пĕрре, пĕр) сапрăмăр, (иккĕ, икĕ) сапрăмăр, (виççĕ, виç) сапрăмăр, (виççĕ, виçĕ) хут сапса та шыв витмерĕ.

5. Ҫенӗкрен пӗр (вунтӑваттӑ, вунтӑватӑ) ҫулалла ҫитнӗ ача сиксе тухрӗ. 6. Лукаш юлташ: „(вуниккӗ, вуникӗ) харампыра вӗлертӗм тата ҫавӑн чухлӗ штыкпа чиксе пӑрахасшӑнччӗ",— терӗ. 7. Анюк (вунтӑххӑр, вунтӑхӑр) ҫула ҫитнӗ.

Йӗрке хисепӗсенче сӑмах тӗпӗ шут хисепӗсен тулли форминчен пулать, ҫавӑнпа кунта пур чухне те сӑмах тӗпӗнче икӗ хупӑ сасӑ пулать: *пӗрремӗш, иккӗмӗш, виҫҫӗмӗш* т. ыт. те.

***201-мӗш хӑнӑхтару.*** Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Цифрӑпа ҫырнӑ хисепсене сӑмахпа ҫырӑр.

1. Уйра хресченсем 2-мӗш хут ҫӗртме сухи тӑваҫҫӗ. 2. Макар урипе 1-мӗш картлашка ҫине пусрӗ. 3. 5-мӗш номерлӑ шахта умӗнче куллен шахтӗрсем ӗҫлеҫҫӗ. 4. 1937-мӗш ҫулхи декабрӗн 12-мӗшӗнче 190 миллион халӑх пирӗн ҫӗршывра социализм ҫӗнтернине ҫирӗплетрӗ. 5. Комсомолӑн 9-мӗш съезчӗ ячӗпе тӑракан бригада ноябрь планне 20 кун хушшинче 170 процент тултарчӗ.

### Аса илтермелли ыйтусем.

1. Мӗнле пуплев пайне хисеп ячӗсем теҫҫӗ?
2. Мӗнле хисепсем пулаҫҫӗ?
3. Хисеп ячӗсем предложенире мӗнле членсем пулаҫҫӗ?
4. Хисеп ячӗсен мӗнле ыйтусем пулаҫҫӗ?
5. Хисеп ячӗсем хӑҫан вӗҫленеҫҫӗ?

## 32 §. Местоимени.

***202-мӗш хӑнӑхтару.*** Текста вуласа тухӑр. Ятсем (япала ячӗсем, паллӑ ячӗсем, хисеп ячӗсем) вырӑнне пулнӑ сӑмахсене кӑтартӑр.

Паян пире Совет Ҫарӗнчен таврӑннӑ юлташсем хӑйсен вӑрҫӑри чаплӑ та мухтавлӑ ӗҫӗсем ҫинчен каласа пачӗҫ. Вӗсем, хӑйсен юнне шеллемесӗр ҫапӑҫса, тӑшмана ҫӗнтерчӗҫ. Колхозниксем ҫак ҫулсенче пысӑк ӗҫ тунине партипе правительство тивӗҫлипе хакларӗҫ. Ку шутра пирӗн колхоз членӗсем те пур. Акӑ, сӑмахран, Петӗр пичченех илер. Вӑл ӗҫ нормине 200 процент тултарнӑ.

Предложенире япала ячӗ, паллӑ ячӗ, хисеп ячӗ вырӑнне пулакан пуплев пайне **местоимени** теҫҫӗ.

Местоименисем япаласене е вӗсен паллисене тӳрех п ӗ л т е р м е ҫ ҫ ӗ, вӗсем ҫине к ӑ т а р т с а кӑна параҫҫӗ. Калаҫура местоименисем уйрӑм япаласене, вӗсен паллине е хисепне кӑтартаҫҫӗ.

*203-мӗш хӑнӑхтару*. Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Унтан местоименисене тупса, вӗсем мӗнле ят вырӑнне пулнине кӑтартса парӑр.

Совет ҫамрӑкӗсемшӗн телейлӗ пурнӑҫ ҫулӗ уҫӑ. Кашниех халӗ вӗренсе усӑллӑ ҫын пулма пултарать. Ан ӳркен, вӗрен те ӗҫле кӑна. Пирӗн шкулӑн таса та ӑшӑ общежити пур, пурне те лайӑх тумлантараҫҫӗ. Эпӗ тахҫанах квалификациллӗ мастер пулма ӗмӗтленнӗ. Ӗҫ резервисен училищи мана хамӑн тӗп шухӑша пурнӑҫа кӗртме пулӑшрӗ. Сирӗн колхозри ҫамрӑксене те эпӗ ФЗО шкулӗсене тата училищисене вӗренме кӗме, ҫапла пысӑк квалификациллӗ рабочисемпе ӑста мастерсем пулма чӗнетӗп,—терӗ пухӑва килнӗ ҫамрӑк.

## 33 §. Местоименисем вӗҫленни.

### 1. *Эпӗ, эсӗ, вӑл* местоименисем вӗҫленни.

Пӗрреллӗ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | эпӗ | эсӗ | вӑл |
| К. | ман-ӑн, ман | сан-ӑн, сан | ун-ӑн, ун |
| П. | ман-а | сан-а | ӑн-а |
| Тв. | ман-а | сан-а | ӑн-а |
| Пр. | ман-па | сан-па | ун-па |
| В. | ман-ра | сан-ра | ун-ра |
| Тх. | ман-ран | сан-ран | ун-ран |

Нумайлӑ хисеп

| | | | |
|---|---|---|---|
| Ят | эпир | эсир | вӗсем |
| К. | пир-ӗн | сир-ӗн | вӗсен-ӗн, вӗсен |
| П. | пир-е | сир-е | вӗсен-е |
| Тв. | пир-е | сир-е | вӗсен-е |
| Пр. | пирӗн-пе | сирӗн-пе | вӗсем-пе |
| В. | пирӗн-те, пир-те | сирӗн-те, сир-те | вӗсен-че |
| Тх. | пирӗн-тен, пир-тен | сирӗн-тен, сир-тен | вӗсен-чен |

### 2. *Ку, ҫакӑ, ҫавӑ, лешӗ* местоименисем вӗҫленни.

Пӗрреллӗ хисеп

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ят | ку | ҫакӑ, ҫак | ҫавӑ, ҫав | лешӗ, леш |
| К. | кун-ӑн, кун | ҫак-ӑн | ҫав-ӑн | леш-ӗн |
| П. | кун-а | ҫак-на | ҫав-на | леш-не |
| Тв. | кун-а | ҫак-на | ҫав-на | леш-не |
| Пр. | кун-па | ҫакӑн-па | ҫавӑн-па | лешӗн-пе |
| В. | кун-та | ҫакӑн-та | ҫавӑн-та | лешӗн-че |
| Тх. | кун-тан | ҫакӑн-тан | ҫавӑн-тан | лешӗн-чен |

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| Ят | кусем | çаксем | çавсем | лешсем |
| К. | кусен(ĕн) | çаксен(ĕн) | çавсен(ĕн) | лешсен(ĕн) |
| П. | кусен-е | çаксен-е | çавсен-е | лешсен-е |
| Тв. | кусен-е | çаксен-е | çавсен-е | лешсен-е |
| Пр. | кусем-пе | çаксем-пе | çавсем-пе | лешсем-пе |
| В. | кусен-че | çаксен-че | çавсен-че | лешсен-че |
| Тх. | кусен-чен | çаксен-чен | çавсен-чен | лешсен-чен |

***204-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Местоименисене аялтан туртса, вĕсем мĕнле падежра, хăш хисепре тăнине кăтартса парăр.

Тĕслĕх: *Вĕсем* (Ят п. н. х.) *яланах клуба çÿреççĕ.*

1. Вĕсем яланах клуба çÿреççĕ. 2. Пире чĕнмесен те, ытти çынсене чĕнме пултараççĕ. 3. Манăн шухăшăм халĕ çапла: мĕнле те пулин ку ĕçе хăвăртрах туса пĕтерес тетĕп. 4. Çунакаççи çырмине çитсен, ман лаша çултан пăрăнса çырма варрине кĕрсе кайнă вара. 5. Унăн пиччĕшĕ заводра ĕçлет. 6. Вĕсем пирĕн пата час-часах çÿреççĕ. 7. Эпĕ сирĕнпе пĕрле хулана пыратăп.

***205-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Местоименисене аялтан туртса, вĕсем мĕнле падежра, мĕнле хисепре тăнине кăтартса парăр.

1. Кусен ячĕсене эпĕ пĕлетĕп, халĕ ĕнтĕ сире те вĕсемпе кăшт паллаштарас тетĕп. 2. Эпир çÿлте выртатпăр, аялта, урапасем патĕнче, такам çÿрет. 3. Лешĕ турат çинче ярăнса ларать, куна хăй патне чĕнет, тет. 4. Хăй чарăнмасăр кулать, аллисемпе Кавĕрлене хăй патнелле кăчăк туртать, тет. 5. Пирĕн умра пысăк вăрман курăнать, ун çумĕнче аслă уй ешерет. 6. Çавсем çырлана пире те илсе кайрĕç. 7. Сирĕн çак кĕнекĕрсем хытă хупăллă.

***206-мĕш хăнăхтару.*** Текста вуласа тухăр, местоименисене кăтартса парăр.

Бригадир пире, çулма вĕренекен ачасене, лутра куракла вырăна илсе кайрĕ. Эпĕ çава тыткаласа пăхкаланă, мана анне пахчари вĕлтĕрене çулма хушкалатчĕ. Малтанах ман çава тăпра çине тăрăнса аптрататчĕ, каярахпа вара самаях вĕренсе çитрĕм, çавăнпа та халĕ эпĕ пĕр хăрамасăр çулма пырса тăтăм.

Бригадир пире пĕр ĕрете тăратрĕ те, хăй васкамасăр ерипе çулса кăтартрĕ. Унтан эпир пурте пĕр харăс çулма тытăнтăмăр. Бригадир пире çапла темиçе хут та ăнлантарса вĕрентрĕ, яланах хăй çулса кăтартса пачĕ. Пыра-киле эпир пурте чиперех çулма пуçларăмăр.

*207-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр. Местоименисем мĕнле падежра, мĕнле хисепре тăнине кăтартса парăр.

## АТАШСА КАЙНИ.

Каç пулчĕ. Васкаса утса, эпĕ шурлăх урлă каçрăм та çӳлĕрех вырăна улăхрăм. Кунтан эпĕ çывăхри пĕчĕк юман вăрманĕпе хамăрăн пысăк улăха курас вырăнне халиччен курман вырăна курах кайрăм. Эпĕ тĕлĕнсе йĕри-тавра çаврăнса пăхрăм... „Эхе-е!—тетĕп,—эпĕ ют çĕре лекнĕ иккен",—тесе шухăшлатăп та васкаса айлăмалла анатăп. Каçа юлнă хурчăкаман урлă çӳлтен хăй йăвине вĕçет. Акă, çак кĕтессе çитсен, хамăр çул çине тухатăп.

*208-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр, скобкăра тăракан местоименисене кирлĕ падежра, кирлĕ хисепре туса çырăр.

1. Ку выльăх хăваласа каякансем пулĕ, тесе шутлани (эпĕ) тĕрĕс пулмарĕ... 2. (Вăл)—ялти хресчен ачисем, ут кĕтеççĕмĕн. 3. (Эпĕ) çуллахи шăрăх вăхăтсенче лашасене каçхине çеç уя кăларатпăр, кăнтăрла (вăл) шăна-пăвансем канлĕ çисе çӳреме памаççĕ. 4. (Эпĕ) ачасене хам аташса кайни çинчен каласа патăм. 5. Вĕсем (эпĕ) ăçти çын иккенне ыйтса тĕпчерĕç те (эпĕ) ларма вырăн пачĕç. 6. Кĕтмен çĕртен çĕр тĕттĕмĕнче турă е кăвак лаша пуçĕ пырса курăнать те (эпĕ) çине тинкерсе пăхать.

*209-мĕш хăнăхтару.* Çак сыпăка вуласа тухăр, местоименисене тупса, тетрадьсем çине çырса илĕр.

Кам вăл пионер? Камсене пионер тесе калаççĕ? Акă пĕрпĕр учĕнăй хăйĕн ĕçĕпе наукăна малалла ярать, çав çын наука пионерĕ пулать. Патша вăхăтĕнче революци тăвасшăн хăйсене хĕрхенмесĕр ĕçленĕ çынсем — революци пионерĕсем пулаççĕ. „Пионер" сăмах—малта пыракан, çĕнĕ çул шыраса уçса тупакан тенине пĕлтерет. Мĕнле пулмалла пионера кĕнĕ ача? Пионерăн аван вĕренмелле, вăл ĕçре хастар пулмалла, ытти ачасене ертсе пымалла. Вăл хăйĕн ӳт-тирне, шăмшакне çирĕп ӳстермелле, йывăрлăхсенчен хăрамалла мар. Пионерăн лозунгĕ çакă: Ленин—Сталин ĕçĕшĕн кĕрешме хатĕр пул! — Яланах хатĕр!—ответлет вăл.

Эсир паян чаплă сăмах паратăр, ун хыççăн эсир, Ленин ачисем, комсомол шăллĕсем пулатăр. Чăн-чăн пионерсем пулма сире сĕнетĕп. Сывă пултăр Ленин—Сталин ĕçĕ!.. (*М. Труб.*)

## 34 §. Местоименисен предложенири вырăнĕ.

Предложенире местоименисем ят падежĕнче пулсан, подлежащи, ытти падежсенче пулсан, кĕçĕн членсем пулаççĕ.

*Эпĕ шкула ирех çитрĕм.*
*Эпир час-часах вăрмана çӳретпĕр.*
*Вăл манпа пĕрле хулана пычĕ.*

*Юлташ* ***манран*** *лайăхрах вĕренет.*
*Аппа* ***мана*** *кĕнеке вуласа пачĕ.*
***Ман*** *шăллăм вуланине итлесе ларать.*

Кунта *эпĕ, эпир, вăл*—подлежащисем, *манпа пĕрле, манран, мана*—дополненисем, *ман*—определени.

***210-мĕш хăнăхтару.*** **Çак текста вуласа парăр. Местоименисем мĕнле член пулнине кăтартса парăр.**

Мана кăçал пуçласа колхоз ĕç кĕнеки пачĕç. Эпĕ уншăн пит савăнтăм. Вăл кĕнеке çине, эпĕ тунă ĕçсене хакласа, хĕрĕх ĕçкунĕ çырнă. Эпĕ ку ĕçсене Чĕкеç ятлă лашапа ĕçлесе турăм.

Эпĕ суворовла ир тăма вĕреннĕ. Хăвăрт пит-куçа çуса тумланатăп та, Чĕкеçе кӳлсе, уя тухса каятăп. Кун каçиччен темиçе лав тислĕк тăкатăп, çĕрулми лартма, ытти ĕçсене тума та пулăшатăп.

Малтанах Чĕкеç мана итлеместчĕ. Эпĕ ăна итлеменшĕн çапман: ачашласа итлекен турăм. Халĕ, ăна чĕнсенех, вăл ман патăма васкаса пырать.

## 35 §. Местоименисене тĕрĕс çырасси.

Сăпат местоименийĕсене: *эпĕ, эсĕ, вăл, эпир, эсир, вĕсем* çыраççĕ.

***211-мĕш хăнăхтару.*** **Çак статьяна çырса илĕр. Пуçламăш формăра панă местоименисене кирлĕ падежра, кирлĕ хисепре туса çырăр.**

### ПĔЧĔКÇĔ ХĔРАЧА ПУЛĂШРĔ.

Пĕр ял тавра тăшман темиçе мина хирĕ туса хăварнă. Çав хăрушă вырăнсене кĕске срокра тасатма лейтенант (эпĕ) виçĕ сапёр пачĕ. Ку хăрушă вырăнсене миноискательсемпе шыраса çӳрес пулсан, (эпĕ) задачăна вăхăтра пурнăçа кĕртейрес çукчĕ. Кун пек чухне (эпĕ) нимĕçрен çăлăнса юлнă ял çыннисем çул кăтартса параканччĕ. (Эпĕ) халĕ те (вăл) калаçса пăхас терĕм.

(Эпĕ) çуннă пӳрт пĕрени çинче ларакан ватă украинец патне пытăмăр та сăмах пуçларăмăр. Çак вăхăтра улмуççисем хушшинчен пĕр вунă-вунпĕр çулхи хĕрача тухрĕ те (эпĕ) çине тинкерсе пăхрĕ, вара çапла каларĕ:

— (Эпĕ) нимĕçсем минăсем ăçта лартнине пĕлетĕп. Кирлĕ пулсан, (эсĕ) пĕтĕмпех кăтартса парам,—терĕ.

Вара (вăл) кăтартнипе (эпĕ) хамăра панă задачăна час пурнăçларăмăр.

***212-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Местоимени-сен пуçламăш формисене скобкăна кĕртсе çырăр.

Тĕслĕх: *Юлташсем мана (эпĕ) театра чĕнчĕç.*

1. Пĕррехинче вăл пиччĕшĕпе пĕрле театрта пулнă. 2. Манăн юлташ сумкине ман çумма хучĕ. 3. Пирĕн вăрмаҥ хĕррине пухăннă танксен моторĕсем шавлама пуçларĕç. 4. Ăна пулăшма çитсен, эпир унăн йĕри-тавра гитлеровецсен виллисем вырт-нине куртăмăр. 5. Класри юлташĕсем ăна пурте хисепленĕ. 6. Вăл приказа вуласа тухсан, вĕсем, пирĕн кăмăлăмăрсене уçса, сăмах каларĕç. 7. Вĕсен ачи яланах тăрăшса вĕренет. 8. Пире кунăн сăмахĕсем питĕ килĕшрĕç. 9. Эпир вĕсемпе пĕрле ĕçлерĕмĕр. 10. Эпĕ сире кĕтсе тăтăм. 11. Эпĕ сирĕн юл-ташăра тĕл пултăм.

### Аса илтермелли ыйтусем.

1. Местоимени тесе мĕнле пуплев пайне калаççĕ?
2. Местоименисем предложенире мĕнле член пулаççĕ?
3. *Эпĕ, эсĕ* местоименисем мĕнле улшăнаççĕ?
4. *Вăл* местоимение вĕçлесе парăр.
5. *Эсĕ* местоименипе, ăна тĕрлĕ падежра лартса, виçĕ предложени тăвăр.

## 36 §. Глагол.

(Аса илни.)

Инçетре кайăк сасси **илтĕнет.**
Эпир малалла **утрăмăр.**
Аслă çулпа лавсем **пыраççĕ.**
Ачасем шыва кĕме **кайнă.**

Çак предложенисенчи глаголсене кăтартса парăр. Вăл глаголсем мĕне пĕлтереççĕ? Вĕсен ыйтăвĕ мĕнле? Предложенире мĕнле член пулаççĕ?

***213-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Глаголсене кăтартса парăр.

### КОЛХОЗРИ ХĔРŸЛЛĔ ĔÇ.

Колхозниксем паян ирех хире тухрĕç. Пурте хаваслă, пу-риҥ çинче те хĕвел шевлисем выляççĕ. Нумай пулмасть вĕсем улăхра утă çулчĕç. Паян вĕсем тырă вырма тытăнаççĕ.

Колхозра ĕç питĕ ăнăçлă ырать, мĕншĕн тесен халĕ пур ĕçе те машинăпа ĕçлеççĕ. Комбайн тырра вырать, çапать, сă-вăрать. Колхоз хирĕнче халăх вĕлле хурчĕ пек кĕшĕлтетет. Пурте ăмăртуллă ĕçлеççĕ. Колхоз колхозпа, бригада бригадăпа ăмăртать. Пурте мала тухасшăн тăрăшаççĕ.

*214-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Глаголсене тетрадьсем çине çырса илĕр.

## ВĔÇСЕ КИЛЧĔ ÇУРКУННЕ.

Аслă чаплă мухтавпа
вĕçсе килчĕ çуркунне:
килчĕ çĕршыв юрласси,
мĕнпур чĕрчун савăнасси.
Вăл колхоз хирĕсене
пĕтĕм чунтан юратать,
лăпка-лăпка вĕсене
хĕл ыйхинчен вăратать.

Пирĕн савнă çĕршыва
чĕрĕлĕх шывне ĕçтерет,
тĕрлĕ çырла çимĕçпе
йывăç-курăк ӳстерет.
Усал, тискер кун-çулĕ
хĕлпе сивĕ çанталăк—
унтан анчах хăраççĕ,
тĕттĕм çĕре тараççĕ.

(*Н. Шелепи*)

*215-мĕш хăнăхтару.* Çак глаголсене çырса илнĕ чух юпа туса, япала пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçнине кăтартаканнисене пĕр çĕре, тĕрлĕ сасăсене кăтартаканнисене тепĕр çĕре çырăр.

Чупать, кĕмсĕртетет, утать, чăнкăртатать, шăхăрать, сикет, шаккать, улать, шăвать, кăшкăрать, шавлать, пырать, çӳрет, тăнкăртатать, чăмпăлтатать, сĕрлет, каять, чашкăртатать, кĕрлет, тарать, хыпаланать, çывхарать, çатăртатать.

*216-мĕш хăнăхтару. Кам? мĕн?* ыйтусем парса, çак глаголсемпе усă курса, предложенисем тăвăр: *çутатать, пĕçертет, ăшăтать, шавлать, кашлать, кĕриклетет, кĕçенет, кăтăклать, вĕрет, мĕкĕрет, макăрать, вĕçет, çиçет.*

*217-мĕш хăнăхтару.* Ку япаласем мĕн тунине çырса парăр.

Çил ... Çумăр ... Аслати ... Вăрман ... Шыв ... Çиçĕм ... Уйăх ... Сунарçă... Лаша ... Йытă ...

*218-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Вăл предложенисенчи глаголсене кăтартăр.

1. Вăрмансем, улăхсем илемленеççĕ. 2. Ирхине курăксем çине сывлăм ӳкнĕ. 3. Хирте тăрисем юрлаççĕ, хуртсем те пыл пуçтараççĕ. 4. Çанталăк ăшă тăрать. 5. Ĕç хыççăн çынсем канаççĕ. 6. Ачасем урок хатĕрлеççĕ. 7. Уяв кунĕсем çитрĕç. 8. Эпĕ çĕнĕ кĕнекесем илтĕм. 9. Пурте театра кайма пуçтарăнчĕç.

## 37 §. Глаголсен предложенири вырăнĕ.

Глаголсем предложенире сказуемăй пулаççĕ.

**Кашлать, шавлать** сĕм вăрман.
Пурте илемлĕ **тумланнă.**
Урамра ачасем **выляççĕ.**

*219-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Кашни сăмах предложенин мĕнле членĕ тата мĕнле пуплев пайĕ пулнине асăрхăр.

1. Вăрманта пăшал сасси янраса кайрĕ.
2. Тепĕр кунне эпĕ çыру илтĕм.
3. Урамра пĕр сас-чĕвĕ те илтĕнмест.
4. Ачасем библиотекăна кайрĕç.
5. Хĕвел çав тери хĕртсе пăхать.
6. Ешĕл çерем çинче хурсем çӳреççĕ.
7. Вĕсем хулана час-часах каятчĕç.

## 38 §. Глаголсен сăпачĕсем.

1) Глаголсем предложенире мĕнле улшăнаççĕ? Тĕслĕхсем илсе кăтартăр.

2) Глаголсен мĕнле сăпат аффиксĕсем пулаççĕ? Çак глаголсене сăпатласа парăр, вĕсен сăпат аффиксĕсене кăтартса парăр: *вула, тул, çыр, ил, сĕн.*

Глаголăн сăпачĕсем виççĕ: 1-мĕш, 2-мĕш, 3-мĕш сăпат.

1-мĕш сăпатра калаканни хăйне **эпĕ** тет.

*Эпĕ çыратăп, эпĕ вулатăп.*

Нумайлă хисепре калакансем хăйсене **эпир** теççĕ.

*Эпир паян çыратпăр, вулатпăр.*

2-мĕш сăпатра калакан хăйпе калаçакана **эсĕ** тет.

*Эсĕ, Петĕр, мĕн ĕçлетĕн?*

Нумайлă хисепре калакан хăйпе калаçакансене **эсир** тет.

*Эсир паян мĕн ĕçлетĕр?*

3-мĕш сăпатра калакан урăх çын çинчен **вăл** тет.

*Вăл паян питĕ хытă ĕçлет.*

Нумайлă хисепре урăх çын çинчен **вĕсем** теççĕ.

*Вĕсем хулана каяççĕ.*

3-мĕш сăпатри глаголсемпе япала ячĕсем **те** пулаççĕ.

*Ачасем шкулта вĕренеççĕ.*

Чăваш чĕлхинче местоименисене каламасан та, глаголсен сăпачĕ паллă: вулатăп, çыратăн, ĕçлет.

*220-мĕш хăнăхтару.* Çак сăвва вуласа тухăр. Пĕрремĕш сăпатри глаголсене кăтартса парăр.

### ÇӲÇЕ.

Пур йывăçран маларах
эп чечеке ларатăп.
Çут пурçăн пек шап-шурă
шурă кăчăк кăларатăп.
Хĕл сиввинчен хăраса,
тĕттĕм çĕрте пурăнса,
халтан кайнă пыл хуртне
малтан эпĕ чĕртетĕп.

*221-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Глаголсене местоименисемпе пӗрле иккӗмӗш е виҫҫӗмӗш сӑпата куҫарса ҫырӑр.

Эпӗ час-часах вӑрмана ҫӳретӗп. Унта, тунката ҫине ларса, кайӑксен юррисене итлетӗп. Кайӑкӗ ҫине пӑхатӑп, вӑл мӗн тунине сӑнатӑп. Ларсан-ларсан, вӑрман тӑрӑх ҫӳретӗп. Кӑмпа тататӑп, ҫырла вӑхӑтӗнче ҫырла тататӑп. Вӑрманта тӗрлӗ йывӑҫсем куратӑп. Эсир вӑрмана ҫӳретӗр-и? Вӑрман илемне куратӑр-и?

## 39 §. Глаголсен вӑхӑчӗсем.

*222-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак тӗслӗхсене вуласа тухӑр. Глаголсем хӑш вӑхӑтра тӑнине каласа парӑр.

1. Мухтанмастӑп, вӗҫместӗп
хитре тесе сӑнӑмпа.
Иртен-ҫӳрен ҫынсене
тӗлӗнтереп сӑввӑмпа.

2. Санӑн юнна ӗҫекен
тӑшман сӑнни хуҫӑлчӗ.
Сана ирӗк янӑрама
аслӑ тӗнче уҫӑлчӗ.

Глаголсем ӗҫ хӑш вӑхӑтра: каланӑ чухне, каланӑ хыҫҫӑн е каличчен пулнине кӑтартаҫҫӗ.

Каланӑ чухне пулакан ӗҫе хальхи вӑхӑтри глагол кӑтартса парать: *вулатӑп, вӗренетӗп.*

Каличчен пулнӑ ӗҫе иртнӗ вӑхӑтсенчи глагол кӑтартса парать: *вуларӑм, вуланӑ, вулаттӑм, вуланӑччӗ; вӗрентӗм, вӗреннӗ, вӗренеттӗм, вӗреннӗччӗ.*

Каланӑ хыҫҫӑн пулмалли ӗҫе пулас вӑхӑтри глагол кӑтартса парать: *вулӑп, вӗренӗп.*

*223-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак глаголсене, аялта панӑ тӗслӗхпе усӑ курса, хальхи вӑхӑтра, пулас вӑхӑтра, иртнӗ вӑхӑтсенче лартса ҫырӑр.

*Ҫыр, ӗҫле, лар, юрла, вӗрен, вула, кай, ҫӳре, кан, туп.*

Т ӗ с л ӗ х:

| Глаголсен тӗп форми | Глаголӑн хальхи вӑхӑчӗ | Глаголӑн пулас вӑхӑчӗ | Глаголӑн иртнӗ вӑхӑчӗсем |
|---|---|---|---|
| *ҫыр* | *ҫыратӑп* | *ҫырӑп* | *ҫыртӑм, ҫырнӑ*<br>*ҫыраттӑм, ҫырнӑччӗ* |
| *ӗҫле* | *ӗҫлетӗп* | *ӗҫлӗп* | *ӗҫлерӗм, ӗҫленӗ*<br>*ӗҫлеттӗм, ӗҫленӗччӗ* |

*224-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫырса илӗр. Глаголсен вӑхӑчӗсене пӗр саспаллипе (хальхи вӑхӑта—*х*, пулас вӑхӑта—*п*, иртнӗ вӑхӑта—*и* саспаллипе) кӑтартӑр.

1. Игнатьев унталла-кунталла ҫаврӑнса пӑхать те самолётӑн хӑш-пӗр ҫӗмӗрӗлнӗ пайӗсене асӑрхать. 2. Герой ятне илсе, чӑвашсен тӗп хулине—Шупашкара таврӑнӑпӑр. 3. Вӗсен батальонӗ ҫумне тепӗр рота хушӑнчӗ. 4. Чӑваш халӑхӗн ывӑлӗ тӑшман пуҫӗ ҫине пӗр хӗрхенмесӗр вилӗм вучӗ тӑкать. 5. Яла кино кӑтартакансем килнӗ. 6. Вӑл вӑхӑтра эпир пӗр яла ҫитнӗччӗ те канма выртнӑччӗ. 7. Эпир вӗсем патне час-часах ҫӳреттӗмӗр, вӗсем те пирӗн пата ҫӳретчӗҫ. 8. Ҫынсем хушмасӑрах ӗҫе тухӗҫ, ырми-канми ӗҫлӗҫ.

*225-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Иртнӗ вӑхӑтри глаголсене аялтан туртӑр.

## ИРХИНЕ.

Эпӗ ирех тӑтӑм. Хӗвел тухнӑччӗ ҫеҫ. Тӳпере пӗр пӗлӗт татӑкӗ те курӑнмасть. Пӗтӗм ҫанталӑк ялтӑртатса тӑрать. Эпӗ пахчана тухрӑм та уткаласа ҫӳретӗп. Ҫӳлте тӑрисем юрлаҫҫӗ. Эпӗ картуза хыврӑм, пӗтӗм кӑкӑрпа уҫҫӑн сывлатӑп. Ун пек лайӑх ир ку эрнере пулманччӗ.

*226-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак планпа „Ҫуркунне" ятлӑ сочинени ҫырса парӑр. Вӑл сочиненире глаголсем хальхи вӑхӑтра пулччӑр.

1. Ҫырмасенче мӗн пулать?
2. Йывӑҫ-курӑксем мӗнле улшӑнса пыраҫҫӗ?
3. Тӗрлӗ вӗҫен кайӑксене мӗнле кӗтсе илеҫҫӗ?
4. Хурт-кӑпшанкӑсем мӗн тӑваҫҫӗ?
5. Колхозниксем ҫуркунне мӗн тӑваҫҫӗ?

*227-мӗш хӑнӑхтару.* Предложенисене вуласа тухӑр. Пулас вӑхӑтри глаголсене кӑтартӑр.

1. Ҫуллахи шӑрӑх кунсем ҫитӗҫ, тӗрлӗ ҫимӗҫсем те пиҫсе ҫитӗҫ. 2. Харӑс-харӑс ҫӗкленсе, кӗрӗс-кӗрӗс сикӗпӗр, ҫитес тенӗ вырӑна ҫитме пулнӑ—ҫитӗпӗр. 3. Ирех тӑрӑпӑр та вӑрмана кайӑпӑр. 4. Эсӗ ӳкерчӗксем тӑвӑн, эпӗ статьясем ҫырӑп. 5. Вӑл малтан кайӗ, ыттисем кайран пырӗҫ. 6. Вӗсем кӗнеке вулӗҫ, эпир ҫырӑпӑр. 7. Эсир утӑр, вӗсем сирӗн хыҫҫӑн пырӗҫ.

*228-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Иртнӗ вӑхӑтри глаголсене пулас вӑхӑтпа улӑштарӑр.

Хӗвел хуллен анса ларчӗ. Хӗрлӗ хӗмлӗ хӗвеланаҫӗ майӗпен шупкалчӗ, сӳнчӗ. Тавралӑх сисӗнкӗсӗр тӗттӗмленчӗ. Са-

паланчăк çумăр пĕлĕчĕсем хушшинчен янкăр кăвак тӳпе уçăлса юлчĕ те, çутă çăлтăрсем курăнма тытăнчĕç.

*229-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна вуласа тухăр. Глаголсем хăш вăхăтра тăнине калăр.

## ВĂРМАНТА.

Эпир асаннепе вăрмана кĕрсе кайрăмăр. Вăрманта кайăксем юрлаççĕ, чĕвĕлтетеççĕ. Шăпчăк хăй юррине шăрантарать. Шапасем ура айĕнче сиккелеççĕ. Йывăç тункатисем патĕнче çĕленсем явкаланса выртаççĕ. Вĕсем шапасене сыхласа выртаççĕ. Мулкач сиккелесе иртсе каять.

Вăрманта çырласем пиçсе çитме пуçланă. Эпир асаннепе çырла пуçтартăмăр. Çырла пуçтарнă чухне эпĕ калта кӳртăм. Вăл, манран хăраса, шĕшкĕ тĕми айне кĕрсе кайрĕ.

*230-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Скобкăри глаголсене хальхи вăхăтра туса çырăр.

1. Аслă çул тăрăх лавсем (пыр). 2. Çуна тупанĕсем хытă юр çинче (чакăртат). 3. Учĕсем (тулхăр). 4. Çĕр тĕттĕмленсе (çит). 5. Сивĕ çил (вĕр). 6. Хытă юр пĕрчисем пите йĕп пек (тир). 7. Инçетре хăй çути (курăн). 8. Улăхра колхозниксем утă (çул). 9. Атăл пăрĕ (тасал).

*231-мĕш хăнăхтару.* Хăвăртан шухăшласа пĕчĕк калав çырăр. Глаголсене иртнĕ вăхăтра çеç лартăр. Калавăн пуçламăшĕ çапла: „Тĕттĕмленсе те çитрĕ, Петĕрпе Иван пулăран таврăнаймарĕç. Килтисем каçхи апата та ларчĕç“...

*232-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяри глаголсене пулас вăхăтра туса çырса илĕр.

## ВĔРЕНӲ ÇУЛĔ ПĔТРĔ.

Паян шкулта юлашки вĕренӳ кунĕ. Картинăсене, плакатсене, картăсене стенасем çумĕнчен пуçтартăмăр та шкапа хутăмăр. Чечексене, ещĕксем çинчен кăларса, йăрансем çине лартрăмăр. Шкулăн сад пахчине йĕркелерĕмĕр. Библиотекăри кĕнекесене тĕрĕслерĕмĕр, пĕтĕм вĕренӳ кĕнекисене пăхса тухрăмăр. Унтан каникул вăхăтĕнче шкул пахчине пăхма дежурнăйсен списокне турăмăр, тата çулла вуламалли кĕнекесен ячĕсене çырса илтĕмĕр.

*233-мĕш хăнăхтару.* Çак калава малалла çырăр. Çырнă чухне хальхи вăхăтри тата иртнĕ вăхăтри глаголсемпе усă курăр. Ун пуçламăшĕ çапла: „Эпĕ вăрантăм та итлетĕп: йытă вĕрет“...

## 40 §. Глаголсем сăпатланни.

Глаголсем сăпат тăрăх, хисеп тăрăх улшăннине **сăпатланни** теççĕ. Глаголсем икĕ формăпа сăпатланаççĕ: пурлă тата çуклă формăпа.

Пурлă формăри глаголсем ĕç тунине, пулнине кăтартаççĕ. Çуклă формăри глаголсем ĕç туманнине, пулманнине кăтартаççĕ.

***234-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяри пурлă формăри глаголсене, унтан çуклă формăри глаголсене кăтартса парăр.

### ÇУРКУННЕ ÇИТЕТ.

Çĕмĕртсем сарăлса чечеке лараççĕ. Хурăнсем хăйсен ешĕл çулçисене сараççĕ. Ирĕн-каçăн сивĕтмест. Хăмла çырли аврисем те ешереççĕ. Пĕри те ахаль тăмасть. Шăнкăрчсем те хăйсен йăвисене йышăнаççĕ: чĕнмен хăнасене — çерçисене йăвисенчен хăвалаççĕ. Лĕпĕшсем вĕçме пуçларĕç, пыл хурчĕсем пирвайхи чечексенчен пыл пухма каяççĕ.

***235-мĕш хăнăхтару.*** Текста çырса илĕр. Глаголсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр. Глаголсем хăш сăпатрине, мĕнле формăра тăнине калăр.

Çумăр чĕреслетсе нумайччен çуса тăмарĕ, часах иртсе кайрĕ. Кай енчен пĕлĕт çуталса та килчĕ. Кăшт тăрсан, хĕвел те курăнчĕ. Хура пĕлĕт айĕнчен тухса, кулса янă пек пăхать. Хулăн пĕлĕтсем мал еннелле купаланса шурĕç. Кăвак пĕлĕт, çумăр хыççăн тасалса çăвăннă пек, тата та кăвакрах, çутăрах. Улăх урлă асамат кĕперĕ ўкрĕ. Унта-кунта шыв кўлленчĕкĕсем пур. Иртсе кайнă çумăр хыççăн хуллен аслати сасси илтĕнет. Ачасем çумăр иртсе кайсанах выляма тухрĕç.

***236-мĕш хăнăхтару.*** 235-мĕш хăнăхтарури ĕçех тăвăр.

### ЫРАШ ПУССИНЧЕ.

Пирĕн ял хыçĕнченех сарлака пусă пуçланса каять. Тепĕр çич-сакăр кунтан пулса çитекен ыраш халĕ пĕр хускалмасăр ларать. Сывлăш ăшă та нўрлĕ. Ыраш çинче путенесем авăтаççĕ. Сенкер тўпе тăри юррипе янăраса тăрать, çул хĕрринче тĕрлĕ тĕслĕ чечексем ыра шăршă сарса савăнтараççĕ. Ыраш, шухăша кайнă пек, шăппăн ларать.

## Хальхи вăхăтпа пулас вăхăт.

Хальхи вăхăт ĕç халĕ пулнине, тата малалла пулассине те пĕлтерет.

Тĕслĕх: ***Эпĕ вулатăп; эпĕ ку кĕнекене ыран вулатăп.***

Пулас вăхăт ĕç малалла пулассине çеç пĕлтерет.

Тĕслĕх: ***Эпĕ ку кĕнекене вулăп.***

## Хальхи вăхăтпа пулас вăхăтри глаголсем сăпатланни.

| Сăпатсем | Хальхи вăхăт | | |
|---|---|---|---|
| | **Пĕрреллĕ хисеп** | | |
| | **Пурлă форма** | | |
| 1 | *çыр-ат-ăп* | *итле-т-ĕп* | *ат-ăп, т-ĕп* |
| 2 | *çыр-ат-ăн* | *итле-т-ĕн* | *ат-ăн, т-ĕн* |
| 3 | *çыр-ать* | *итле-т* | *ать, т* |
| | **Çуклă форма** | | |
| 1 | *çыр-мас-т-ăп* | *итле-мес-т-ĕп* | *мас-т-ăп*<br>*мес-т-ĕп* |
| 2 | *çыр-мас-т-ăн* | *итле-мес-т-ĕн* | *мас-т-ăн*<br>*мес-т-ĕн* |
| 3 | *çыр-мас-ть* | *итле-мес-т* | *мас-ть*<br>*мес-т* |
| | **Нумайлă хисеп** | | |
| | **Пурлă форма** | | |
| 1 | *çыр-ат-пăр* | *итле-т-пĕр* | *ат-пăр, т-пĕр* |
| 2 | *çыр-ат-ăр* | *итле-т-ĕр* | *ат-ăр, т-ĕр* |
| 3 | *çыр-аç-çĕ* | *итле-ç-çĕ* | *аç-çĕ, ç-çĕ* |
| | **Çуклă форма** | | |
| 1 | *çыр-мас-т-пăр* | *итле-мес-т-пĕр* | *мас-т-пăр*<br>*мес-т-пĕр* |
| 2 | *çыр-мас-т-ăр* | *итле-мес-т-ĕр* | *мас-т-ăр*<br>*мес-т-ĕр* |
| 3 | *çыр-маç-çĕ* | *итле-меç-çĕ* | *маç-çĕ*<br>*меç-çĕ* |

| Сăпатсем: | Пулас вăхăт | | |
|---|---|---|---|
| | **Пурлă форма** | | |
| | **Пĕрреллĕ хисеп** | | |
| 1 | *çыр-ăп* | *итл-ĕп* | *ăп, ĕп* |
| 2 | *çыр-ăн* | *итл-ĕн* | *ăн, ĕн* |
| 3 | *çыр-ĕ* | *итл-ĕ* | *ĕ* |
| | **Çуклă форма** | | |
| 1 | *çыр-м-ăп* | *итле-м-ĕп* | *м-ăп, м-ĕп* |
| 2 | *çыр-м-ăн* | *итле-м-ĕн* | *м-ăн, м-ĕн* |
| 3 | *çыр-м-ĕ* | *итле-м-ĕ* | *м-ĕ* |
| | **Пурлă форма** | | |
| | **Нумайлă хисеп** | | |
| 1 | *çыр-ăп-ăр* | *итл-ĕп-ĕр* | *ăп-ăр, ĕп-ĕр* |
| 2 | *çыр-ăр* | *итл-ĕр* | *ăр, ĕр* |
| 3 | *çыр-ĕç* | *итл-ĕç* | *ĕç* |
| | **Çуклă форма** | | |
| 1 | *çыр-м-ăп-ăр* | *итле-м-ĕп-ĕр* | *м-ăп-ăр, м-ĕп-ĕр* |
| 2 | *çыр-м-ăр* | *итле-м-ĕр* | *м-ăр, м-ĕр* |
| 3 | *çыр-м-ĕç* | *итле-м-ĕç* | *м-ĕç* |

Хальхи вăхăт аффиксĕ—*ат-ет*, ун çумне сăпат аффиксĕсем *ăп-ĕп*, *ăн-ĕн*, *пăр-пĕр*, *ăр-ĕр* хушăнаççĕ. Нумайлă хисепĕн виççĕмĕш сăпатĕнче *т* сасă *ç* сасăпа пĕрпекленет, вара *ат-çĕ*, *ет-çĕ* вырăнне *аç-çĕ*, *еç-çĕ* пулать. Çуклă формăра глагол тĕпĕ çумне çуклăха кăтартакан *масмес* аффикс хушăнать.

Пулас вăхăтри глаголăн вăхăт тăвакан аффиксĕ çук, сăпат аффиксĕсем тӳрех глагол тĕпĕ çумне хушăнаççĕ. Çуклăха кăтартакан аффикс — *м*.

## 41 §. Глаголсен иртнĕ вăхăчĕсем.

Чăваш чĕлхинче иртнĕ вăхăт тăваттă: курса иртнĕ вăхăт, курмасăр иртнĕ вăхăт, хальхи умĕнхи вăхăт, иртнĕ умĕнхи вăхăт. Вĕсем ĕç тĕрлĕ иртнĕ вăхăтра пулнине пĕлтереççĕ.

Тĕслĕх: *Эпĕ ку кĕнекене вуларăм. Эпĕ ку кĕнекене вуланă. Эпĕ ку кĕнекене вулаттăм. Эпĕ ку кĕнекене вуланăччĕ.*

### 1. Курса иртнĕ вăхăтри глагол сăпатланни.

| | **Пурлă форма** | | **Çуклă форма** | |
|---|---|---|---|---|
| | | Пĕрреллĕ хисеп. | | |
| 1 сăпат | вула-р-ăм | итле-р-ĕм | вула-ма-р-ăм | итле-ме-р-ĕм |
| 2 сăпат | вула-р-ăн | итле-р-ĕн | вула-ма-р-ăн | итле-ме-р-ĕн |
| 3 сăпат | вула-р-ĕ | итле-р-ĕ | вула-ма-р-ĕ | итле-ме-р-ĕ |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1 сăпат | вула-р-ăм-ăр | итле-р-ĕм-ĕр |
| 2 сăпат | вула-р-ăр | итле-р-ĕр |
| 3 сăпат | вула-р-ĕç | итле-р-ĕç |
| | вула-ма-р-ăм-ăр | итле-ме-р-ĕм-ĕр |
| | вула-ма-р-ăр | итле-ме-р-ĕр |
| | вула-ма-р-ĕç | итле-ме-р-ĕç |

Курса иртнĕ вăхăта ĕçе калакан хăй тунине пĕлтерме е ĕç пулса иртнине хăй куçĕпе курнă пулсассăн, калаççĕ. Ку вăхăт глаголăн тĕпĕ çумне *р* е *т* аффикс хушăннипе пулать. Глагол тĕпĕ *л*, *н* е *р* сасăпа пĕтет пулсан, пурлă формăра *т* аффикс хушăннипе пулать; ытти сасăсемпе пĕтет пулсан, *р* аффикс хушăннипе пулать (*кай-р-ăм*, *ывăн-т-ăм*, *кил-т-ĕм*, *çӳре-рĕ-м*); çуклă формăра пур чухне те *р* аффикс хушăнать (*кай-ма-р-ăм*, *ывăн-ма-р-ăм*, *кил-ме-р-ĕм*, *çӳре-ме-р-ĕм*).

*237-мӗш хӑнӑхтару.* Хӑвӑртан шухӑшласа, тӗрлӗ иртнӗ вӑхӑтри глаголсемпе предложенисем ҫырса парӑр.

*238-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна вуласа тухӑр. Курса иртнӗ вӑхӑтри глаголсем хӑш сӑпатра, мӗнле хисепре тӑнине кӑтартса парӑр.

## ҪУЛЛАХИ КАҪ.

Шӑрӑх иртрӗ, сулхӑн ҫапрӗ. Кун каҫ еннелле сулӑнчӗ. Кӗтӳри выльӑх-чӗрлӗхсем картана кӗчӗҫ. Ҫулакансем ҫаран ҫинчен килӗсене таврӑнчӗҫ. Хӗвеланӑҫ тӗттӗмленет. Каҫхи вӑхӑт ҫитесси те инҫе мар. Хӗвеланӑҫӗнчен йӑваш ҫил вӗрчӗ, ҫавӑнтах тата лӑпланчӗ. Пӗр сас-чӗвӗ те илтӗнмест. Сайра-хутра ҫеҫ йытӑ вӗрни илтӗнкелет. Вӗри тӑпра сивӗнчӗ. Ҫӗр ҫине сывлӑм ӳкрӗ.

*239-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Курса иртнӗ вӑхӑтра тӑракан глаголсене аялтан туртӑр. Хӑш сӑпатра, мӗнле хисепре тӑнине каласа парӑр.

1. Пире шавлани, кӑшкӑрашни илтӗнсе кайрӗ. 2. Хӗвел ерипен вӑрман хыҫне пытанчӗ. 3. Эпир ӗнер вӑрмана кайрӑмӑр. 4. Акӑ ӗнтӗ пӗлӗт ҫинче пирвайхи ҫӑлтӑр курӑнчӗ. 5. „Вӑрман витӗр тӳррӗн килме хӑрарӑм, тавра ҫулпа кайрӑм“,— терӗ вӑл. „Мӗнрен хӑрарӑн вара?“—тесе ыйтрӗ унӑн юлташӗ.

*240-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна вуласа тухӑр. Курса иртнӗ вӑхӑтри глаголсене ҫырса илӗр.

## АСЛАТИЛЛӖ ҪУМӐР ХЫҪҪӐН.

Аслатиллӗ ҫумӑр ҫывхарать. Хӗвел пӗлӗт айне пытанчӗ. Йывӑҫ ҫулҫисем ҫил вӗрнипе ҫатӑлтатаҫҫӗ. Ҫумӑр пӗрчисем ӳкме пуҫларӗҫ. Ҫиҫӗм ҫиҫрӗ, аслати кӗмсӗртеттерсе ячӗ. Ҫумӑр витререн янӑ пек ҫума пуҫларӗ. Ҫур сехетрен хура пӗлӗтсем сирӗлчӗҫ. Ҫумӑр ҫума чарӑнчӗ. Ҫул тӑрӑх шыв юхать. Ҫерҫисем чӗвӗлтетме тытӑнчӗҫ. Ача-пӑчасем урама тухрӗҫ. Вӗсем кӳлленсе тӑракан шыв ҫинче чупса ҫӳреҫҫӗ. Ешӗл курӑксем тата ешӗлтерех курӑнаҫҫӗ. Хур-кӑвакалсем шывра шӑпӑлтатаҫҫӗ.

### 2. Курмасӑр иртнӗ вӑхӑтри глаголсем сӑпатланни.

| | Пурлӑ форма | | Ҫуклӑ форма | |
|---|---|---|---|---|
| *Пӗррелле хисеп.* | | | | |
| 1-мӗш сӑпат | эпӗ | ҫыр-нӑ<br>итле-нӗ | эпӗ | ҫыр-ман<br>итле-мен |
| 2-мӗш сӑпат | эсӗ | | эсӗ | |
| 3-мӗш сӑпат | вӑл | | вӑл | |
| *Нумайлӑ хисеп.* | | | | |
| 1-мӗш сӑпат | эпир | ҫыр-нӑ<br>итле-нӗ | эпир | ҫыр-ман<br>итле-мен |
| 2-мӗш сӑпат | эсир | | эсир | |
| 3-мӗш сӑпат | вӗсем | | вӗсем | |

Глаголăн курмасăр иртнĕ вăхăчĕ калакан ĕçе хăй курман пек каланине пĕлтерет.

Пурлă формăра курмасăр иртнĕ вăхăт ***нă-нĕ*** аффикс хушăннипе, çуклă формăра ***ман-мен*** аффикс хушăннипе пулать: *вуланă, килнĕ, çӳренĕ, кайнă*; *вуламан, килмен, çӳремен, кайман.*

Курмасăр иртнĕ вăхăтри глагол сăпат аффиксĕсене йышăнмасть, çавăнпа сăпатланнă чух пур сăпатра та пĕр пек пулать: *эпĕ вуланă, эсĕ вуланă, вăл вуланă* т. ыт. те.

***241-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Курмасăр иртнĕ вăхăтра тăракан глаголсене кăтартса парăр.

## КУШАКПА ĂМĂРТКАЙĂК.

Ял тулашĕнче кушак хăйĕн çурисемпе савăнса выляна. Çуркуннехи хĕвел вĕсене йăпатнă, пĕчĕк çемье телейлĕ пулнă. Сасартăк таçтан пит пысăк ăмăрткайăк çиçĕм пек çӳлтен аннă та кушак çурине тытнă. Ăмăрткайăк çӳлелле вĕçсе кайиччен кушак ăна чĕрнисемпе чавса та илнĕ. Вара вăл, кушак çурине пăрахса, амăшĕпе çапăçа пуçланă. Çапăçсан-çапăçсан, кушакĕ ывăнса çитнĕ. Çапах та вăл, юлашки вăйне пухса, ăмăрткайăка ӳкернĕ, унăн пуçне çыртса татнă; хăйĕн суранĕсем çинчен манса, çурин суранĕсене çуланă.

***242-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Курмасăр иртнĕ вăхăтра тăракан глаголсене кăтартса парăр.

Уй-хир ĕçĕ кунран-кунах вăйланчĕ. Пирĕн колхозăн двигатель пур. Унпа авăн çапрăмăр. „Большевик" колхоз та 17.512 тенкĕ укçа парса, çĕнĕ двигатель туяннă, вăл та талăкне 180-шар центнер таран тырă çапнă. Çапла ăмăртакан икĕ колхозĕ те августăн 24-мĕшĕ тĕлне государствăна тырă леçес плана тултарнă. Ял Совет канцелярийĕнче тата колхоз правленийĕсенче çавăн çинчен çырнă районти „Коммунизмшăн" хаçатăн номерĕ халĕ те курăнмалли вырăнта çакăнса тăрать.

***243-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Курмасăр иртнĕ вăхăтра тăракан глаголсене аялтан туртăр.

## НИХÇАН ТА АН СУЙ.

Ванюк вăрман патĕнче кĕтӳ кĕтнĕ. Вăрманĕ ялтан инçех пулман. Ванюк çынсене хăратма шухăшланă: „Кашкăр! Кашкăр!"—тесе кăшкăрнă. Çынсем куна илтеççĕ те кĕтӳ патне чупса пыраççĕ. Пăхаççĕ: кашкăрĕ çук та.

Тепĕр кунне Ванюк каллех çав тĕлте кĕтӳ кĕтнĕ. Сартăк вăрмантан икĕ кашкăр siксе тухнă. Ванюк: „Кашкăр! Кашкăр!“—тесе кăшкăрнă. Анчах çынсем, вăл кăшкăрнине ĕненмесĕр, пĕри те ăна пулăшма тухман. Вара кашкăрсем пайтах сиен кӳнĕ.

### 3. Хальхи умĕнхи вăхăтри глаголсем сăпатланни.

| | Пурлă форма | | Çуклă форма | |
|---|---|---|---|---|
| | Пĕррелĕ хисеп. | | | |
| 1 сăпат | çыр-атт-ăм | ил-етт-ĕм | çыр-мас-т-ăм | ил-мес-т-ĕм |
| 2 сăпат | çыр-атт-ăн | ил-етт-ĕн | çыр-мас-т-ăн | ил-мес-т-ĕн |
| 3 сăпат | çыр - ат-чĕ | ил - ет-чĕ | çыр-мас-т-чĕ | ил-мес-т-чĕ |

Нумайлă хисеп.

| | | |
|---|---|---|
| 1 сăпат | çыр-атт-ăм-ăр | ил-етт-ĕм-ĕр |
| 2 сăпат | çыр-атт-ăр | ил-етт-ĕр |
| 3 сăпат | çыр-ат - чĕç | ил-ет-чĕç |

| | |
|---|---|
| çыр-мас-т-ăм-ăр | ил-мес-т-ĕм-ĕр |
| çыр-мас-т-ăр | ил-мес-т-ĕр |
| çыр-мас-т-чĕç | ил-мес-т-чĕç |

Хальхи умĕнхи вăхăтри глагол ĕç калас умĕн пулнине е ĕç темиçе хут пулса иртнине пĕлтерет.

Хальхи умĕнхи вăхăтри глагол—*атт, етт, тт, т* аффикссем хушăннипе пулать. Ку вăхăтăн 3-мĕш сăпат формисем—***ат-чĕ, ет-чĕ, т-чĕ, ат-чĕ-ç, ет-чĕ-ç, т-чĕ-ç*** аффикс хушăннипе пулаççĕ: *çыр-ат-чĕ, кил-ет-чĕ, çӳрет-чĕ; çыр-ат-чĕ-ç, кил-ет-чĕ-ç, çӳре-т-чĕ-ç.*

Ку вăхăтăн нумайлă хисепри 2-мĕш сăпат формине хальхи вăхăтăн нумайлă хисепри 2-мĕш сăпат формипе пăтраштармалла мар: хальхи вăхăтра пĕр ***т*** пулать, хальхи умĕнхи вăхăтра иккĕ ***(тт)*** пулать: *çыратăр—çыраттăр, килетĕр—килеттĕр, çӳретĕр—çӳреттĕр.*

***244-мĕш хăнăхтару.*** **Çак статьяна вуласа тухăр. Хальхи умĕнхи вăхăтра тăракан глаголсене кăтартса парăр.**

Кавĕрле ашшĕ ывăлĕн аттине сапласа ларатчĕ. Вăл—бригадăра капан тăваканниччĕ. Уяр пулнă пулсан, колхозниксем вырса пăрахнă тулла турттарсан, Кавĕрле ашшĕ хирте капансем туса та лартатчĕ, тулă та типĕлле капана кĕретчĕ.

Кĕçĕр, сакăр сехетрен пуçласа вуник сехетчен, Кавĕрлен хире кĕлте сыхлама каймалла.

— Санăн, ывăлăм, халĕ кăнтăрла çывăрмаллаччĕ. Çĕрле, асту, çывăрса ан кай,—терĕ ашшĕ, Кавĕрле çине пăхса.

— Çук, эпĕ хуралта нихçан та ыйхăламастăмччĕ,—терĕ Кавĕрле. Чăнахах вăл кирлĕ чухне çывăрмасăр та çĕр каçма пултаратчĕ.

*(М. Труб.)*

*245-мĕш хăнăхтару.* 244-мĕш хăнăхтарури ĕçех тăвăр.

Манăн мучи паллă тăмраçăччĕ. Эпĕ вăл тăмра каланине юрататтăм. Вуникĕ çулта чухнех эпĕ тăмра калама вĕрентĕм. Тăмра ман алла лексен, эпĕ ашкăнассине манаттăм: мана тăмра мар, хамăн çамрăк чĕрем янăранăн туйăнатчĕ. Сассăм манăн пĕчĕкренех вăйлă та уçăччĕ. Эпĕ юрланă чух çеçенхир ман сасăпа тулнăнах туйăнатчĕ.

*246-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Хальхи умĕнхи вăхăтра тăракан глаголсене аялтан туртăр.

1. Хулана кайнă чух хăш чухне вăл хăйпе пĕрле мана та илсе каятчĕ вара. 2. Эпĕ унăн юррисене юрлама юрататтăм. 3. Вĕсем вăл вăхăтра тырă выратчĕç. 4. Эпĕ кĕнеке вуланă чухне эсĕ çыраттăн. 5. Эпир юлташсемпе питĕ туслă пурăнаттăмăр. 6. Эсир ĕлĕк час-часах Мускава каяттăр.

## 4. Иртнĕ умĕнхи вăхăтри глаголсем сăпатланни.

**Пурлă форма** **Çуклă форма**

Пĕрреллĕ хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат | эпĕ | çыр-нă-ччĕ<br>итле-нĕ-ччĕ | эпĕ | çыр-ман-ччĕ<br>итле-мен-ччĕ |
| 2-мĕш сăпат | эсĕ | | эсĕ | |
| 3-мĕш сăпат | вăл | | вăл | |

Нумайлă хисеп.

| | | | | |
|---|---|---|---|---|
| 1-мĕш сăпат | эпир | çыр-нă-ччĕ<br>итле-нĕ-ччĕ | эпир | çыр-ман-ччĕ<br>итле-мен-ччĕ |
| 2-мĕш сăпат | эсир | | эсир | |
| 3-мĕш сăпат | вĕсем | | вĕсем | |

Иртнĕ умĕнхи вăхăтри глаголсем пĕр пулнă ĕç тепĕр ĕçрен малтантарах пулса иртнине пĕлтереççĕ. Ку вăхăт форми курмасăр иртнĕ вăхăт форми çумне ***ччĕ*** çителĕксĕр глагол хушăннипе пулать. Ку вăхăтри глагол сăпат аффиксĕсене йышăнмасть: *эпĕ вуланăччĕ, эсĕ вуланăччĕ, вăл вуланăччĕ* т. ыт. те.

*247-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Иртнĕ умĕнхи вăхăтра тăракан глаголсене аялтан туртăр.

1. Ун пек япалана эпĕ халиччен куçпа курманччĕ. 2. Эпĕ киле таврăнма ĕмĕтленнĕччĕ, анчах киле таврăнаймарăм. 3. Ачасем пурте вăрмана кайма пуçтараннăччĕ, çумăр çума та пуçларĕ. 4. Вĕсем ĕнер пулă тытма кайнăччĕ. 5. Эсĕ пĕлтĕр Мускава çитсе курнăччĕ. 6. Эпир ун çинчен тахçанах илтнĕччĕ.

*248-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Ҫырнӑ чухне, глаголсен вӑхӑчӗсене уйӑрса, иртнӗ умӗнхи вӑхӑтра лартӑр.

## ВӖРЕНӲ ҪУЛӖ УМӖН.

Ачасем вӗренӳ ҫулне хатӗрленеҫҫӗ. Кӗнекесене, тетрадьсене, ручкӑсене, перосене тахҫанах хатӗрлесе хунӑ. Вӑхӑт та ҫитсе килет. Кашни кунах ачасем шкула каймалли вӑхӑта кӗтеҫҫӗ. Вӗренме пуҫлас умӗн вӗренекен ачасен пухӑвӗ пулчӗ. Пухӑва ирттерме районти ҫутӗҫ пайӗн инспекторӗ пынӑ.

*249-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак глаголсене кӗртсе, предложенисем тӑвӑр, Глаголсем нумайлӑ хисепре пулччӑр.

Ҫӳре, пыр, кай, ил, ҫых, кала, сыхла, юрла, вула, ӗҫле, хатӗрле, туп, ман, пӑрах, лар, кас, ҫит, ҫывӑр.

*250-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак глаголсене кӗртсе, предложенисем тӑвӑр. Глаголсем ҫуклӑ формӑра пулччӑр.

Ларать, выртать, тӳрленчӗ, пытанчӗҫ, вӗренетӗп, организациленӗ, тӑхӑнтӑм, калаҫаҫҫӗ, пӗтертӗмӗр, ҫухӑр, куртӑм, тӑранчӗҫ, килӗштертӗн, хурланчӗ, мухтанаҫҫӗ.

*251-мӗш хӑнӑхтару.* Сӑвва вуласа тухӑр. Глаголсене тетрадьсем ҫине ҫырса илӗр.

## ХӖВЕЛЕ ҪИТИЕХ.

Юрӑ сассисем,
купӑс сассисем
пӗтӗм ҫӗр ҫинче
кӗрлесе тӑраҫҫӗ!
Кӗрлеҫҫӗ вӗсем
ҫутҫанталӑкра,
тинӗс хумӗ пек
ишсе ҫӳреҫҫӗ!

Хӗвел патне те
ҫитсе ҫапӑнаҫҫӗ!
Ҫынсене пӗрмай
малалла чӗнеҫҫӗ!
Пусмӑрлӑх, асап
тӗнчипех пӗтчӗр,
колхоз ҫӗршыва
телейпе виттӗр!

*252-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Нумайлӑ хисепре тӑракан глаголсене пӗрреллӗ хисепе куҫарӑр.

Ирхине ирех тӑратпӑр. Пите ҫӑватпӑр, вырӑнсене пуҫтаратпӑр, апат ҫиетпӗр, унтан шкула кайма хатӗрленетпӗр. Уроксене вӗреннӗ. Киле ҫырма панисене хатӗрленӗ. Тухса кайиччен ҫипуҫӑрсене пӑхӑр: вараланман-и, тӳмесем пурте вырӑнта-и? Шкула кайнӑ чухне иртӗнместпӗр, шкула пырсан та, хамӑра чипер тытатпӑр. Урокра лайӑх итлесе ларатпӑр. Учитель мӗн каланине пурне те тӑватпӑр. Киле таврӑнсан, атте-аннене пулӑшатпӑр. Пӗтӗм ӗҫсене пуҫтарсан, ырана уроксем хатӗрлетпӗр. Пур ӗҫсене те вӑхӑтра тӑватпӑр.

*253-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак калава (малалла мӗн пулни ҫинчен хӑвӑртан шухӑшласа) ҫырса пӗтерӗр.

## УЯВ ИРТРӖ.

Тепӗр кунне пурте ӗҫе тытӑнчӗҫ. Атте колхоз хирне тислӗк тӑкма кайрӗ...

*254-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Точкӑсем вырӑнне кирлӗ аффикссем лартӑр.

1. Каҫ пулса килнӗ май вӑрманта сулхӑнлан... 2. Эпӗ автомата хам ҫумма хур... та, кӗтмен ҫӗртен сиксе тухма пултаракан инкеке кӗтсе илме хатӗрлен... 3. Хула тавра мина лартса тух... 4. Эпир пӗр самантрах уҫланкӑн тепӗр енне ҫитсе тӑр... 5. Ҫуллахи ҫӗр кӗске пирки часах ҫутӑлма пуҫла... 6. Пӗрре вунпилӗк самолӗт анса лар... 7. Пӗр самолӗт ҫӳлелле ҫӗкленме тытӑн... 8. Пирӗн ял ҫывӑхӗнченех шоссе иртсе кай...

*255-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене вуласа тухӑр. Глаголсен вӑхӑтне, хисепне тата сӑпатне кӑтартса парӑр.

1. Вӗҫӗ-хӗррисӗр сарӑлса выртакан юханшыв ҫинчи утравсем пек шурӑ, ҫаврака пӗлӗтсем вырӑнтан сикмесӗр тӑратчӗҫ. 2. Ҫӳлӗ йывӑҫсем тӑрринче ҫара ҫерҫисем вӗҫкелетчӗҫ. 3. Умра сарлака ҫаран сарӑлса выртать. 4. Эпӗ хыпаланса ҫул тӑрӑх утрӑм. 5. Яла каялла туртса илтӗмӗр. 6. Ҫумӑр тумламӗсем ман ҫине ӳкеҫҫӗ пулсан та, ҫӗмӗртӗн йӗпе турачӗсене татса, унӑн шӑршипе киленетӗп.

*256-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак предложенисене ҫырса илӗр. Глаголсен вӑхӑтне, хисепне тата сӑпатне кӑтартӑр.

1. Ачасем, чи ҫивчӗ лашасем ҫине утланса, кула-кула сиккипе чуптараҫҫӗ. 2. Хутран-ситрен вут ҫути, ҫӗр тӗттӗмне шыраса, инҫетерех кайса ӳкетчӗ. 3. Кӑшт тӑрсанах, лаша пуҫӗ пире курӑнми пулчӗ, тулхӑра-тулхӑра чӑмлани анчах илтӗнет. 4. Вӑл ури тӳрлениччен аппӑшӗсем патӗнче пурӑннӑ. 5. Улӑха утӑ тиеме каяттӑм. 6. Вӗсем пурте шкула вӑхӑтра пыраҫҫӗ.

## 42 §. Глаголсене тӗрӗс ҫырасси.

Хальхи вӑхӑтри глаголсен пӗрреллӗ хисепӗн виҫҫӗмӗш сӑпатӗнчи хытӑ сыпӑкӗнче ҫемҫетекен паллӑ *(ь)* ҫыраҫҫӗ: *утать, каять, вулать*; ҫемҫе сыпӑксенче ҫемҫетекен паллӑсӑр ҫыраҫҫӗ: *килет, ҫӳрет, кӗрет*.

Хальхи вӑхӑтри глаголсен нумайлӑ хисепӗн иккӗмӗш сӑпатӗнче пӗр ***т*** ҫыраҫҫӗ: *утатӑр, каятӑр, вулатӑр,*

*çӳретĕр, кĕретĕр, вĕренетĕр*; хальхи умĕнхи вăхăтри глаголсенче икĕ ***т (тт)*** çыраççĕ: *утаттăр, каяттăр, вулаттăр, çӳреттĕр, кĕреттĕр, вĕренеттĕр.*

Хальхи умĕнхи вăхăтри пĕрреллĕ тата нумайлă хисепĕн виççĕмĕш сăпатĕнче икĕ ***ч*** мар, ***тч*** çыраççĕ: *утатчĕ, каятчĕ, вулатчĕ, çӳретчĕ, кĕретчĕ, вĕренетчĕ; утатчĕç, каятчĕç, вулатчĕç, çӳретчĕç.*

Çуклă формăра, хальхи вăхăтри глаголсен виççĕмĕш сăпатĕнче ***масть-мест*** çыраççĕ: *утмасть, каймасть, çӳремест, килмест.*

***257-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ аффикссем лартăр.

1. Чи хĕрӳллĕ самантра нимĕçсен снарячĕ пулемĕтчиксем выртакан çĕрех ӳксе çурăл... 2. Смирновăн чĕринче тарăху, тăшмана курайманни ӳссе кайса вĕреме тытăн... 3. „Эсир пирĕнпе пыр...-и?"—тесе ыйтрĕ вăл. 4. Юратнă çĕршыв хăйĕн сурансене тӳрлет... 5. Чăваш халăхĕ хăйĕн тăван ывăлĕсене, вĕсен чаплă ĕçĕсене ман... 6. Вăл маттур йĕкĕтчĕ, гвардеецсен ялавне çĕре ӳкермесĕр йăтса пыр... 7. Хăрушă снаряд çурăлса кай..., тавралла çĕр сирпĕн...

***258-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ аффикссем лартăр.

Шăрăх кунсем сивĕнме тытăн... Хĕвел, аяккалла кайнă пек, пахча çине халĕ ăшшăн пăхма..., тĕмсемпе савăнса калаçма..., салхуллăн... çанталăк. Çил те кичеммĕн шăхăр..., çурçĕр енчен сивĕ илсе кил... Çырла тĕмĕсем сарăх..., хĕрлĕ-сарă çулçисем çĕрелле вĕл-вĕл туса ӳк...

Пĕр ирхине, шăпăрсем, кĕреçесем йăтса, колхозниксем пахчана кĕр... Тăкăннă çулçăсене шăлма, тĕмсен тĕлĕсене хусăклама тапрат... Тепĕр хут шавла... пахчара этем сасси. Виçĕ тăватă кунтан пахча каллех шăплан... Колхозниксем пахчари ĕçе пĕтер...

## Аса илтермелли ыйтусем.

1. Мĕнле пуплев пайне глагол теççĕ?
2. Глаголсем мĕнле улшăнаççĕ?
3. Хальхи вăхăтри, пулас вăхăтри, иртнĕ вăхăтсенчи глаголсем мĕне кăтартаççĕ?
4. Сăпатланни тени мĕне пĕлтерет?
5. *Кай* глагола сăпатласа парăр.
6. Глаголсен çуклăха (ĕç пулманнине) пĕлтерекен формисем мĕнле пулаççĕ?

## 43 §. Наречи.

Ĕç мĕнле, ăçта, хăçан пулнине пĕлтерекен пуплев пайне **наречи** теççĕ.

Эпир шкултан **килелле** таврăнатпăр.

Çул **сулахаялла** пăрăнать.

**Аялта** шыв юхса выртать.

Ĕнер **кунĕпе** çумăр çурĕ.

Паян **иртенпе** уяр.

Пирĕн колхозниксем ăмăртура **мала** тухрĕç.

Кунта *килелле, сулахаялла, аялта, ĕнер, кунĕпе, паян, иртенпе, мала* сăмахсем—**наречисем**.

Наречисем глаголсемпе пĕрле пулаççĕ, вĕсемпе çыхăнса тăраççĕ. Глаголпа çыхăнса тăрса, вĕсем:

а) ĕç ăçта пулнине, япала ăçталла кайнине кăтартаççĕ: ***Çÿлте*** *тăри юрри илтĕнет. Атте* ***хуланалла*** *тухса утрĕ.*

ă) ĕç хăçан, хăçантанпа, хăçанччен пулнине кăтартаççĕ: ***Ыран*** *эпир экскурсие каятпăр. Вĕсем* ***каçчен*** *вутă касрĕç.*

б) ĕç мĕнле, мĕн чухлĕ пулнине кăтартаççĕ: *Ачасем урока* ***лайăх*** *хатĕрленчĕç. Колхозниксем* ***чылай ĕçкунĕ*** *турĕç.*

Наречисен ыйтăвĕсем: *мĕнле? ăçта? ăçталла? ăçтан? хăçан? хăçанччен? хăçантанпа? мĕнле? миçен? мĕн чухлĕ?*

***259-мĕш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене çырса илĕр. Наречисене аялтан туртăр.**

1. Чипер пынă çĕртех сасартăк тискеррĕн шăхăрса улани илтĕнчĕ. 2. Çамрăк патриоткăн вĕри чĕри каллех фронталла туртăннă. 3. Вăл халичченхи пекех харсăррăн ĕçлет. 4. Юлашки кунсенче эпĕ ăна татах тĕл пултăм. 5. Иртнĕ çапăçусенче Павлов питĕ хастарлă та хăюллă çапăçрĕ. 6. Хам пĕлнисене пĕтĕмпех каласа патăм. 7. Эпĕ ирех вулама тытăнтăм.

***260-мĕш хăнăхтару.*** **Çак статьяна вуласа тухăр. Наречисем мĕне пĕлтернине асăрхăр.**

### ПРАÇНИК ÇИТЕТ.

Çынсем праçнике (мĕнле?) савăнăçлăн кĕтсе илеççĕ. Пÿрт ăшчиккисене тирпейлеççĕ, тасатаççĕ, карташсене, урамсене (мĕнле?) тап-таса шăлаççĕ, (ăçта?) унта-кунта выртакан япаласене пуçтараççĕ. Ачасем те (хăçан?) паян шкулта праçнике хатĕрленеççĕ, стенасем çине лозунгсем, плакатсем çакаççĕ. Вĕсен (хăçан?) ыран демонстрацие тухмалла; (ăçта?) унта вĕсен илемлĕ юрăсем юрламалла. Юрлама вĕсем (хăçантанпа?) тахçантанпах хатĕрленеççĕ, юррисене те (мĕн чухлĕ?) нумай вĕреннĕ.

*261-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисенчи наречисене тупăр, вĕсен ыйтăвĕсене, пĕлтерĕшне каласа парăр.

1. Вĕсем килте йышлăн пурăнаççĕ. 2. Çуртсем таврара хĕвелпе ялкăшса, илемленсе лараççĕ. 3. Унăн куçĕсем ăна инçетрен палласа илчĕç. 4. Ирхи шурăмпуç пушар пек хĕрлĕн хĕрелмест, илемлĕ çутăпа йăвашшăн хĕвелтухăçнелле сарăлать. 5. Ирхине çанталăк хĕрри шупка-кăвакккăн курăнать. 6. Кăнтăрла хăшĕ-пĕрисем киле таврăнаççĕ. 7. Ĕнер эпир улăха кайнăччĕ.

*262-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Наречисене тупăр, вĕсен ыйтăвĕсене скобкăна кĕртсе хăварăр.

Тĕслĕх: *Эпир экскурсие кайма тахçанах (хăçан?) хатĕрленнĕ.*

## ЭКСКУРСИЕ КАЙНИ.

Эпир экскурсие кайма тахçанах хатĕрленнĕ. Çуллахи каникул вăхăтĕнче тин хулана экскурсие кайрăмăр. Çул çинче эпир хаваслăн калаçса пытăмăр. Эпир каяс çул çинче пысăк пахча пур. Пахча варрипе пысăках мар шыв лăпкăн юхса выртать. Ку Ленин ячĕпе тăракан колхоз пахчи.

Учительница пире вăл пахча çинчен çапла каласа кăтартрĕ:

— Иртнĕ çулсенче кунта хирччĕ, халь ак улма пахчи илемлĕн ешерсе ларать. Ку колхоз стахановла ĕçлет, хăйĕн пуян та илемлĕ пурнăçне татах савăнăçлă тăвать. Çапла, ачасем, эпир халь çĕнĕ пурнăç тăватпăр, çĕнĕлле ĕçлетпĕр.

Хăш-пĕр сăмахсем предложенире паллă ячĕ те, наречи те пулма пултараççĕ.

Тĕслĕхсем: *1. Ачасем илемлĕ çыраççĕ. 2. Эпĕ каникула лайăх ирттертĕм. 3. Ку кĕнекере илемлĕ картинăсем пур. 4. Эпĕ хуларан лайăх кĕнекесем илсе килтĕм.*

Малтанхи икĕ предложенире *илемлĕ, лайăх* сăмахсем ĕç мĕнле пулнине кăтартаççĕ, вĕсем наречисем пулаççĕ. Юлашки икĕ предложенире çав сăмахсемех япала *(картинăсем, кĕнеке)* мĕнлине кăтартаççĕ, вĕсем паллă ячĕсем пулаççĕ.

*263-мĕш хăнăхтару.* Малалли предложенисенчен паллă ячĕ те, наречи те пулакан сăмахсене япала ячĕсемпе е глаголсемпе пĕрле çырса парăр.

Тĕслĕх: *ăнăçлă пырать, ăнăçлă ĕç.*

1. Заводра ĕç ăнăçлă пырать. 2. Ăнăçлă ĕç рабочисене савăнтарать. 3. Пирĕн бригада яланах хастарлă ĕçлет. 4. Хастарлă ĕç ĕçĕн хăвăртлăхне татах та ÿстерет. 5. Тимĕре вутра

хёртсен хёп-хёрлё пулать. 6. Хёп-хёрлё тутăр пирён пуçăмăр çинче ялкăшса тăрать. 7. Эпё çап-çутă пÿлёмре ларатăп. 8. Çурхи шыв çап-çутă çутăлса выртать. 9. Эпир чăвашла та, вырăсла та вёренетпёр. 10. Вёсем чăвашла кёнеке илчёç.

Наречисем—улшăнман пуплев пайё. Наречисем вёçленмеççё те, сăпатланмаççё те.
*Вăл çынпа* ***ыррăн*** *калаçать.*
*Эпир те çынсемпе* ***ыррăн*** *калаçатпăр.*
Çынсем ***аялалла*** утаççё.
Эпё ***кёскен*** каласа патăм.
***Ёнер*** пирён вечер пулчё.

***264-мёш хăнăхтару.*** **Çак наречисене хирёçле пёлтерёшлё наречисемпе мăшăрлатса çырăр.**

Тёслёх: *çÿлте—аялта.*

Инçетре, йывăррăн, тăвалла, каçхине, хуллен, малта, хăвăрт, хыттăн, йăвашшăн, ыран.

***265-мёш хăнăхтару.*** **Çак наречисене кёртсе, хăвăртан предложенисем тăвăр.**

Çуттăн, каçчен, малалла, ирхине, çулла, кăнтăрла, çёрле, аналалла, кунта.

***266-мёш хăнăхтару.*** **Çак предложенисене çырса илёр; наречисене тата вёсемпе çыхăнса тăракан глаголсене аялтан туртăр.**

1. Лаптев пулемётаваскавлăн авăрларё те виçё хутчен печё. 2. Вăл кăçал хулана вёренме кайрё. 3. Кÿршё яла эпё час-часах çÿретёп. 4. Паян эпё ирех тăтăм. 5. Çёрле те, кăнтăрла та вёсем тăшмана хаяррăн пыра-пыра çапаççё. 6. Паян вёсем кунта килмеççё, ыран килеççё пулмалла. 7. Таçта малта пирён снарядсем çурăлаççё.

## 44 §. Наречисен предложенири вырăнё.

Наречисем предложенире обстоятельствăсем пулаççё. Вёсем ёç вырăнне (*ăçта? ăçталла? ăçтан?*), ёç вăхăтне (*хăçан? хăçанчен? хăçантанпа?*), ёç мёнле пулнине (*мёнле?*) кăтартаççё.

***267-мёш хăнăхтару.*** **Çак предложенисенчи наречисене тупăр, вёсем мёнле член пулнине калăр.**

1. Вăрман хуралçи вăрманпа шăппăн пырать. 2. Çывăхра сасартăк шавлани илтёнчё. 3. Поезд хуллен вырăнтан тапранчё. 4. Кайăксем çуллен кăнтăр енчен вёçсе килеççё. 5. Сайра-хутра йытă сасси илтёнет. 6. Иван лайăх çырать. 7. Лаша тăвалла ерипен утать. 8. Аялта пёчёк çăл пур.

*268-мĕш хăнăхтару.* Çак наречисене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

Çӳлелле, аялалла, малта, инçетре, тулта.

*269-мĕш хăнăхтару.* Çавăн пекех, çак наречисене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

Ĕнер, паян, ыран, каçхине, пĕлтĕр, кăçал, сасартăк, чылайăн, куллен, çăмăллăн.

*270-мĕш хăнăхтару.* Тата, çак наречисене кĕртсе, предложенисем тăвăр.

Ерипен, хуллен, сиккипе, лăпкă, хăюллăн, йĕркипе, кунтаçуллен, кăнтăрла, çĕрле.

## 45 §. Хыççăмахсем.

Сĕтел *çине* кĕнеке хунă.
Эпĕ машина *çинчен* сиксе антăм.
Вăрман *патне* çывхартăмăр.
Кĕтӳ вăрман *патĕнче* çӳрет.
Урам *тăрăх* йывăççем лартса тухнă.
Клуба *хирĕç* пирĕн халĕ пысăк сад пур.
Эпĕ юлташпа *пĕрле* урок хатĕрлерĕм.

Хыççăмахсем вĕçленекен сăмахсем хыççăн пулаççĕ. Вĕсем вĕçленекен сăмахсене ытти сăмахсемпе çыхăнма пулăшаççĕ. Хăйсем предложенире уйрăм член пулмаççĕ.

Хăш-пĕр хыççăмахсем пару, вырăн тата туху падежĕ форминче пулаççĕ.

Тĕслĕх: *Клуб* ***патне*** *ачасем пуçтараннă. Сĕтел* ***çинче*** *кĕнеке выртать. Мулкач юман* ***айĕнчен*** *сиксе тухрĕ.*

Ку предложенисенче *патне* хыççăмах пару падежĕнче, *çинче* хыççăмах вырăн падежĕнче, *айĕнчен* хыççăмах туху падежĕнче тăраççĕ.

*271-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяри хыççăмахсене япала ячĕсемпе пĕрле илсе кăтартăр.

1. Пĕлĕт çинче çăлтăрсем ялтăртатаççĕ. 2. Эпĕ вăрçă çинчен час-часах аса илетĕп. 3. Шыв хĕрринче ачасем чупкаласа çӳреççĕ. 4. Йытă сĕтел айне кĕрсе выртрĕ. 5. Уй тăрăх асла çул пырать. 6. Эпир арман патне çывхартăмăр. 7. Шкул умĕнче сарлака йывăççем лараççĕ. 8. Пуç тăрринче тăри юрри илтĕнет. 9. Çырма патĕнче хурсем çӳреççĕ. 10. Кăнтăр енчен кайăксем вĕçсе килчĕç.

*272-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Хыççăмахсене аялтан туртăр.

1. Пӳрте кĕрсенех, Петĕр сĕтел патне пырса тăчĕ. 2. Ачасем парта хушшинче лараççĕ. 3. Шыв патĕнче кĕтӳ тăрать. 4. Пуç тăрринче тăри хăй юррине шăрантарать. 6. Йытă кĕлет айне кĕрсе кайрĕ. 6. Сарай çумĕнче пĕр каска выртать. 7. Вите çумне карта тытнă.

*273-мĕш хăнăхтару.* Çак статьяна çырса илĕр, хыççăмахсене тата вĕсемпе çыхăнса тăракан сăмахсене аялтан туртăр.

## ПĂРЛĂ ÇУМĂР.

Çанталăк пăсăласси ирхинех палăрчĕ. Çумăр пĕлĕчĕсем шăва пуçларĕç. Хĕвеланăç енчен ăшă çил вĕрме тытăнчĕ. Йывăç çинче ларакан хура кураксем кăраклатаççĕ. Урам хушшинче пĕр чĕрĕ чун та юлмарĕ. Çиçĕм çиçе пуçларĕ. Шултра тумламсем пĕлĕт çинчен ӳккелеме тытăнчĕç. Инçетре аслати сасси илтĕнет. Кăшт тăрсан, çĕр çине пăрçа пысăкăш пăрсем ӳке пуçларĕç.

*274-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене, точкăсем вырăнне кирлĕ хыççăмахсем кĕртсе лартса, çырса илĕр.

1. Ачасем пӳрт... выляççĕ. 2. Петĕрпе Иван вăрман... çывхараççĕ. 3. Ешĕл курăк... сывлăм шывĕ ялтăртатать. 4. Юпа... сăхан ларать. 5. Сĕтел... самовар ларать. 6. Кĕлет... пусма тăратнă. 7. Асатте кăмака... улăхрĕ. 8. Шăпăр алăк... выртать.

*275-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Хыççăмахсене тата вĕсен умĕнче тăракан япала ячĕсене аялтан туртăр.

1. Эпĕ вăрман патне çитрĕм. 2. Вăл алăк хыçĕнче тăратчĕ. 3. Çырма тăрăх йывăç лартса тухнă. 4. Кӳлĕ патĕнче хăмăшсем ӳсеççĕ. 5. Ял çывăхĕнче кĕтӳ çӳрет. 6. Çĕр айĕнче пурлăх нумай. 7. Вăрман витĕр тухрăмăр.

*276-мĕш хăнăхтару.* Хăвăртан шухăшласа, çак хыççăмахсене хушса, предложенисем тăвăр.

Умне, патне, хыçне; патĕнче, хыçĕнче, умĕнче; патĕнчен, хыçĕнчен, умĕнчен.

*277-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене вуласа тухăр. Хыççăмахсене кăтартса парăр.

1. Самолĕт хула тавра виçĕ хут вĕçсе çаврăнчĕ. 2. Урам тăрăх йывăççем лартса тухнă. 3. Вĕсем ашшĕпе пĕрле пасара кайрĕç. 4. Вăл тăшмана хирĕç вирлĕн çапăçрĕ. 5. Эпĕ Денисовпа пĕрле малалла утрăм. 6. Кĕнеке хыççăн кĕнеке вуласа

тухать, штурман ёҫне вёренет. 7. Стрелоксем тăшман ҫине пулемётсенчен пеме тытăнаҫҫĕ. 8. Пирĕн анлă кун-ҫул куҫ умне питех те уҫҫăн тухса тăрать.

***Валли, тăрăх, хирĕҫ, хыҫҫăн, умĕн, пирки, пĕрле, пуҫне, урлă*** хыҫҫăмахсем умĕнче тăракан сăмахсем тăвата падежра пулма пултараҫҫĕ: камăнлăх падежĕнче (*ман валли, ун хыҫҫăн*), пару падежĕнче (*сана хирĕҫ, урама тăрăх*), пĕрлелĕх падежĕнче (*юлташпа пĕрле*), туху падежĕнче (*унран пуҫне*).

Хыҫҫăмахсен ушкăнне тата ***шăн-шĕн*** хыҫҫăмах та кĕрет. Вăл хыҫҫăмаха унпа ҫыхăнса тăракан сăмахпа пĕрле ҫыраҫҫĕ: ***маншăн, ҫыншăн, пирĕншĕн, ёҫшĕн***.

***278-мĕш хăнăхтару.*** Ҫак статьяна вуласа тухăр. Хыҫҫăмахсене вĕсемпе ҫыхăнса тăракан сăмахсемпе пĕрле ҫырса илĕр.

## ПĂЛАН ЙĔРĔПЕ КАЙНИ.

Шипцов лейтенант пилĕк боецпа разведкăна кайнă. Вĕсем автоматсемпе хĕҫпăшалланнă. Пиҫиххийĕсем ҫумне тăватшар граната ҫыхнă. Вăрмана кĕрсен, вĕсем виҫшерĕн икĕ ушкăна уйрăлчĕҫ. Вăрман урлă каҫсан, вĕсен уя тухмалла. Ҫакăнта ĕнтĕ фашистсем хăйсене валли пытанмалли вырăнсем хатĕрленĕ. Разведчиксем унталла-кунталла пăхкаласа утаҫҫĕ.

Вăрман хĕррине тухасси инҫе те юлмарĕ. Хĕвел пĕлĕт айне пытанчĕ. Сасартăк темскер чăштăртатни илтĕнчĕ. Шипцов каска урлă ҫĕкленсе пăхрĕ. Курать: ёне евĕрлĕ выльăх тăрать.

— Ибрагимов, пăх-ха, мĕнле выльăх ку?—хуллен ыйтать вăл хăйĕн боецĕнчен.

— Пăлан ку, лейтенант юлташ,—тет ăна хирĕҫ Ибрагимов. Пăлан хăйĕн умĕнче ҫын пуррине сисрĕ пулас, тарма хатĕрленчĕ.

Унччен те пулмарĕ, пăшал сасси илтĕнсе те кайрĕ. Пăлан месерле кайса ӳкрĕ. Ун патне фашистсем чупса пычĕҫ те тирне сӳме тытăнчĕҫ.

Вара разведчиксем вĕсене тытса штаба илсе кайрĕҫ.

***279-мĕш хăнăхтару.*** Хăвăртан шухăшласа ултă предложени ҫырăр. Ҫак предложенисенче хыҫҫăмахсем пулччăр.

## 46 §. Союзсем.

Хĕвел анчĕ те, тавра тĕттĕмленме пуҫларĕ. Хирсем, вăрмансем тата ҫырмасем тĕксĕммĕн курăнаҫҫĕ. Эпĕ тухса утасшăнччĕ, анчах килтисем мана чарчĕҫ. Паян те ҫумăр пулать, те юр ҫăвать.

Пĕр йышши членсене е хутлă предложенисен пайĕсене çыхăнтаракан сăмахсене **союзсем** теççĕ.

Чăваш чĕлхинче çакăн пек союзсем пур: ***та, те, тата, е, анчах, çапах, мĕншĕн тесен*** т. ыт. те. Союзсене кирек хăçан та хăйсем çыхăнтарса тăракан сăмахсенчен уйрăм çыраççĕ.

***280-мĕш хăнăхтару.*** Çак статьяна вуласа тухăр. Союзсене кăтартса парăр.

## АПРЕЛЬ УЙĂХĔНЧЕ.

Апрель уйăхĕнче кунсем ăшă тăчĕç, çапах каççерен сивĕччĕ-ха. Хĕл парăнасшăн мар, анчах пĕр ăшă кун çĕнтерчĕ. Вара çырмасене шывсем тулчĕç те, пăр тапранса кайрĕ. Юр варсенче тата вăрмансенче çеç ирĕлмесĕр юлнă.

***281-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ союзсем лартăр.

1. Пĕрре акăш, рак ... çăрттан тулли лав туртса кайма килĕшнĕ. 2. Питĕ хытă ĕçлерĕмĕр, ... ыраннине сисмерĕмĕр. 3. Çумăр чарăнчĕ, ...аслати авăтма пăрахмарĕ-ха. 4. Хĕвел тухрĕ ..., пĕтĕм тĕнче илемленсе кайрĕ. 5. Вăхăт каç енне сулăнчĕ ..., çанталăк сулхăнланчĕ. 6. Эпир ир тухаймарăмăр, ... вăхăта çитрĕмĕр.

## 47 §. Татăксем.

Ыран чăваш чĕлхи урокĕ пулать-**и?**
Трактор сухалама час тытăнать-**ши?**
Паян кун лайăх-**çке!**
Манăн уроксем хатĕрлемелле-**ха.**
Вĕсем те вăхăтрах çитрĕç.

Чăваш чĕлхинче ***и, ши, çке, ха*** тата ытти çавăн евĕрлĕ сăмахсем пур. Вĕсем хăйсем тĕллĕн нимĕнле шухăша та пĕлтермеççĕ. Ун пек сăмахсене **татăксем** теççĕ.

***и, ши, çке, ха*** татăксене кĕске йĕр (дефис) урлă çыраççĕ ***(пырать-и?, каять-ши?, каймасть-ха).***

***282-мĕш хăнăхтару.*** Çак предложенисене вуласа тухăр. Татăксене мĕнле çырнине асăрхăр.

1. Вăл ырăнтан та тапранмарĕ-çке, вĕсем çине пуçне те çĕклесе пăхмарĕ. 2. Мĕншĕн вĕсем кунта вăхăтра çитеймерĕç-ши? 3. Эпир пур ĕçе те туса çитерейместпĕр-ха. 4. Вăл икĕ аллипе те питĕ хытă ыталаса тытрĕ-çке. 5. Итлĕр-ха, тантăшсем, мĕн эпир кĕçĕр пĕр ырăнтан хăпма пĕлместпĕр? 6. Чăнах та ура сассисем илтĕнеççĕ-и?

*283-мӗш хӑнӑхтару.* Текста вулаҫа тухӑр. Скобкӑра лартнӑ татӑксене мӗнле ҫырмаллине каласа парӑр. Унтан ҫырса илӗр.

Ял ҫине хура тӑхлан пек йывӑр пӗлӗтсем капланса тулчӗҫ. Ҫанталӑка тӗксӗм сӑн ҫапсанах, ялтан пӗр этем мӗлки хирелле тухрӗ те Салакайӑк хуторӗ еннелле вӗҫтерчӗ. Вунпилӗк минутранах хутор чӳречине тӑкӑртаттарни те илтӗнчӗ.

— Кам кунта?

— Эпӗ... Элеҫук килте (и)?

— Мӗтри, эсӗ (и) ку?

— Тух (ха) хӑвӑртрах.

*284-мӗш хӑнӑхтару.* Хӑвӑртан 10 предложени ҫырӑр. Вӑл предложенисенче татӑксем пулччӑр.

### Аса илтермелли ыйтусем.

1. Мӗнле пуплев пайне наречи теҫҫӗ?
2. Наречисем предложенире мӗнле членсем пулаҫҫӗ?
3. Мӗнле пуплев пайне хыҫҫӑмахсем теҫҫӗ?
4. Союз тесе мӗнле пуплев пайне калаҫҫӗ?
5. Татӑксене мӗнле ҫыраҫҫӗ?

## 48 §. Вӗреннине аса илсе ҫирӗплетни.

*285-мӗш хӑнӑхтару.* Ҫак статьяна ҫырса илӗр. Сӑмах тӗпӗсене пӗр йӗрпе, иккӗмӗшле сӑмахсене икӗ йӗрпе аялтан туртӑр.

Сталинла Конституци хӗвелӗ ӑшшинче ҫуркуннехи пек ешерсе чечекленет пирӗн юратнӑ социализмлӑ Таван ҫӗршыв. Аслӑ Ленин—Сталин партийӗ ертсе пынипе совет халӑхӗ ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ туса пырать, вӑл пысӑк хӑватпа ӗҫлесе коммунизм тӑвать.

Октябрьти Аслӑ социализмлӑ революци Совет ҫӗршывӗнчи мӗнпур халӑхсен культурине тата вӗсен хуҫалӑхне аталантарса вӑйлатма кирлӗ пур майсене те туса пачӗ. Ӑҫта пӑхатӑн, унта хӗрӳ ӗҫ вӗрет, ирӗклӗ пурнӑҫӑн хаваслӑ юрри шӑранать. Пурте халӗ сталинла ҫӗнӗ пилӗк ҫуллӑх плана тултарас туйӑмпа хастарланса ӗҫлеҫҫӗ.

*286-мӗш хӑнӑхтару.* Статьяна ҫырса илӗр. Хутлӑ сӑмахсене, мӑшӑр сӑмахсене тата икӗ хут калакан сӑмахсене тупса, вӗсене мӗнле ҫырнине каласа парӑр.

### КОЛХОЗ ПӖВИСЕМ.

Ҫырма-ҫатрасене, варсене тата пӗчӗк юханшывсене пӗвелесе тунӑ пӗвесем нимӗнрен ытла шыв пухса усрама кирлӗ. Ҫак пӗвесемпе вылььӑх-чӗрлӗх шӑварас, пӗчӗк ҫӗр участокӗсене, пуринчен ытла пахча ҫимӗҫӗсене шӑварас тата вут-кӑвартан сыхланас тӗлӗшпе усӑ кураҫҫӗ.

Хăш-пĕр колхозсенче çак пĕвесемпе урăх майлă та усă кураççĕ: уй-хирсене шăвараççĕ, гидростанцисем тата шыв арманĕсем туса та усă кураççĕ. Тепĕр чухне шыв пухса усрама, юханшывăн шайне хăпартма пĕве пĕвелеççĕ.

Çапла ĕнтĕ колхоз пĕви пĕр вăхăтрах темĕн тума та май парать: ӳсентăрансене шăварма, пулă ĕрчетме, шыв вăйĕпе гидростанцие ĕçлеттерме е арман авăртма пултарать.

*287-мĕш хăнăхтару.* Текста çырса илĕр. Вырăс чĕлхинчен кĕнĕ сăмахсене мĕнле çырнине каласа парăр.

Вырсарникун каçхине вулав çурчĕн залне туллиех халăх пуçтарăннă. Кунта шурă çӳçлĕ стариксем те пур. Пĕри те ура çинче тăраканни çук. Пурте пукансем çине ларса тухнă. Малти ретре ларакан пĕр çамрак баянпа хаваслă кĕвĕ шăрантарать. Пысăк зала пĕтĕмпех илемлетсе пĕтернĕ. Пирĕн çулпуçсен портречĕсем тата тĕрлĕрен лозунгсемпе плакатсем илемлĕн курăнса тăраççĕ, çĕнĕ диаграммăсемпе ӳкерчĕксем нумай.

*288-мĕш хăнăхтару.* Текста çырса илĕр. Подлежащие пĕр йĕрпе, сказуемăя икĕ йĕрпе аялтан туртса паллă тăвăр.

Хаваслă та тулли пурнăçпа пурăнаççĕ Жданов ячĕпе тăракан тата „Большевик" колхозсен колхозникĕсемпе колхозницисем. Вĕсем куллен кунах çĕнтерӳ хыççăн çĕнĕ çĕнтерӳ туса пыраççĕ, малаллах каяççĕ. Пурнăç тулли хăватпа малалла пырать. Октябрьти Аслă революци ĕç çыннисем çинче темиçе çĕршер çул хушши капланса тăнă йывăрлăхсемпе чуралăха ĕмĕрлĕхех сирсе ывăтрĕ, малалла кайма пĕтĕм ĕç халăхне аслă та çутă çул уçса пачĕ.

*289-мĕш хăнăхтару.* Статьяна вуласа тухăр. Предложенири кĕçĕн членсене кăтартса парăр.

## ПИРĔН ÇĔРШЫВ МĔН ПЫСĂКĂШ.

Мускавра çынсем халь кăна çывăрма выртаççĕ. Çав вăхăтрах Инçетри Хĕвелтухăçĕнче çынсем ыйхăран вăранаççĕ.

Совет Союзĕн кăнтăр пайĕнче çынсем пахчара чей ĕçсе лараççĕ. Çав вăхăтрах çурçĕр енче ачасем юрпа пемелле выляççĕ. Пирĕн çĕршывăн пĕр тăрăхĕнче хĕвел тин тухать, тепĕр тăрăхĕнче—кăнтăрла.

Пирĕн çĕршыв пĕтĕм тĕнчери тип çĕрĕн улттăмĕш пайне йышăнса тăрать.

*290-мĕш хăнăхтару.* Текста çырса илĕр. Япала ячĕсене аялтан пĕр йĕрпе туртăр.

Каç пулсан, колхоз правленийĕн заседанийĕ пуçланчĕ. Ара шывĕ çине электростанци лартсассăн, унăн вăйĕпе мĕнле ĕçсем

тума май пурри, ăна лартма мĕн чухлĕ укçа, йывăç, ытти япаласем кирли, мĕн чухлĕ çĕр чавмалли тата ытти ĕççем тумаллине çинчен те инженер каласа пачĕ. Электростанци лартма мĕн пурĕ çĕр çирĕм пин тенке яхăн тăкакламалла.

Пĕр эрне иртсен, колхозăн Ара шывĕ çинче хĕрӳллĕ ĕççем пуçланчĕç. Пурне те çĕнтерекен çынсем Ара шывĕн хăватлă вăйне кĕске вăхăтрах хăйсен кăмăлне килекен çулпа ячĕç.

*291-мĕш хăнăхтару.* **Çырса илĕр. Точкăсем вырăнне кирлĕ çĕртe çемçетекен паллă лартăр.**

1. Вăл çурăмĕ хыçне пысăк кутамкка çакнă, шинел...не хул урлă уртса янă. 2. Учител...тен ыйтрăм та, вăл мана каласа пачĕ. 3. Пул...ăсем хăлха çумĕпе вжи-и, вжи-и! туса иртеççĕ. 4. Председател...пе секретар... правление пычĕç.

*292-мĕш хăнăхтару.* **Çак текстран япала ячĕсене тупса, вĕсем мĕнле падежра, хăш хисепре тăнине кăтартса парăр.**

Сирĕн тырă ытти хресченсеннинчен гектартан 20—25 пăт ытларах тухнă. Вăл акă мĕнрен килнĕ: машинăпа ĕçленинчен, фосфорит, кĕл, тислĕк тăкнинчен. Эпĕ тĕплĕн сăнаса, пĕтĕмпе шута илсе тухрăм. Ман шутпа сирĕн гектартан 25—30 пăт тырă çав тислĕке пула, çав кĕле пула ытларах пулчĕ. Çĕрулми мĕн-пур пуссине кĕл сапса лартнăран 500 пăт ытларах тухнă. Астуса илĕр-ха, кама пула пухăнчĕ сирĕн кĕлпе тислĕк? Пĕчĕк пионерсене, пĕчĕк ĕç паттăрĕсене пула мар-и? Çак кĕлпе тислĕке ача-пăчасем пухнине пула эпир государствăна ытларах тырă, çĕрулми пама пултартăмăр. Ытларах тырă панипе пирĕн государство тата та вăйлăрах пулĕ. (*М. Труб.*)

*293-мĕш хăнăхтару.* **Çак статьяна вуласа тухăр. Камăнлăх аффиксĕсене йышăннă япала ячĕсене кăтартса парăр.**

## ЧАПЛĂ ЯТ.

Италире пĕр кĕтӳçĕ çемйинче ача çуралнă.

— Мĕнле ят парас тетĕн эсĕ ăна?—тесе ыйтрĕ ачан аслашшĕ ашшĕнчен.

— Унăн ячĕ Ленин пулать,—тенĕ ача ашшĕ, савăнса.

Старик хăех, ачана хула управленине илсе кайса, ят çыртарасшăн пулнă.

— Мĕнле ят хурас тетĕн ачуна?—тесе ыйтнă лере.

— Ленин,—тенĕ ку.

Хула управленин пуçлăхĕпе тухтăр пĕр харăсах старик еннелле çаврăнса пăхнă.

— Эсĕ те, санăн çемйӳ те ухмаха ернĕ пулмалла,—тесе вăрçма тытăннă управлени пуçлăхĕ.—Ун пек ят ниçта та çук вĕт!—тенĕ.

Старик тӳрленсе тăп тăнă та, куçĕсене хĕстеререх пăхса, ăна хирĕç çапла таварса хунă:

— Ман Антонио кашни вырсарникун хаçать вулать, çав ята хаçатра асăнманни ку таринччен пĕр кун та пулман. Унăн ятне Ленин тесе çырăр, — тенĕ вăл, писарь çине пăхса.

*294-мĕш хăнăхтару.* **Статьяна вуласа тухăр. Паллă ячĕсене тупăр, вĕсем мĕнле ыйтура тăнине каласа парăр.**

Электричество лампине паçăрах çутнă. Шăп. Чăлан çумĕнчи сехет кăна майĕпен шаккать. Пӳрчĕ ăшă, таса. Пӳртри япаласем пурте тирпейлĕ, аван, харпăрхăй вырăнĕнче тăраççĕ. Чӳречисене шурăпа карнă. Кăвак клеёнка сарнă сĕтел çинче пĕр енче кĕнекесем, тепĕр енче тетрадьсем купаланса выртаççĕ, варринче — тăваткал чернил кĕленчи. Ун умĕнче ручка, карандаш, готовальня выртаççĕ. Сĕтел тĕлĕнчи стена çумĕнче Ленин, Сталин, Мичурин, Тимирязев сăнĕсем. Стена çумĕнче йăлтăркка сăрлă таса пукансем; вĕсем çине нихçан та тусан пĕрчи ларман пулĕ, темелле. Сăрланă урай йăлтăртатса выртать.

*295-мĕш хăнăхтару.* **Çак предложенисене вуласа тухăр. Хисеп ячĕсене тупăр, вĕсем мĕнле хисепсем пулнине каласа парăр.**

1. Сылтăмарах, ватă йăмрасем айĕнче, тункатасемпе хӳмесем хушшинче, çĕр çирĕм икĕ калибрлă тăватă тупă ларса юлнă. 2. Пин те тăхăрçĕр вăтăр тăххăрмĕш çулта вăл чи лайăх бригадир пулнă. 3. Хабаровск хулинчен аллă километр таварах Амура Сунгари ятлă шыв юхса кĕрет. 4. Ку тĕлте Амур, тăватă пая пайланса, тăватă юпă пулса юхать. 5. Майăн пĕрремĕшĕнче чаплă уяв туса ирттертĕмĕр. 6. СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли пиллĕкмĕш государственнăй заёма, пин те тăхăрçĕр аллăмĕш çулхи майăн виççĕмĕшĕнче 20 миллиард тенкĕлĕх кăларнăскере, майăн саккăрмĕшĕ тĕлне çирĕм çичĕ миллиард та виçĕ миллион та ултçĕр сакăр пин тенкĕлĕх, урăхла каласан, малтан палăртнинчен çичĕ миллиард та виç миллион та ултçĕр сакăр пин тенкĕ чухлĕ ытларах сарнă. 7. Сталин ячĕпе тăракан артель икçĕр çирĕм кил пĕрлештерсе тăрать. Унăн сăвакан ĕне икçĕр вунçиччĕ, икçĕр тăхăрвунă сысна тата çĕр сакăрвунă икĕ чăх-чĕп шутланать. 8. „Большевик" колхозра икçĕр çирĕм кил. Колхозăн çĕр çирĕм çичĕ сăвакан ĕне, виççĕр аллă пилĕк сурăх, икçĕр хĕрĕх сакăр сысна тата виççĕр вунă пуç ытла чăх-чĕп шутланать.

*296-мĕш хăнăхтару.* **Çак предложенисене çырса илĕр. Цифрăсемпе çырнă хисеп ячĕсене сăмахпа çырăр.**

1. Ялтан тухса 25 километр кайсан, эпир пĕр çырмара лаша çитерме чарăнтăмăр. 2. 1914-мĕш çулта аттене салтака илсе кайрĕç. Эпир, анне тата 8 ача, юлтăмăр. 3. Семен Осипович 62 çулхи кăвак çӳçлĕ, кăвак сухаллă, лутра та курпун-

тарах старик. 4. Вĕсен отрячĕ йышлă пулнă: 240 çын юланутпа, 400 çын çуран — мĕн пурĕ 640 çын. 5. „Кăçал пирĕн пыл чылай, ĕç кунĕ пуçне 360 грамм тивет“, — теççĕ. 6. Пĕлтĕр вăрман кашласа ларнă вырăнта кăçал 3 — 4 хутлă çуртсем курăнаççĕ. 7. Жданов ячĕпе тăракан колхоз 140 тонна силос хывнă, 81 лав çулçă хатĕрленĕ, 23 центнер вĕлтĕрен тата 14 центнер армутипе ытти курăк хатĕрлесе хунă.

*297-мĕш хăнăхтару.* Текста вуласа тухăр, местоименисем мĕнле падежра тăнине калăр.

Батальон командирĕн помощникĕ Михайлов капитан мана, хăй патне чĕнсе илсе, приказани пачĕ:

— Эсир Сталин районне каятăр. Хăвăрпа пĕрле пĕр салтак пултăр. Казначейрен пин тенкĕ укçа илĕр. Лере çитсен, мĕнмĕн тумалли çинчен акă çак хута вуласа пĕлĕр.

Мана пĕр хут татăкĕ тыттарчĕ вăл.

— Урăх каласса тăма вăхăт çук, ман васкавлă ĕç пур. Ну, яра пар! — терĕ вăл.

Хăвăрттăн кăна хатĕрлентĕм, çав хушăрах почтальон çыру пырса тыттарчĕ. Вуласа тăма вăхăт çук, эпĕ çырăва кĕсъене персе чикрĕм те пристане васкарăм. Пароход çине çитсе ларма ĕлкĕртĕмĕр кăна — вăл тапранса та кайрĕ.

*298-мĕш хăнăхтару.* 295-мĕш хăнăхтарури текстран глаголсене çырса илĕр, вĕсем хăш сăпатрине, мĕнле хисеприне, хăш вăхăтрине кăтартса парăр.

*299-мĕш хăнăхтару.* Çак текста вуласа тухăр. Глаголсем хăш сăпатрине, хисеприне, мĕнле вăхăтрине кăтартса парăр.

Станципе юнашар пĕчĕк вăрман пур. Вăрманта — застава. Застава начальникĕ Соколов аслă лейтенант чикĕре вуникĕ çул ĕçлет. Вунă çул Ленинград облаçĕнче, Карели чиккинче пурăннă вăл, икĕ çул Инçетри Хĕвелтухăçĕнче ирттернĕ. Кăнтăрла та, çĕрле те чикĕ хуралçисем Совет çĕршывне сыхлаççĕ. Мĕн тĕрлĕ хăрушлăх курма тивмест пулĕ чикĕре. Кунта ĕçлеме çăмăл мар. Тĕрлĕ йывăрлăх та килсе тухать. Савăнăç та сахал мар. Ара, Совет çĕршывне сыхлассинчен савăнăçларах та хисеплĕрех ĕç мĕн пултăр вара!

*300-мĕш хăнăхтару.* Текста çырса илĕр. Глаголсем хăш сăпатра, хисепре, мĕнле вăхăтра тăнине кăтартăр.

Эпĕ Хыркассине хăяр катки кайса леçрĕм. Каткин икĕ кăшăлĕ те татăлса кайнăччĕ те, Катка Михалине кăшăл кайса çаптаратăп, терĕм. Каткана парса хăвартăм та киле кайма çĕрле тухрăм. Хурал чанĕ вунпĕр çапрĕ. Çĕр тĕттĕм, куçран тĕртсен те курăнмасть. Кăшт çумăр пĕрĕхкелет. Эпĕ хытăрах ута пуçларăм. Унччен те пулмарĕ, çумăр хытăрах çума пуçларĕ.

Вуник сехет çитеспе аран-аран киле çитсе ӳкрĕм.

*301-мĕш хăнăхтару.* Предложенисене çырса илĕр. Глаголсен сăпатне, хисепне, вăхăтне кăтартăр.

1. Вăл тар тухичченех тăрăшрĕ. 2. Шахтёрсем, салтаксем çине пăхса, саланчĕç. 3. Ун сассине илтсен, пурте баракран сике-сике тухрĕç. 4. Ун чухне эпĕ, вуниккĕ тултарса вунвиççĕ çине анчах пуснă пулсан та, иккĕмĕш çул ĕнтĕ шахтăра аттепе пĕрле ĕçлеттĕм. 5. Хĕле кĕрсен, çырăва вĕренеттĕмĕр; çăва тухсан, уйра ĕçлеттĕмĕр. 6. Вырăн çинчен хăвăрт сиксе тăрса, алăка çаклатнине вĕçертрĕмĕр.

*302-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Глаголсем хăш сăпатра, хисепре, мĕнле вăхăтра тăнине кăтартса парăр.

1. Вăл, хăйĕн кĕлеткипе çăмăллăн та ăста вылякаласа, çаврăнма пуçларĕ. 2. Атте вăрмантан йывăç турттарчĕ. 3. Куçук амăшĕ тата темĕскер каларĕ. 4. Эпир çавна вĕренмешкĕн кружок уçатпăр. 5. Малалла вăл, нимĕн шухăшламасăрах, чăречерен пеме тытăнчĕ. 6. Ача, хытса кайса, легионерсем пăс хуранĕсен пўлĕмне кĕме тăрăшнине пăхса тăрать.

*303-мĕш хăнăхтару.* Текста çырса илĕр. Наречисен пĕлтерĕшне калăр.

Вĕсен умĕнчи çырма тĕпĕнче çĕлен пек авкаланса тăп-тăрă шыв юхса выртать. Шăппăн юхать вăл: ку таврари шăплăха пăсма шикленет, тейĕн. Икĕ енчен те чикĕ патнелле килекен поездсем, кунта çитсен, тăпах чарăнаççĕ. Çынсем те, çак çырма хĕрринчи пограничнике курсанах, нимĕн чĕнмесĕр каялла çаврăнаççĕ.

Çулсем тăрăх вĕçĕмсĕр машинăсем иртеççĕ. Текех ĕнтĕ чикĕ çук. Застава çинче хăмач ялав вĕлкĕшет. Аялта пĕр хĕрарăм хўме çине тин çеç çырнă лозунг çыпăçтарать.

*304-мĕш хăнăхтару.* Çак предложенисене çырса илĕр. Хыççăмахсене аялтан йĕр туртса паллă тăвăр.

1. Эпĕ хўме урлă çăмăллăнах сиксе каçрăм. 2. Халăхпа тулнă залри сцена çине пĕр çамрăк çын хăпарса тăчĕ. 3. Кантăк витĕр çумăр çуни курăнать. 4. Тепĕр кунне пирĕн пата аманнă салтака илсе килчĕç. 5. Кăнтăрлапа вĕсем пысăк шыв патне çитрĕç. 6. Командир патне кăвак куçлă çамрăк каччă пырса тăрать. 7. Утрав вĕçĕнчи пысăк чулсем хыçĕнче пĕр йывăç ларать.

*305-мĕш хăнăхтару.* Çак текста çырса илĕр. Предложенисенче тĕл пулакан союзсене, татăксене кăтартăр.

Çураки пĕтнĕ хыççăн пĕве пĕвелемелли чи лайăх вăхăт пулса тăрать. Сивĕсем тапраннă хыççăн пĕве пĕвелеме юрамасть, мĕншĕн тесен шăн тăпра темĕнле таптасан та лайăх пусăрăнмасть. Шыв уçса ямалли канала, унăн тăпри пĕве пĕвеленĕ çĕре каймасть пулсан, хĕлле те тăваççĕ.

Тепӗр чухне кӳлленсе таракан ҫырмана пӗвелемелле пулать. Кун пек ҫӗрте пулас пӗве тӗпне палӑртиччен шыва икӗ ҫӗртен картлаҫҫӗ, пысӑках мар (анчах шыв шайӗнчен ҫӳлӗрех) пӗвесем тӑваҫҫӗ. Ҫак пӗвесен кайран пысӑк пӗве айне пулмалла.

***306-мӗш хӑнӑхтару.*** **Ҫак предложенисенчи кашни сӑмаха, вӑл мӗнле пуплев пайӗ пулнине, мӗнле формӑра тӑнине кӑтартса парӑр.**

I. 1. Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх ҫынсен пурнӑҫне нумай ҫӗклерӗ. 2. Ялти ҫынсем ытлашши тырра государствӑна параҫҫӗ. 3. Пирӗн колхозницӑсем колхоз пахчисенче нумай сухан, кишӗр, ҫӗрулми тӑваҫҫӗ. 4. Пӗрремӗш бригада ҫыннисем колхоз правленине юлчӗҫ. 5. Сарлака сӗтел ҫине тӗрлӗ ҫимӗҫсем лартса тултарнӑ. 6. Пӳртре ҫынсем нумайччен чӗнмесӗр тӑчӗҫ. 7. Урамра юрӑ сассисем илемлӗн илтӗнеҫҫӗ.

II. Эпӗ пӗчӗккӗ, ултта-ҫиччӗре пур пулӗ... Пӗрре атте анкартинче авӑн типӗтет. Каҫ пулнӑ. Пӳртре хӑй ҫутнӑ. Анне каҫхи апат пӗҫерет. Эпӗ анне патӗнче вӑл ӗҫленине пӑхса ларатӑп. Пиччепе аппа урамра кӳршӗ хӗрӗпе калаҫса тӑраҫҫӗ. Апат пиҫсен, анне мана аттене чӗнме ячӗ. Ҫанталӑк тӳлек, уяр. Тулли уйӑх тӑрӑ пӗлӗт ҫинче ҫап-ҫутӑ курӑнать.

Сасартӑк тӗттӗм пулма пуҫланӑ пек туйӑнчӗ. Пӑхатӑп: уйӑх ҫути тӗттӗмленнӗҫемӗн тӗттӗмленет. Йӗтем хуп-хура курӑна пуҫларӗ. Эпир виҫҫӗмӗр те тӗттӗмленсе пыракан уйӑха пӑхса тӑма тытӑнтӑмӑр. Уйӑх ҫути пачах пӗтсе ларнӑ пек. Ҫӑлтӑрсем паҫӑр, уйӑх ҫутатнипе, питех палӑрмастчӗҫ, халӗ — шултӑрарах та, нумайтарах та курӑна пуҫларӗҫ. Тӑрсан-тӑрсан, уйӑх курӑна пуҫларӗ. Уйӑх ҫутӑлнӑҫемӗн ҫутӑлать. Хура тӗттӗм япала уйӑх ҫинчен сисӗнкӗсӗр шуса тухать. Калаҫса тӑнӑ вӑхӑтра уйӑх ҫӗнӗрен ҫап-ҫутӑ пулса тӑчӗ.

***307-мӗш хӑнӑхтару.*** **Предложенисенчи сӑмахсем мӗнле пуплев пайӗ пулнине каласа парӑр.**

Вулав ҫурчӗ пирӗн чи юратнӑ вырӑн. Унта эпир лекцисемпе докладсем итлетпӗр, кружоксенче вӗренетпӗр тата концертсемпе спектакльсем курса савӑнатпӑр. Каҫсерен кӗнекесемпе хаҫат-журналсем вулама ҫӳретпӗр.

Вулав ҫуртӗнче политкружоксем, агрономипе зоотехника, драма, хор, физкультура тата музыка кружокӗсем занятисене вӑхӑтра та тӗплӗн хатӗрленсе ирттереҫҫӗ... ВКП(б) историйӗн кӗске курсне, СССР Конституцине тата агротехникӑна вӗренмелли кружоксене лекторсем ертсе пыраҫҫӗ.

***308-мӗш хӑнӑхтару.*** **Ҫак текста ҫырса илӗр. Сӑмахсен предложенири вырӑнне кӑтартса парӑр.**

Ҫанталӑк кӑҫал тӗлӗнмелле ырӑ тӑрать. Кӗр енне сулӑннӑ пулин те, хӗвел ӑшши кимӗлме пӗлмест. Ҫав хӗвел ҫуттинче йӗри-таврари ыраш хӑмӑлӗ ылтӑн пек йӑлтӑртатса выртать. Лӑпкӑ ҫилпе вӗҫӗ-хӗррисӗр пур еннелле туртӑнса вӗҫекен

эрешмен картисем кӗмӗл пек куранаҫҫӗ. Анчах хӗвел темӗнле хӗртсен те, унӑн ҫуттинче таврана кӑшт салхулӑх кӳрекен йӑмӑх пек сулхӑн кунран кун ытларах палӑрса пырать.

***309-мӗш хӑнӑхтару.*** **Ҫак текстри сӑмахсем мӗнле предложени членӗ, мӗнле пуплев пайӗ пулнине кӑтартса парӑр.**

Юр ӳкиччен нумай малтанхи хаяр сивӗсем ҫӗре тимӗр кӑшӑлпа кӑшӑллана пек шӑнтса хытарса лартрӗҫ.

Вӗтӗ чулсем хушшипе шӑнкӑртатса юхса выртакан тӗкӗр пек юханшывсем хулӑн пӑрпа витӗнчӗҫ. Ҫырмасемпе ял варринчи йӑмра турачӗсем те тимӗртен туна пек куранакан пулчӗҫ. Вӑйлӑ ҫил тухсассӑн, йӑмра турачӗсем пӗр-пӗрин ҫумне перӗнсе тимӗр сасӑпа чӑнкӑртатма тытӑннӑн туйӑнаҫҫӗ. Пур ҫӗрте те ҫав ачаш йывӑҫсен вуллисем шартлата-шартлата ҫурӑлма пуҫларӗҫ.

(*А. Ӗҫхӗл*)

***310-мӗш хӑнӑхтару.*** **Предложенисене вуласа парӑр. Кашни сӑмах мӗнле предложени членӗ, мӗнле пуплев пайӗ пулнине каласа парӑр.**

1. Ахтай улӑхӗнче „Хӑват“ колхозникӗсем ҫав тери „ӑшӑ“ пахча туса хунӑ! Кунта, купӑстапа хӑяртан пуҫне, ҫулсерен помидор, виктори тата ытти нумай тӗрлӗ ҫимӗҫсем ҫитӗнтернӗ. 2. Арбуза иртерех акса малтан парниксенче ҫитӗнтермелле. 3. Пирӗн ҫамрӑк учӗнӑйсем, инженерсем, учительсем, лётчиксем, геройсем, полководецсем — пурте рабочипе хресченсен хушшинчен тухнӑ ҫынсем. 4. Илья Петрович паян ирхине Сталин каланӑ сӑмахсене — хаяр тӑшмана хирӗҫ пирӗн пиншер самолётсемпе танксем, Совет Ҫарӗн тӗп вӑйӗсем тухаҫҫӗ тенине аса илчӗ.

***311-мӗш хӑнӑхтару.*** **Ҫак текстри сӑмахсем мӗнле пуплев пайӗ пулнине каласа парӑр.**

Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫӗнтерӳллӗн вӗҫленчӗ. Никам курман-илтмен вӑрҫӑ 1417 талӑк хушши пычӗ. Ҫак хаяр вӑрҫӑра пире хавхалантараканӗ, малалла илсе пыраканӗ — большевиксен партийӗ пулчӗ, пирӗн аттемӗр, ҫулпуҫ Сталин юлташ пулчӗ.

Ҫӗнтерӳ! Ӗҫре те кӗрешӳре эсӗ ҫуралтӑн. Сана совет ҫыннисемпе воинӗсем туптарӗҫ, саншӑн вӗсем вӑйӗсене хӗрхенмерӗҫ, кунӗн-ҫӗрӗн ӗҫлерӗҫ, кӗрешрӗҫ.

Ҫӗнтерӳ! Эсӗ пирӗн мухтав, пирӗн чап, пирӗн малашлӑх, ҫутӑ ӗмӗт.

---

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чебоксары ... Р

АСĂРХАНĂ ЙĂНĂШСЕМ

| *стр.* | *йĕрке* | *пичетленнĕ* | *вуламалла* |
|---|---|---|---|
| 14 | 2 аялтан | тĕп членсем | тĕп членсене |
| 48 | 6 „ | *çĕррĕн,* | ***çĕррĕм,*** |
| 51 | 14 „ | хĕвелтухăçран | хĕвел тухăçран. |

Чăваш чĕлхи, 4 кл.

Цена 1 руб. 20 коп.

Н. А. РЕЗЮКОВ

ЧУВАШСКИЙ ЯЗЫК

УЧЕБНИК
ДЛЯ IV КЛАССА
НАЧАЛЬНОЙ ШКОЛЫ

ЧУВАШГОСИЗДАТ
Чебоксары — 1951